70-235



Валентина
Эльби

# Хăюллă пионер

Национальная библиотека ЧР
4-014406

...ЖНА БЫТЬ
...А НЕ ПОЗЖЕ
...ННОГО СРОКА

14406 чув

кф
с(Чув)
К
Э53

ВАЛЕНТИНА ЭЛЬБИ

# ХĂЮЛЛĂ ПИОНЕР



ЧАВАШ АССР КЕНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1970

С(Чув)2
Э53

14406 чув

ТУПМАЛЛИ

Атăл хĕрринче . . . . . . 3
Анне . . . . . . . . . 39
Ленук . . . . . . . . . 47
Водолаз . . . . . . . . . 53
Тупаясчĕ юрăхлă музыка . . . 63
Кĕвĕç куç . . . . . . . . 73
Хăшĕ ытларах юратать? . . . . 82
Кам айăплă? . . . . . . . 85
Хăюллă пионер . . . . . . . 88
Хĕрачана çул парать . . . . 90
Милицин çамрăк тусĕсем . . . . 93

Для старшего и среднего школьного возраста

Андреева (Эльби) Валентина Андреевна

СМЕЛЫЙ ПИОНЕР

*Рассказы и инсценировки*

На чувашском языке

Художник Л. Я. Павлов
Редактор О. В. Таллерова
Художественный редактор М. А. Ильин
Технический редактор В. И. Павлова
Корректор Л. А. Иванова

НТ 24488. Сдано в набор 7/I-1970 г. Подписано к печати 20/VIII-1970 г. Изд 121/69 г. Формат 60×84 1/16. Типографская № 2. Физ. печ. л. 6. Усл. печ. л. 5,58. Учетно-изд. л. 5,01. Заказ № 89. Тираж 8000 экз. Цена 25 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, пр. Ленина, 4
Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.

7—6—3
121—69М

ПРОВЕРЕНО 13 СЕН 2017

Республиканская библиотека им. М. ГОРЬКОГО Чувашской АССР



## АТĂЛ ХĔРРИНЧЕ

*Повесть*

Кăнтăртан шăнкăрчсем вĕçсе килчĕç. Урамра çурхи шыв шăнкăртатса юхать. Уйра вара — хĕлле, лаптăкĕпех юр выртать. Аслă çул тап-такăр. Каллĕ-маллĕ машинăсем кумаççĕ. Грузовик вĕçтерсе пырать, ав. Кăшкарĕ çинче тулли япала: диван, шкап, кравать, сĕтел-пукан, татах темтепĕр. Диван çине виççĕн ларнă: икĕ хĕрарăм, вун-вуник çулхи арçын ача. Кабинăра, шоферпе юнашар, вăйпитти çын кулăнать. Аллинче ун тăватă-пилĕк çулхи хĕрача. Пĕрре пăхсах тавçăрса илетĕн: ку çемье çĕнĕ хваттере куçать.

— Альак,— чĕнет хĕрарăмсенчен çамрăкраххи,— шăнса хытмарăн-и эсĕ? Ытла шăпăрт-çке. Пиншакне мĕншĕн йӳле ятăн?

Сивви шăнса хытмалăхах çук та-ха, çурхи çилĕ вара чăнахах та вăйлă вĕрет.

— Мĕн эсĕ, анне,— тавăрать ывăлĕ.— Мана ăшă.

Арçын ача çил кастарнине туймасть. Вăл тарăн шухăша путнă. Çĕркаç, уйрăлас умĕн, ăна юлташĕ çав тери тĕлĕнмелле хыпар пĕлтерчĕ.

Кĕркунне вĕсем отрядпа ятарласа тимĕр-тăмăр пухнăччĕ. Сахал-махал мар, темиçе тонна. Ăна шăратчăр та Шупашкар ГЭСне тунă çĕрте усă курччăр, тенĕччĕ.

Пухнă тимĕр-тăмăра завода илсе кайнă. Завочĕ аякра мар, Шупашкартах. Тимĕр-тăмăрне мартен кăмакине шăратма пăрахнă. Çак вăхăтра кунта ĕçлекен рабочи сасартăк курах каять: кăмакари тимĕр-тăмăр купинче çап-çутă япала йăлтăртатать. Рабочи пуçĕнче савăнăçлă шухăш вĕлтлетсе илет: «Тем тесен те — ылтăн сехет!» Туртса кăларать турчăкапа меллĕн. Аллипе тытса, çавăркала-çавăркала пăхать: çук, сехет мар иккен ку, ывăç тупан çинче кăмакари пек ялтăртатмасть те. Мĕн амакĕ, нихăçан курман япала! Чупать инженер патне. Апла-капла, тет. Инженерĕ тӳрех чухлать: мина! Ăна кăмакаран туртса кăларман пулсан, пĕтĕм завод сывлăша сирпĕнме пултарнă.

Акă мĕнле хыпар канăç памасть Альака. Ăçтан лекнĕ-ха çав мина? Путех пĕр-пĕр этем тимĕр-тăмăр тиенĕ машина çине вăрттăн хунă. Тем тесен те, ют çĕршывран килнĕ сăтăрçă тунă ку ĕçе. Йĕрлемелле те ярса тытмалла ăна.

Машина кăшкăртнипе Альак шухăшĕ татăлчĕ.

Грузовик хула урамне пырса кĕрет. Çуртсем нумай вакунлă пуйăс евĕр вĕлтлете-вĕлтлете юлаççĕ. Унталла-кунталла пăрăнать машина. Юлашкинчен çӳллĕ хапхаран кĕрсе картишĕнче тăп чарăнать. Умра темиçе хутлă çурт. Лайăх çĕре хваттер панă-мĕн. Миçе кантăк тӳпенелле айлă-çийлĕ хăпарнине Альак шутлама çех тытăннăччĕ, анчах кабинăран ашшĕ тухрĕ те васкатма тытăнчĕ.

Альакпа асламăшĕ машина çинчен анчĕç. Амăшĕ çӳлтен япаласене парса тăма пуçлать. Таçтан арçынсем килсе тухрĕç. Паллакансемех-ши — ашшĕне ятранах чĕнеççĕ. Вĕсем те пулăшма тытăнчĕç.

— Альак, пыр, уç хваттере,— çăра уççи тыттарса хушать ашшĕ.

Ывăлĕ кайăк читлĕхне илсе вĕçтерчĕ. Хутран хута чупса хăпарать. Каллех мина пăрахакан шпион асне килет. Çав çынна тупасшăн Альак. Виççĕмĕш хутĕнче чӳрече умĕнче чарănса тăчĕ. Кунтан япаласем пушатни аван курăнать. Ют арçынсем çине Альак шанмасăррăн пăхрĕ. Темшĕн ăна çĕр çăтман шпионĕ çывăхрах çӳрессĕн туйăнать.

Татах чупрĕ пусма тăрăх çӳлелле. Таçтан муртан сикрĕ тухрĕ çивĕтлĕ хĕрача. Чипер иртсе кайма пĕлмерĕ вĕт хăямат. Ним кĕтмен çĕртен ура хучĕ те такăнтарчĕ. Альак тытса па-

расшăнччĕ пĕрре ăна. Анчах хĕрача тем вăхăтра çӳлти хута хăпарса çитме те ĕлкĕрнĕ, халь авă ахăлтатса тăра парать. Çитменнине, вăл Альаксен хваттерĕпе юнашар алăкранах кĕрсе кайрĕ, хăй хыçĕнчен чышкă кăтартрĕ.

— Пурпĕрех лекен! — кăшкăрчĕ Альак.— Çивĕтне тăпăлтарса кăларăп!

Хирĕç сас-хура илтĕнмерĕ. Альак хĕрача кĕрсе çухалнă хваттерпе юнашар алăка уçрĕ. Тăваттăмĕш хутра ку. Хваттере кĕрсен, арçын ача малалла иртрĕ. Пăхрĕ. Чӳречесем пурте урамалла.

Йышпа ĕç кал-кал пырать. Япаласене наччасра тултса пĕтерчĕç. Ашшĕ пулăшакансене хăнана чĕнчĕ, лешсем вара килме пулчĕç.

Килте кашни япалан хăйĕн вырăнĕ пур. Тирпей кӳриччен нумай вăхăт иртет.

— Альак, ку йăмăкупа иксĕре,— тет ашшĕ савăнăçлăн, иккĕмĕш пӳлĕме кĕрсе.— Лайăх вĕрен, уроксем тума никам та чăрмантармасть кунта.

Ывăлĕ тав тăвать.

Пӳлĕме икĕ кравать, пĕр сĕтел лартрĕç. Ĕçлеме савăк. Юнашар пӳлĕмрен музыка илтĕнет, тахăшĕ пианино калать.

— Эсир шăпрах, ытлашши кĕмсĕртеттеретĕр,— асăрхаттарать амăшĕ.

Çĕнĕ хваттере майлаштарнă чух шăв-шавсăр пулмасть. Пăта çапмасăр картинăсене стена çумне çакаймăн.

— Кӳршĕсене чăрмантаратăр,— асăрхаттарать татах амăшĕ.— Тахăшĕ пианино чăнкăртаттарать.

— Пĕр-пĕр пианист пурăнать-тĕр,—хушса хурать сĕтел çинче тăракан Альак. Унăн аллинчен мăлатук тухса ӳкрĕ, кĕрĕслетрĕ урайне. Унтан хăй те сиксе анчĕ.

— Мĕн каларăм сана?— кӳлешсе илчĕ амăшĕ.

— Юри мар-çке.

— Ан ятлаçăр,— тет ашшĕ.— Паян ырă кун. Мĕнле хулара хваттер илтĕмĕр!

— Çĕнĕ Шупашкар хулинче,— хушса хурать ывăлĕ.

— Ăçта ларать вăл? Кала-ха, Альак.

— Атăл хĕрринче.

— Мĕн тума тытăнаççĕ кунта?

— Шупашкар ГЭСĕ.

— Тот-тă!— мухтанать ашшĕ.— Мĕнле паллă çул килсе вырнаçрăмăр. ГЭС тăвасси вăл — арман пĕвелесси мар. Атăл! Сарлакăшĕ мĕнлерех!

— Атте, хăш тĕлерех пĕвелеççĕ Атăла?

— Хуларан кăшт çӳлерех.

Тăнласа тăчĕ асламăшĕ мăнукĕ ашшĕпе калаçнине. Атăла пĕвелеççĕ тенĕрен çӳçенсе илчĕ. Астăвать-ха вăл çамрăк чух ялта пулса иртнĕ инкеке.

...Юр ирĕлсе çĕр типнĕччĕ ĕнтĕ ун чух. Таçтан муртан çумăр килсе тухрĕ те лӳшкерĕ пĕр кана. Вара вăрмантан çурхи шыв капланса анчĕ. Ял çумĕнчи арман пĕви тулнăçем тулса пырать. Шывĕ явăнать, кашлать, çырана ниепле шăнăçаймасть. Тапса тухрĕ улăха. Симĕс курăк çине кăларнă путексурăх сехĕрленнипе макăрать. Çынсем килĕсенчен пакурсем йăтса тухрĕç. Пĕвене çăлса хăварасшăн тĕркĕшеççĕ. Кăшкăрашаççĕ, ятлаçаççĕ хăйсем. Урнă шыв никама та итлемест, курмасть. Вăл хăлхасăр, куçсăр. Анчах унăн ниçта хураймии аскăн вăй пур: ӳхĕрет, кĕр-кĕрлет. Тӳсеймерĕç пĕве сăвайĕсем, юписем, хăмисем: çăтăр-çатăр çатăртатрĕç те ишĕлсе анчĕç. Тăваннă шыва çавă çеç кирлĕ пулнă-мĕн. Куçрĕ вара талккăшĕпех, хăйĕн çулĕ çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех шăлать. Тымарĕ-мĕнĕпех тăпăлса тухнă йывăçсем те, улăхра çӳренĕ путек-сурăхсем те юхрĕç. Кӳршĕ ачине те урнă шыв уйраран ӳкернĕ. Хăтараймарĕç мĕскĕне. Ашшĕ-амăшĕ типсе ларчĕç кайран куляннипе. Çутçанталăк умĕнче ялйыш вăйсăр пулчĕ.

Асаилӳпе пăлханнăскер, хаш-ш хашлатса сывларĕ кинемей. Пăшăрханнипе çапла каларĕ:

— Савăнатăр та-ха... Ялти арман пĕви пек татăлса кайсан шар курма тивмĕ-ши? Ачасем те юхса кайĕç, хамăр та çăлăнаймăпăр.

Альак сăмах чĕнме те аптраса тăчĕ, чăр-чар пăхкалать. Ашшĕ ахăлтатса кулса ярсан тин унăн тути сарăлчĕ.

— Эх, айван та вара эсĕ, анне,— тет ывăлĕ.— Танлаштаран. Атăл пĕвин сăвайĕсене бетонран тăваççĕ. Вĕсене çурхи шыв йăвантараймасть. Пĕвине те кĕреçепе мар, хăватлă машинăсемпе пĕвелеççĕ. Атăл пĕви çирĕп пулĕ, ĕмĕрсене пырĕ.

— Ĕмĕрсене!— тет ашшĕ хыççăн Альак та.

Çапла калаçнă май, Альак каллех тимĕр-тăмăр купинче тупăннă минăна аса илчĕ. Темшĕн ăна сăтăрçă, ют çын, Шупашкар ГЭСне тунă çĕре те мина хурассăн туйăнчĕ. Альак чунтан пăшăрханать. Аллисем хăй тĕллĕнех чăмăртанчĕç. Тем килсе тухасран Шупашкар ГЭСне куç пек сыхламалла. Юрĕ, Атăлне пĕвелемен-ха, электростанцине те туман-ха, ан-

чах çав вырăна халех пĕр ют çынна та яма юрамасть. Ан çулăхчăр. Мĕнле палласа илмелле-ха ăна? Иккĕн, тен, йĕрлеме ансатрах пулатчĕ. Юлташĕ аякра, Шупашкарах юлни касать. Кунта, çĕнĕ Шупашкарта, Альакăн çывăх юлташ халлĕхе çук-ха. Пĕр-пĕччен тытма тивет шпиона.

Хваттере тирпейлесе пĕтернĕ-пĕтермен хăнасем килсе çитрĕç. Çĕнĕ хваттере куçнă ятпа саламлаççĕ.

Альак, йĕлтĕр сырса, Атăл çине кайрĕ. Кунта хĕллехи пекех. Юра ансăр хăмапа якатса тунă евĕр мăшăр йĕр йăлăм еннеллех кайса çухалать. Çав йĕрпе унталла та кунталла ыткăнаççĕ йĕлтĕрçĕсем. Лере, утрав хÿттинче, пулăçсем ваксем умĕнче лараççĕ. Альак йĕри-тавра сăнаса пăхать: пĕр-пĕр шанчăксăр этем янкăлтатса çÿремест-и кунта? Пурте йĕркеллех пек. Апла пулсан, çав шпион ку таврана килсе тухма ăс çитереймен, тен? Пурпĕрех лăпланса ларма юрамасть: вăл ыран, элле тепĕр кун килсе тухĕ; тепĕр тесен, стройка пуçланиччен сăмсине те килсе кăтартмĕ.

Çĕнĕ вырăнта темшĕн çурхи каникул нумая тăсăлчĕ пек туйăнать Альака. Пĕлет вăл, ку пĕтĕмпех юлташсăр, пĕччен сулланса çÿренĕрен. Кирек мĕн каласан та, çыннăн хăйпе юнашар ялан тус-тантăш пулмалла. Туссăр этем вăл — уй варринчи тункатах. Мăшкăл мар-и ĕнтĕ — юнашарта виçĕ хваттер, анчах пĕринче те чуна кирли çук. Иккĕшĕнче хĕрачасем. Пĕри Альак йăмăкĕпе пĕрле ача садне çÿрет. Тепĕр хĕрачи — лешĕ, хваттере куçнă кун такăнтарса ÿкерекенни. Эрне пурăнса та куç тĕлне лекмерĕ-ха вăл, Альак ăна хытах кÿпкесшĕнччĕ. Кĕтесри хваттер — пушă. Ăна Шупашкар ГЭСне тăвакан инженера параççĕ имĕш.

Хăйĕн пÿлĕмĕнчи сĕтел хушшине ларчĕ те Альак инженер пирки шухăша путрĕ. Мĕн кăна пырса кĕмест-ши пуçне. «Инженер килсен, туслашма тăрăшмалла унпа. Сыхламалла ăна. Вăл утас çул çине шпион мина кап хурса хăварсан? Пĕтет çын. Кинора куркаланă, инженер тунă чертежсене вăрлаççĕ, вĕлерни те пулкалать. Пĕр-пĕрне пĕлсе çитсен, туслашсан, инженер ăна хăй помощникĕ туса хурĕ. Унта-кунта чупма çын кирлех ăна. Эпĕ çамрăк ача. Тĕпĕрт тихалла! Ура тупанĕ çеç курăнса юлĕ. Ĕçсем, паллах, чикĕсĕр нумай инженерăн. Ăçтан ĕлкĕртĕр вăл пĕччен? Ыйтса пĕлмелле, ĕç хушмалла, приказ вулаттармалла, кăтартса памалла. Эпĕ вара чĕнсе тăраканни. Помощник пулсан, Шупашкар ГЭСне мĕнле тунине йăлт курса тăрăп. Пĕтĕм çынсемпе паллашăп. Ку питĕ кирлĕ. Ют çын инженер патне ĕçе явăçас-тăвас пулсан, тÿрех

уйăрса илĕп. Инженер вăл — стройка начальникĕ. Кашни кун унпа киле пĕрле таврăнăпăр: машинăпа тесен — машинăпа, çуран тесен — çуран. Класра пĕрле вĕренекен ачасем курса тăччăр. Пĕлсех тăратăп, чупĕç вара пирĕн хыççăн. Эпир алăсене сулласа танлăн утăпăр. Куçăмсем шăтарасла малалла пăхĕç. Курах кайăп: çул çинче сехет евĕр мина çуталса выртать. Чупса пырса ярса илĕп. «Альак, мĕн тупрăн?» — ыйтĕ инженер. «Ăçтиçук япала. Тетте», — тейĕп. Инженер мĕн иккенне часах тавçăрĕ. Тав тăвĕ, хаçата та çырĕ.

Ачасен ушкăнĕнче вĕчĕхекен те тупăнĕ. Паллах, Шупашкар ГЭСне тунă çĕре илсе кайма тилмĕрĕ. «Юрамасть, ачам. Атăл вăл саншăн лупашкари шыв мар, ўкĕн те путăн. Саншăн пирĕн айăпа кĕмелле. Юрамасть, ан та анрат». Хăçан килет ку инженер? Тен вăл паян, эпĕ Атăл хĕрринче çўренĕ вăхăтра, килнĕ? Тухса алăкне шаккаса пăхсан мĕнле-ши? «Кĕр, кĕр!» — тени илтĕнсен, вара мĕн калас? Чим, «Хĕллехи йăмра» картинăна кăтартас. Хаклатăр. Сăмах-юмах хăй тĕллĕнех çыхăнĕ».

Çĕркаç Альак ўкерчĕкпе муталанса чылайччен ларчĕ. Юр куписем хушшинче çаралса юлнă йăмра ларать. Чи çўллĕ турат вĕçĕнче вăрăм хўреллĕ чакак. Вăл, халь-халь вĕçсе каяс пек, пуçне пĕкнĕ, лăпчăннă.

Юнашарти пўлĕмре каллех тахăшĕ пианино калать. Музыка шыв пек юхать. Кăшт тăнласа тăнă хыççăн Альак алăк умне тухрĕ. Аллинче — ўкерчĕк. Шак-шак! шаккарĕ вăл кĕтесри хваттер алăкне. Сас-хура илтĕнмест. Ун вырăнне сулахăй енчи хваттер алăкĕ уçăлчĕ те леш, Альак паллакан хĕрача тухрĕ.

— Кам кирлĕ? — тет йĕкĕлтенĕ саслăн хĕрача.

— Сана мĕн ĕç? — сăмах хушрĕ Альак.

— Ах, апла-и!

Сиссе те юлмарĕ Альак, ун аллинчи ўкерчĕке карт! туртса илчĕ хĕрача.

— Пар халех!

— Пама шутламастăп та! — тавăрчĕ хĕрача, картинкăна çурăм хыçне пытарса.

Хуçи тытса илме пикенчĕ. Ăçта унта! Хĕрача — шăп пăрчăканах. Вĕлтĕркке. Тўсеймерĕ Альак — çивĕтне ярса тытрĕ те туртрĕ. Ыратмасть те-ши? Йĕрсе яма мар — сиккелет, ихĕлтетет, ытахальтен «ап-ап!» — текелет. Темле майпа аларан вĕçерĕнчĕ те йăпăрт килне кĕрсе тарчĕ. Альак та ун хыçĕнчен. Анчах та вăл урата урлă каçсан малалла иртме

хăяймарĕ: урайĕ тап-таса, пусма именмелле. Пӳлĕмĕнче хăтлă-хăтлă.

— Иук! — тет таçта шалти пӳлĕмре хĕрача.

— Санпа пытанмалла выляма килмен эпĕ. Каялла панă пултăр ӳкерчĕке.

— Шутламастăп та! Ыран шкула илсе пыратăп та чакак ăçта ларнине пурне те кăтартатăп.

Пырса хытах лектерсе илесшĕнччĕ пĕрре, анчах шăп çак вăхăтра Альак хăй хыçĕнче калаçнине илтрĕ.

— Марина, хĕрĕм, сан патна юлташу килнĕ. Мĕншĕн ăна тĕпелелле ирттерместĕн?

— Атте, вăл хăюсăр ача, вăтанать, — тет Марини шалти пӳлĕмрен.

Альакăн çилли майĕпен иртсе кайрĕ. Те хĕрача ашшĕнчен именчĕ вăл.

— Эсĕ кӳршĕре пурăнатăн-и?

Хăйĕнпе паллаштарчĕ Альак. Йăлтах каларĕ: ятне те, хăш класра вĕреннине те. Марина та пиллĕкмĕш класа çӳретмĕн.

Шалти пӳлĕмре тахăшĕ пианино калать.

— Ирт, ирт, ан вăтан, Альак. Ав Марина пианино калать. Кĕрсе итле музыка.

Марина пианино калать? Тĕлĕнмелле! Хăйĕн куçĕпе курасшăн пулчĕ Альак, çавăнпа та хирĕçлесе тăмарĕ, ерипен, йăпшăнса пӳлĕме кĕчĕ. Чăнахах-мĕн, пианино умĕнче—Марина. Хăй шĕпĕн пек çеç, мĕнле пултарулла, музыки ун чуна çĕклет.

Кăмăлĕ йăлтах çемçелчĕ Альакăн.

— Ялан эсĕ калатăн-и пианино?

— Кам пултăр тата, — тет Марина чăрсăррăн.

— Кунта пĕр-пĕр пианист пурăнать пулĕ тесеччĕ.

Сăмах-мĕн чĕнмерĕ тек Марина. Пӳрнисем еплерех вĕлтлетнине, йăлт-йăлт сиккеленине ытараймиь савăнса пăхать пулас вăл. Çурăмĕ хăйĕн çурта пек тӳп-тӳрĕ. Музыки вара Альак чунне пыра-пыра лăпкать. Тĕлĕнтермĕш иккен вăл — музыка тени.

Тепĕртакран хăрах уралла пукан шухăша путса итлесе тăракан арçын ача еннелле йăр-яр çаврăнчĕ.

— Альак, акă эсĕ музыкăра мĕнлерех.

— Эпĕ-и?

— Эсĕ çав.

Карусель-пукан каллех хĕрачана пианино умне çаврса

лартрĕ. Пуçланчĕ вара тин-тин шăнкăрав янрама. Альак çапла шухăшларĕ: «Ним те ăнланмастăп. Çын мĕнлине музыкăра ăçтан палăртма май пур-ши? Ахаль лĕпĕртетет. Чăнах та музыкине тăнлама питĕ савăк вара. Таçта çуртри картлашкасем тăрăх ашкăнакан ача аялалла-çӳлелле ĕрĕхсе çӳренĕнех туйăнать».

Марина пианино калама чарăнчĕ. Унтан ыйтрĕ:

— Мĕнле, хăв пек-и?

— Кам?

— Музыка.

— Кирлĕ мара ан лĕпĕртет.

Каллех ихĕлтетрĕ хĕрача. Этажерка патне пырса кĕнекесем хушшинче хут листи кăларчĕ. Ăна Альака тăсса: «Ме-çке»,— терĕ. Пăхрĕ Альак, ӳкерчĕкĕ пулах кайрĕ. Шарламарĕ ним те. Алăк хупас умĕн илтрĕ: «Килсе çӳре, пианино калама вĕрентĕп».

Темшĕн çак каçхине Альака ĕрĕхтерсе чупса çӳрекен ашкăнчăк ачана питлекен музыка стена леш енчен халь-халь илтĕнесле туйăнса тăчĕ.

Иртрĕ çуркуннехи каникул. Çĕнĕ хваттере куçнă пирки Альакăн çывăхри шкула вĕренме кĕмелле пулчĕ. Малтанхи кун вăл тапранмарĕ парта хушшинчен. Паллакан ача пачах çук. Марина «А» класра вĕренет-мĕн. Ку класс вара —«Б». Майĕпен-майĕпен асра тытса юлать Альак ачасен ячĕсене. Акă унпа юнашар лараканни — Валерий Шутиков. Чиперех юмахлать, кăмăллăскер. Вăл ятлă çын класра, отряд совечĕн председателĕ. Вожатăй — Клара, тăххăрмĕш класра вĕрененскер. Кашни переменăрах чупа-чупа килет. Пуринпе те пуплет, ăс парать, вылять, кулать. Пионерсем юратаççĕ ăна. Альака та курмăш пулса иртмерĕ. «А-а, çĕнĕ ача! Салам, салам! Ну, мĕнпе савăнтаран?»—терĕ. Ыйтса пĕлмесĕр ним те хăвармарĕ.

Чĕрĕпле пăчăртанма нумая тӳсĕн-и? Ик-виç урок иртнĕ çĕрелле Альак самаях хăюланчĕ. Унăн çав тери класс умĕнче палăрас килет. Мĕнле майпа? Шпион тата мина пирки хăй мĕн шутланине каласа тĕлĕнтерме пулать ĕнтĕ. Анчах вăл шарлама юраман япала. Халапла кăна, сăмах пĕлĕте çитĕ. Питĕ шухăшласан, сăмахĕ тупăнать. Акă Альак кӳршине чавсипе кăлт-кăлт тĕртрĕ: «Валерик, Валерик!»—«Мĕн?»— терĕ лешĕ шă-ăппăн. Арифметика урокĕ-çке. Илтсен, Матвей Сидорович каçармасть: калаçса ларакана тӳрех доска умне кăларать. Альак ăна-кăна пĕлмест, çĕнĕ этем вăл кунта, çавăнпа

та сăмахларĕ: «Валерик, пирĕнпе юнашар хваттерте Шупашкар ГЭСне тăвакан инженер пурăнать. Тĕлĕнмелле чаплă çын. Хăй çав тери çӳллĕскер. Куçлăхпа. Мана хăйĕн помощникне илчĕ...»

— Эй, кайри партăрисем!— асăрхаттарчĕ учитель.

Ирĕксĕрех шăпланма тиврĕ лешин. Хыпар Валерике самаях вĕчĕрхентерчĕ. Вăл урок пĕтиччен аран-аран чăтрĕ. Шăнкăрав янăрасанах Альака хулĕнчен ярса тытрĕ те вĕçертмерĕ.

— Тĕрĕсех каларăн-и эсĕ инженер пирки?— тесе ыйтрĕ.

— Ма суяс? Хăнăхман çынна лартма.

— Урра!— кăшкăрса ячĕ Валерик, сике-сике.— Тĕлĕнмелле тĕлпулу, пионерсем!

Ачасене перĕне-перĕне, Валерик сиккипе тухса кайрĕ класран.

— Ăçта васкан?— тет Альак.

Валерик халь пуплесе тăрать-и?

Пăчă та мар класра, анчах темшĕн Альак вĕриленсе кайрĕ, чунĕ тăвăнса килчĕ ун. Ним тăвайман енне, парта хушшине пăштах кĕрсе ларчĕ. Акă намăса яракан инкек çитсе те тăчĕ.

Валерик вожатăя ертсе киле парать. Клара хаваслă, хĕвел ăна уйрăммăн ăшăтать тейĕн.

— Ну, Альак-Алеша, сана пионерла ĕç хушăпăр,—калаçать вăл чăнкăл-чăнкăл сассипе.

Шартах сикрĕ Альак.

— Мĕ-ĕнле ĕç?

— Шупашкар ГЭСне тăвакан инженерпа юнашар пурăнан, çывăх туссем, тет, ав,— шăлать хайхи Клара.— Пĕлсе кил, сбора пионерсем патне хăçан килме пултарать вăл. Атăла мĕнле пĕвелени çинчен пурте пĕлесшĕн. Тен, вăл турткаланса тăрĕ. Чĕкеç чĕлхеллĕ пул, çавăр ун кăмăлне. Эсир, пионерсем, хатĕрленĕр кĕтсе илме. Астăвăр, дневникра «иккĕсем» ан каçăрăлчăр.

— Тăрăшатпăр!— теççĕ пĕр харăс ачасем. Хăйсем ĕмĕрне çын курманла карах пуçтарăннă, куçран шăтарасла пăхаççĕ, çавартан мĕн тухасса кĕтеççĕ.

Talăрса та хĕремесленсе кайрĕ Альак. Пуçне чикрĕ. Шухăш пăтранать. «Палăрас вырăнне пĕтрĕм. Кам туртрĕ-ши чĕлхерен паврама? Чиперех лекрĕм капкăна. Хурах! Чавса çывăх та çыртаймăн. Çăлăн ĕнтĕ. Ят кайрĕ. Анчах та тĕрĕссине калама тивет».

— Инженерӗ килмен-ха, хваттерӗ питӗрӗнсех тӑрать, — терӗ вара Альак, куҫне ҫӗрелле тартса.

Вожатӑй ӗрескеллех нимех те калаймарӗ. Пӑртакран тин ҫӑвар уҫрӗ.

— Валерик, эсӗ шутласа кӑлартӑн-и ку мыскарана?

— Клара, каҫарӑр. Ҫак мухтанчӑк ача пире чике тӑршшӗ лартрӗ.

Ачасем ахӑлтатса ячӗҫ.

Ҫилли кӑра Валерикӑн. Ним тӑвайман енне чӑмӑрне кӑтартрӗ те класран ҫӗмрен евӗр тухса ыткӑнчӗ. Альак куҫ айӗн пӑхса тӑрать пулин те, курчӗ ҫакна. Унӑн та ҫилӗ пур, вӑшвашах хӗнеттермӗ. Уҫӑмлӑн пӗлтерчӗ вара:

— Инженер пурӗпӗрех килет!

— Ӗненетӗп. Эсӗ асӑрхаса тӑр. Килсен пире систер, — терӗ вожатӑй.

Ҫапла, ӑнӑҫсӑр иртрӗ Альакшӑн ҫӗнӗ шкулти пӗрремӗш кун. Мӗн тӑвӑн? Пулкалать. Хӑвӑртрах килтӗрччӗ инженер, вара Альак суйманнине пурте курӗччӗҫ. Халӗ шӑла ҫырт та тӳс. Атӑл ҫине кайма пӑрахрӗ Альак. «Инженерсӗр кам ҫав хатар аслӑ шыва пӗвелеме пӗлтӗр. Леш тимӗр-тӑмӑр ҫине мина пӑрахнӑ сӑтӑрҫӑ та усӑсӑр шӑнса ҫӳремӗ. Атӑл ҫинче вичкӗн ҫил мӗнле вӗрет ӑшшӑ!» Халӗ ун пӗртен-пӗр ӗҫ—ирхаҫ кӗтесри хваттер алӑкне сӑнаса тӑрасси. Вӑрттӑн, никам куриччен, ҫак алӑка йӑшт тӗртсе пӑхмалла. Марина, курсантусан, каллех йӗкӗлтеме тытӑнать.

Хӗвел, хӗвел! Тӳпере пӗкӗ пек авӑнчӑк ҫулӗпе миҫе хут шуса иртрӗ-ши? Ӗнтӗ Атӑл та пӑртан тасалчӗ. Альак ӑна кантӑкран пӑхса курать. Савӑнӑҫсӑр унӑн пурнӑҫӗ. Шкула каять, киле таврӑнать ӑшталанса. Ачасемпе калаҫма та ҫук. Валерик тӳрех шурӑ куҫӗпе мӗ-ӗл-ӗл ҫавӑрӑнса пӑхать. Чӗри вара Альакӑн тухса тарасла тӑпӑлтатать. Шанмасть Валерик Альака. Ытти ачасем Альак сӑмахне ӗненесрен те хӑрать вӑл.

Май уявӗ хыҫҫӑн, Альак пӗррехинче ир-ирех шкула кайма тухрӗ. Пӑхать хайхискер: кӗтесри хваттер алӑкӗ кушак ҫури хӗсӗнсе кӗмелӗх уҫӑ. Килнӗ эппин инженер. Альак алӑка ҫиҫӗмле хӑвӑртлӑхпа пырса шаккарӗ. «Алӑк уҫӑ, иртӗр!» — илтӗнчӗ сасӑ шалтан. Альак иртрӗ.

— Килсе ҫитнӗ ятпа саламлатӑп!

— Тавтапуҫ, ывӑлӑм, тавтапуҫ! Савӑнтартӑн ҫепӗҫ чӗлхӳпе. Эсӗ юнашарта пурӑнакан ача пулӗ-ха. Питӗ хавас паллашма. Мана Евдокия Петровна тесе чӗнеҫҫӗ.

Альак мĕн курнине ĕненмесĕр шак хытса тăчĕ. Ним те чĕнеймест. Куçĕсем мăч-мăч хупăнса уçăлаççĕ. Ара вăл Шупашкар ГЭСĕн инженерне — сарлака хулпуççиллĕ, Атăл пекех мăнаçлă, кĕреш пек тĕреклĕ аçынна — курма ĕмĕтленнĕччĕ. Ун вырăнне умра куçлăхлă, самай çулланнă хăйпашка хĕрарăм тăра парать. Мĕнле-ха? Шухăш апла та, капла та чӳхенет. «Шел, инженер арçын пулмарĕ. Тепĕр тесен, çавах мар-и? Хĕрарăм-инженер тĕнчере мĕн чухлĕ! Шутласа кăлараймăн. Вĕсем хушшинче геройсем те нумай. Ку инженер авă—ватăрах хĕрарăм. Вăл хăй ĕмĕрĕнче чылай ГЭСсем тунă ĕнтĕ. Чăн-чăн ăста инженер вăл...»

Альак ассăн сывласа илчĕ те ăшшăн сăмах хушрĕ:

— Алексей ятлă эпĕ, килтисем Альак тесе чĕнеççĕ. Пиллĕкмĕш класра вĕренетĕп.

— Маттур, маттур! — текелет кил хуçи. Ача тата тем пуплесшĕн хăпартланнине чухларĕ те ăна калаçтарас шутпа тапратрĕ: — Шкула кая юлмастăн-и? Ятлаçмĕç-и?

— Çу-ук,— тет Альак.— Ятлама мар — савăнĕç. Эпĕ ĕçпе кĕтĕм сирĕн пата. Мĕн, Евдокия Петровна, паян пирĕн вожатăй сире шкула пыма питĕ чĕнчĕ.

— Мĕн сăлтавпа-ши? — пăшăрханчĕ хĕрарăм.

Сăлтав пирки шарламарĕ Альак, инженер пымасран хăрарĕ. Шкула çитсен Евдокия Петровнăн вожатăя ăçта шыраса тупмаллине йăлтах ăнлантарчĕ.

— Юрĕ,— килĕшрĕ хĕрарăм.— Ман шкула пымалли ĕç те пур-ха.

Сывпуллашса тухса кайрĕ Альак. Шкула вăл те утса, те вĕçсе çитрĕ. Класра часах пурте унăн уçă сассине илтрĕç: «Ачасем! Çĕнĕ хыпар илтмесĕр ан юлăр! Шупашкар ГЭСне тăвакан инженер хваттерне килсе вырнаçнă. Вăл — патвар хĕрарăм!»

Шавласа кайрĕç ачасем. Валерик çеç шанмасăр пăхать.

— Ĕненместĕн-и? — тет Альак.— Паян вăл шкула килсен курăн акă. Лайăх инженер. Сăпайлă хĕрарăм. Эпир паллашрăмăр та. Хăйĕн помощникĕ туса хурать мана. Çу каçа Атăл пĕвеленĕ çĕрте ĕçлетĕп. Ахаль ачасене çывăха ямаççĕ.

— Пĕлетĕн-и, мухтанчăк мулкачăн хӳри татăк,— асăрхаттарчĕ Валерик.

Юлашки урок. Кайран мĕн кĕтет? Альак йĕп çинчи пек ларать. Ăна Валерик сăмахĕ те самай виçерен кăларчĕ. Сасартăк Евдокия Петровна шкула килмесен? Е килсен те Кларăна тупаймасан? Мĕн пулĕ-ши вара?

Шăнкăрав янрарĕ. Пăх та кур ĕнтĕ, пĕр ачи тухса каймасть. Пурте Шупашкар ГЭСне тăвакан инженера курасшăн, вăл каласа панине итлесшĕн.

Кĕтеççĕ, кĕтеççĕ, анчах хĕрарăм-инженер курăнмасть. Чи малтан Валерикĕн тӳсĕмĕ пĕтрĕ, сумкине илмесĕрех тухса кайрĕ. Апла пулсан киле мар, Кларăна шырама кайрĕ ĕнтĕ. Тĕрĕсех. Тепĕртакран килсе кĕчĕ вожатăйпа. Вĕсен сăн-пичĕсене курсанах ăнланчĕ Альак: ĕç-пуç япăх. Валерик чăмăрне вăрттăн кăтартрĕ, ав.

Шăв-шав çĕкленчĕ. Ачасем инженер мĕншĕн килменнине пĕлесшĕн.

— Шăпланăр, шăпланăр!—тет Клара, аллине çĕклесе.

Лăпланчĕç. Чи хыçалти парта хушшинче ларакан хĕрача çеç çинçе сассине кăларчĕ:

— Инженер килет-и?

— Çук. Альак-Алешка йăнăшнă.

— Йăнăшман!— пат татрĕ Альак.— Евдокия Петровна шкула килме пулчĕ. Вăл килетех.

Вожатăй йăл кулать. Ачисем сĕр-сĕрлеççĕ.

— Кам вăл Евдокия Петровна?— кăна каллех леш çинçе саслă хĕрача ыйтрĕ.

— Евдокия Петровна инженер мар,— терĕ вожатăй.

— Мĕнле апла?— кăшкăрсах ячĕ Альак.

— Çаплах, инженер мар. Унăн ывăлĕпе кинĕ акă чăннипех гидролог-инженерсем. Шупашкар ГЭСне тунă çĕре вĕсене кĕтеççĕ. Халлĕхе килсе çитеймен-ха, Саратов ГЭСĕн юлашки ĕçĕсене туса пĕтермелле. Евдокия Петровнăн — икĕ мăнук. Йĕкрешсем. Вĕсем Артекра. Паян-ыран çав ачасем кунта килсе çитмелле. Сирĕн тантăшсем вĕсем, вĕренме те вĕсене ку класах йышăнчĕç. Асламăшĕ — Евдокия Петровна шăпах çак ĕçпе пулчĕ те шкулта.

Кăмăлсăррăн саланаççĕ пионерсем. Алкумĕнче Альака Валерик хуса çитрĕ. «Асту,— терĕ вăл, чăмăрĕпе юнаса,— татах улталасан, отряд советĕнче сӳтçе яватпăр». Альак чĕнмерĕ, унăн тути çеç усăнчĕ. Тарăхать вăл. Никама та хур тăвас шутпа мар, ырă тăвас шутпа вĕтеленнĕччĕ. Асламăш сăмахĕ аса килчĕ: «... Пуçлантăр çеç, инкек çине синкек çитсех тăрать. Пĕрре такăннă çынна пĕчĕк турат та такăнтарать вара». Альак хăйне тĕнчере çук мĕскĕн туйрĕ. Пыра чăмакка капланнăçемĕн капланать. Вăл сурчăк çăтма тăрать, куçа йӳçĕтет. Акă хăрпăкран асамат кĕперĕ çакăнчĕ. Симĕс-кĕрен ункăсем куçа мăч хупса илсенех пит тăрăх юхса анĕç. Юра-

масть йёнине ачасене кӑтартма. Вара вӑл пуҫне чикрӗ те тапса сикрӗ хӑвӑртрах. Шкул картишӗнчен тухсан пачах урӑх урама пӑрӑнчӗ. Пырать. Кунта никам та курмасть ӑна. Хӗвел ҫурӑма хӗртет. Шӑрӑх. Ача пиншакне хыврӗ. Вӑркӑш ҫил питрен ҫупӑрлать. Утнӑҫемӗн хурлӑхлӑ шухӑшсем те таҫта кайса ҫухалчӗҫ. Чунра ҫӑмӑл. Мӗн ҫунатлантарать-ха ӑна? Пур иккен сӑлтав. Ҫутӑ ӗмӗт шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ евӗр шуса тухать. Вӑл ҫӑлтӑр—ҫӗнӗ туслӑх. Кӳршӗре часах икӗ тантӑш пулать. Кусем Евдокия Петровна мӑнукӗсем — йӗкрешсем. Шанӑҫ чуна кӗрсе вырнаҫать. «Вӗсем инженерсен ачисем, мана ӑнланаҫҫех,— калаҫать Альак хӑйпе хӑй.—Акӑ камсем чӑн-чӑн туссем, юлташсем пулӗҫ».

Шкултан таврӑннӑ вӑхӑтра Альаксен килӗнче никам та пулмасть. Ашшӗ-амӑшӗ ӗҫре. Вӗлтӗркке йӑмӑкӗ — ача садӗнче. Асламӑшӗ—хӑнара. Апат-ҫимӗҫ хӑйӗн хатӗрлеме тивет. Юратмасть вӑл газ плити умӗнче аппаланма, анчах хырӑм выҫни касать. «Ҫӑмарта ӑшалас, час пиҫекен апат»,—шухӑшлать Альак. Алӑк шӑнкӑравӗ янӑрарӗ. Такам кӗресшӗн. Уҫрӗ. Евдокия Петровна-мӗн.

— Альак, эсӗ магазинран пукан йӑтса килме пыраймӑн-и?— терӗ вӑл,— мӑнуксем килсен, сире ларса-тӑма пукансем ҫитмеҫҫӗ.

Килӗшрӗ, паллах, Альак. Вӑл юлхав ача мар. Евдокия Петрвна ҫул тӑршшӗпех калаҫрӗ. Ялан ҫапла пукан-сӗтел туянма тивет имӗш вӗсене. Пурӑнаҫҫӗ, пӗр кана тымар ярса, унтан каллех урӑх ҫӗре куҫмалла. Шав электростанци тӑваҫҫӗ. Ӗнтӗ Альак хӑйӗн пулас юлташӗсен ятне те пӗлчӗ. Пӗри— Филипп, тепри — Антон.

Кинемей магазинта виҫӗ пукан туянчӗ. Альак иккӗшне йӑтрӗ те вӗҫтерчӗ пӗчченех. Ватти хыҫала юлчӗ. Ҫамрӑккин урисем ҫӑмӑл. Ваштах ҫитрӗ Альак. Пукансене алӑк умне лартрӗ. Пӑхать, хваттер алӑкӗ уҫӑ. Кам ара унта? Евдокия Петровна питӗрме манса кайнӑ-ши? Чупса кӗчӗ те урай варринче тӑпах чарӑнса тӑчӗ. Шалти пӳлӗмре — Марина. Вӑл сӗтел ҫине кӑкшӑмпа чечек лартса тӑрать.

— Эсӗ ма...?— калас сӑмахне каласа пӗтерейменрӗ Альак.

Марина куҫне чарса ҫухӑрса ячӗ:

— Ой! Мӗн турӑн! Пылчӑклӑ урупа урайне вараларӑн! Ҫуса кайнӑ пул халех!

Унччен те пулмарӗ, вӑл Альака йӗпе тӑлапир татки кап пырса тыттарчӗ. Ним тума пӗлмесӗр анраса тӑчӗ Альак. Чӑнах-мӗн, сарӑ сӑрлӑ урайӗнче унӑн тусанлӑ ура йӗррисем

шуррăн курăнса выртаççĕ. Ирĕксĕрех Альак вара: «Юрĕ, çăвăп,— терĕ. —Анчах малтан пукансене илсе кĕрсе лартас пулать».

— Çу çав, пукансене те илсе кĕр!— хиврелерет Марина.

— Мĕнех вара, çумалла-тăк, çăватпăр, кăркка чĕппилле шимплетместпĕр.

— Ачху!— сунасланăн йĕкĕлтерĕ Марина.— Арçын ачасем урай çунине курас-ха эппин.

Кăтартса пачĕ Альак хăйĕн пултарулăхне. Пукансене илсе кĕрсе лартрĕ те урай çума тытăнчĕ. Акă урай хăмисем тĕкĕр евĕр йăлтăртатакан пулчĕç те. Ахальтен мар ĕнтĕ Евдокия Петровна ырларĕ.

— Хваттер çуталсах кайнă: Таса çăван, Марина, аллуру çыпăçуллă сан. Маттур.

«Ĕçне тăваканни пĕри, ырă ят илтекенни тепри»,— мăкăртатрĕ Альак. Анчах та ăна никам та илтмерĕ.

Евдокия Петровна сĕтел çине хуплу кăларса хучĕ.

— Апат çиййĕпĕр. Пĕччен хĕлхем анмасть,— тет вăл.

Альакпа Марина сĕтел хушшинче ларнă чух почтальон кĕрсе тухрĕ.

— Мăнуксенчен телеграмма, килеççĕ,— тет Евдокия Петровна.— Такси тытăпăр та виçсĕмĕр пĕрле кайăпăр станцăна.

Альак тепĕр кунне, шкула кайсан, инженер ачисем телеграмма яни çинчен шарламарĕ. Каллех пăтăрмах сиксе тухасран шикленчĕ, каллех суеçĕ выранне хурĕç.

Йĕкрешсем вырсарникун килеççĕ.

Акă тăраççĕ виççĕн перронра. Варринче — Евдокия Петровна, сылтăмра — Альак, кăпшĕм питлĕскер, сулахайра — вăрăм çивĕтлĕ Марина. Вăл уяври пек капăр тумланнă: пĕрмеллĕ кĕске юбка, чăваш тĕрриллĕ шурă кофта.

Пуйăс ытла нумай кĕттермерĕ. Вуннăмĕш вакунран ачасем кĕшĕлтетсе анчĕç. Артекран таврăнакансем. Таврара шăв-шав çĕкленчĕ. Ушкăнран часах иккĕн уйăрăлчĕç те Евдокия Петровна патне чупса пырса ăна ыталарĕç. Чуптăваççĕ пĕр-пĕрне. Маринăпа Альак айккинерех пăрăнса тăчĕç.

Тĕлĕнтермĕш! Кинемейĕн мăнукĕсем каснă-лартнă пĕр. Сăмсисем каçăр, пичĕсем куктĕрриллĕ. Сарă çÿçĕсене çамки çине турăнă. Вĕсене тумтирĕсенчен те уйăраймăн. Çиййĕсенче куçлă-куçлă костюм, калпакĕсем кăвак. Пĕл ĕнтĕ, хăшĕ-ши Филипп? Антонĕ хăшĕ?

Ачасене Артекран ертсе таврăнакан çынни Евдокия Пет-

ровнăпа пырса калаçрĕ. Вăл сывпуллашса кайсан тин йĕкрешсемпе паллашма вăхăт çитрĕ.

— Пирĕн кӳршĕсем: Альак тата Марина,— тет йĕкрешсене асламăшĕ.— Альак ӳркенмен ача. Марина пианино ăста калама пĕлет, музыка шкулĕнче те вĕренет. Сире вĕсемпе тусюлташлă пулма сĕнетĕп. Халĕ такси патне каяр.

Антонпа Филипп хăюллăскерсем. Тахçан пĕрле выляса пурăннăнах калаçаççĕ, кулаççĕ.

— Сирĕн иксĕрĕн те фотоаппарат,— тет Альак чĕнмесĕр пырасран.

— Артек парни! Пĕл!— Пас пӳрнине кăтартать йĕкрешсенчен пĕри.

— Вăйăра мала тухнишĕн парнелерĕç.

— Ӳкерме те вĕрентрĕç! Пĕл!

— Пирĕн ӳкерчĕксем нумай!

— Хура тинĕсе, хамăр Артека курма пултаратăр. Пĕл!

— Юлташсем мĕн чухлĕ сăн çаптармарĕç-ши!

Çапла пĕр-пĕрне пӳлсе калаççĕ йĕкрешсем.

— Асанне, Марина, Альак, тăрăр пĕрле, сăн ӳкереп!

— Çук, Антон, эпĕ ӳкеретĕп. Эсир ан тăрăр, утăр, утăр! Кун пек чаплă пулать. Пĕл!— Пас пӳрнине каллех çӳле çĕклесе кăтартрĕ йĕкрешсенчен пĕри.

«Эппин, ку — Филипп,— чарлаттарса пăхрĕ Альак.— Арпаштарас марччĕ. Пас пӳрнине кăтартма юрататъ тата «пĕл» сăмах хуша-хуша хурать».

Антон тавлашмарĕ, ушкăнпа пĕрле тăчĕ. Кашниех чăматан е тулли сетка йăтса, васкамасăр утрĕç. Филипп мала чупса тухрĕ, лăпчăнчĕ, фотоаппаратне сылтăм куçĕ патне тытса, пӳрнисемпе тем çавăркалать. Унтан шăт, шăт шăтлатни илтĕнчĕ.

— Тĕнчере çук чаплă ӳкерчĕк пулать. Пĕл!— мухтанать Филипп.

Такси машини патне çитрĕç. Халĕ ĕнтĕ Антон пурне те машина алăкĕ патне йĕркеленсе тăма хушрĕ. «Ӳкеретĕп!» — тет. Филипп чăркăшмасть, тăванĕ хушнине кĕршет. Ку унăн лайăх енĕ.

Тантăшсем тăваттăшĕ те хыçалти ларкăç çине вырнаçрĕç. Шоферпа юнашар — асламăшĕ. Филипп канăçсăр, тĕк ларма сть пачах. Фотоаппаратне куçĕ патне тытса, е Альака, е Антона, е Маринăна тĕллет, Марини вăтанать, питне аллипе хуплать.

— Итлĕр-ха, итлĕр,— тет Антон, юнашар ларакансене



Республиканская библиотека им. М. ГОРЬКОГО

аллипе тёрткелесе,— апатланнă хыççăн Шупашкар ГЭСне тунă çĕре кайăпăр-и?

— Шупашкар ГЭСне тума тытăнман-ха,—пĕлтерет Альак.

— Мĕнле тытăнман?— тĕлĕнет Антон.— Петро пичче пирĕн пата «ĕçлеме тытăнтăмăр» тесе çырнăччĕ-çке.

— Ара,— хирĕçлет Альак,— инженерĕсем çук-çке, аçăрпа аннĕр килсе çитеймен-ха. Кĕтӳçсĕр кĕтĕвĕн ăçталла кайма чухлас?

— Юханшыва пĕвелесе электростанци тунă çĕрте вуншар инженер ĕçлет. Пĕл! Пирĕн аттепе анне те килеççĕ. Пĕл!

Ку, паллах, Филипп халапĕ. Кам вăл Петро? Харăсах пĕлесшĕн кăсăкланчĕç Маринăпа Альак. Йĕкрешсем пĕр-пĕрне пӳле-пӳлех каласа пачĕç вара.

Петро стройкăра питĕ кирлĕ çын. Вăл — электросварщик. Гидролог-инженерсен чи çывăх тусĕ. Ялан вĕсем патне киле çӳренĕ. Йĕкрешсем хăнăхнă ăна, чунтан хисеплеççĕ, пиччĕш вырăнне хураççĕ. Петро ырă кăмăллă çын, ачасене вăл питĕ юратать. Çавăнпа та ĕнтĕ вăл йĕкрешсем патне Артека çыру çырса тăнă. Лешсем вара, çыру илсен, уяв чухнехи пекех савăннă.

Хăйне хăй ятлама тытăнчĕ Альак ăшра. «Вĕсем ĕнтĕ Шупашкар ГЭСне тунă çĕре илсе кайма ыйтрĕç. Эпĕ, айван, кайман, курман, инженер килессе кĕтсе ларнă. Шупашкар ГЭСне шăп ăçтарах тума тытăннине те пĕлместĕп. Чиперех намăс курма тивет. Тен, атте пĕлет? Тĕпчес».

Машинăран тухсан, Альак йĕкрешсем патне кĕмерĕ. Лешсем чĕнчĕç пулин те, вăл килне васкарĕ. Телее пула, ашшĕ ниçта та тухса кайма ĕлкĕреймен-мĕн-ха.

— Атте, эсĕ Шупашкар ГЭСне ăçтарах тунине пĕлетне?— ыйтрĕ Альак.— Ăçтан каймалла унта?

— Эх, ывăлăм!— хĕрхенӳллĕн пăхрĕ ашшĕ ун çине, çапах та каласа пачĕ тĕпĕ-йĕрĕпе.

Кăнтăрла иртсен Альак кӳршĕсем патне каçрĕ. Халĕ вăл хăйне пумай пĕлекен çын пек тыткалать. «Пуçтарăнăр! Каяр! Шупашкар ГЭСне тунă çĕре сире чи кĕске сукмакпа илсе кайăп. Машинăсем чупаканни вăл çавра çул».

— Эпир хатĕр. Маринăна чĕнетпĕр-и?— Антон çак сăмахсене айккинелле пăхса каларĕ.

— Пырин,— тесе каласа хучĕ Альак, анчах вăл кун пек çеç каласшăн марччĕ: «Маринăсăр кичем. Виççĕмĕр хушăмăрта пĕр хĕрача кирлех. Анчах вăл паян темшĕн вăтанса çӳре-

рĕ-ха. Ак вăл хăюланарах парсан, ларса та макăрăр-ха ун мыскариссне тӳсеймесĕр»,— тесшĕнччĕ. Çапах та систерчĕ юлташĕсене: «Анчах та вăл тăрăхлама, питлеме, йĕплеме ăста».

— Хĕрачасене мăшкăллаттармăпăр-ха. Пĕл!— паттăрланать Филипп. Кайса чĕнчĕ.

Тăваттăн çула тухрĕç. Хула урамĕн юлашки çурчĕ хыçа юлчĕ.

— Аякра-и?— ыйтать Филипп.

— Çывăхах мар,— тавăрать Альак.

— Тимĕршапа ураллисен пайтах мĕшĕлтетме тивет,— кастарса хучĕ Марина.— Вĕсем хĕвел аниччен çитеймĕç. Ун пеккисем халех каялла таврăнччăр.

— Пирĕн хушăра кĕске ураллисем çук. Пĕл!— пас пӳрнине çӳлелле çĕклесе, арçын ачасене куç хĕсрĕ Филипп. Ку ĕнтĕ «Эпир хĕрачасене парăнмастпăр»,— тенине пĕлтерчĕ.

Марина тĕрĕслеме шутларĕ. Умра, чылай аякра, ларакан йывăç патне ăмăртса чупма сĕнчĕ. Килĕшрĕç.

— Маншăн иккĕ-виççĕ ярса пусасси кăна. Пĕл! Эсĕ куç хупса иличчен эпĕ унта çитнĕ те.

— Канав урлă каçиччен «хоп!» темеççĕ,— асăрхаттарчĕ хĕрача мухтанакан Филипа.

Тепĕртакран хирĕç иртсе каян çынсем çулпа тăвата ача ыткăнса пынине курчĕç. Чăнах, хытă чупать Филипп, ваштах хуса çитме çук. Чи малта чавтарать. Иккĕмĕш — Марина. Антонпа Альак юлашкинчен йăраланаççĕ. Темшĕн-çке Филипп часах пашкана ерчĕ. Пичĕ тăрăх тар юхать хăйĕн.

Çемçе те çăмăл тĕк вăштăр çилпе вĕçнĕн вĕçет Марина. Пичĕ хăйĕн — палан — хĕп-хĕрлĕ. Иртсе кайрĕ мухтанакан-ран. Çитрĕ çитес çĕре. Кунпа çеç çырлахмарĕ. Йывăç тăрне хăпăл-хапăл хăпарчĕ кайрĕ. Лешсем çывхарсан, çӳлтен тăпра муклашкипе перкелерĕ-ха. Юнаççĕ арçын ачасем. Хĕрачи хăракан йышши-ши?

Анчĕ йывăç çинчен Марина. Ушкăн Атăл еннелле пăрăнчĕ. Умра тарăн вар. Çыран хĕрри ку тĕлте питĕ чăнкă, сăртра йывăççем ӳсеççĕ. Чарăнчĕç юлташсем. Пăхаççĕ тавраналла. Атăл леш енĕ янках курăнать. Атăл юплĕ, ăна утрав уйăрать. Мĕншĕн ку утрав Атăлăн шăп варрипе тăсăлса выртать-ши?

— Кунта Атăл пачах урăхла,— асăрхать Антон.

— Илемлĕрех, çапла-и? мухтанать Альак.

Тантăшсем çутçанталăк илемĕпе киленеççĕ. Атăлăн леш ен çыранĕ ем-ешĕл. Вăрманлăх. Вăл куç ытамне кĕми

тăсăлать. Утравăн çивиттийĕ чăпар: сарă уйра — ешĕл çеçкесем. Утрав çумĕпе Атăл йăлтăртатса выртать. Пăрахучĕсем çӳлелле, аялалла ишеççĕ. Калăн: янкăр тăрă тӳперен шурă мамăк татăкĕсем шуса аннă Атăл тăрăх ярăнса çӳреме.

Утрав ку енчи Атăл юппи чăнкă сăрт айне пытаннă. Туссем çыран хĕррине анасшăн пулчĕç. Ăçта çулĕ? Кăнтăрла çурта çутса шырасан та, тупăнмасть такăр çул. Атăл çыранне çурса кĕнĕ тарăн вар тĕпĕпе ачасем аялалла утрĕç. Тикĕс мар ку сукмак, путăклă-шăтăклă, ланкашкаллă. Утма кансĕр. Пулин. Пурпĕрех анмалла. Шуса ӳкесрен ярса тыт, ак, пĕлтĕрхи хăрнă шурутинчен, кантра евĕр çирĕпскертен. Ту сĕвекĕнче тата хĕрлĕ тăмран сĕткен илейменнипе имшеркке туналлă лутра йывăç тĕмĕсем пур. Эрĕм те ыррăн тымар яраймасть кунта. Филипп, ав, пăрлă тăвайккинчен ярăнса аннăн çурăмпа шăвать. Хăйĕн ывăç тулли эрĕм. Тытăнса юлайман курăк тымарĕпех тăпăлнă.

Сисĕнмесĕр тухса тăчĕ Атăл куç умне. Ансăр мар. Сасартăк Антон кăшкăрса ячĕ:

— У-у-ух! Филипп! Кур — «КПТ-1» кран!

— Ăçта?

Антон аллине тĕлленĕ çĕрелле пăхрĕç пурте. Курчĕç. Кран сарлака та вăрăм пăрăха хыпкăчланă та шыв хĕрринелле шутарать.

— Мăйĕ жирафăнни пекех вăрăм,— тет Марина, кран çине пăхса.

Шыв хĕррине тăсса пăрахнă пăрăх çинче вут хĕлхемĕ ялтăр-ялтăр çуталса илет. Ун умĕнче питне темле питлĕх тăхăннă çын тăрмашать. Çав тери йăлтăркка çăлтăра пăрăх çумне шăратса çыпăçтарасшăн, тейĕн.

— Петро пичче ку,— асăрхарĕ Антон.

— Петро пичче!— кăшкăрса ячĕ Филипп.

Иккĕш те чавтарчĕç. Вĕсенчен Маринăпа Альак та юлмаççĕ.

Леш çынни питлĕхне хыврĕ. Çăлтăрĕ самант сӳнчĕ. Палларĕ пулас хăйне чĕнекен ачасене, аллипе сулать.

— Салам, Петро пичче!

— Çитрĕр-и? Салам! Салам!

Кăшкăрашаççĕ, ыталашаççĕ, чуптăваççĕ пĕр-пĕрне.

— Шупашкар ГЭСне тума тытăнтăр-и?

— Хатĕрленетпĕр,— пĕлтерет Петро.— Атăл тĕпне юшкăнран тасатма пăрăхсене çыпăçтаратăп, ав. Çак кунсенчех Балаковăран «Гидротехникпа» «520-мĕш» килсе çитмелле.

Альак ăнланмасть вĕсен калаçăвне. Марина та çавах ĕнтĕ. Пĕлесшĕн тĕпчерĕ те:

— Кам, мĕн ара вĕсем?

— Земснарядсем,— тет Петро.— Çав тери хăватлă машинăсем.

Йĕкрешсене земснаряд питех кăсăклантармасть, ку çĕнĕ япала мар. Вĕсен Петро умĕнче тӳсме çук мухтанас килет. Вĕçкĕнленмелли пур — Артек парни. Петрона апла та, капла та тăратса ӳкерчĕç вара кăмăлĕсем туличчен.

— Çитĕ, туссем,— чарчĕ Петро.— Ман ĕçлемелле. Çак кунсенчех кĕрсе тухăп. Асаннĕре салам калăр.

Тăвата юлташ электросварщике тек чăрмантармарĕç. Атăл хĕрринче выляса, чупкаласа çӳренĕ хыççăн тăрмакланчĕç пасăр аннă сукмак тăрăх. Филипп кунта та хăйĕн аппаратне канăç памарĕ, мала ирте-ирте, шăт-шат шатлаттарчĕ.

— Пултаран эсĕ, Филипп,— мухтать Марина.— Петро пиччен сăнӳкерчĕкĕсене, кран çывăхĕнче ӳкернисене, мана парнелĕн. Юрĕ-и?

— Мĕн тума?

— Кирлĕ,— çирĕп татса хурать Марина.— Шел, Петро пиччене земснарядсем пирки каласа пама чăрмантартăр.

— Питĕ пĕлессӳ килсен, лекци вуласа парăп,— пĕлтерет Филипп.

— Мухтанан,— тет Марина.— Калаçма пуçличчен малтан земснарядне кӳрмалла.

— Саратов ГЭСне тунă çĕрте курнă. Ав, Антонран ыйт. Курса çеç те мар, земснарядпа ĕçлекен çыннисене хăйсене те паллатăп. Пĕл!

Чăнах та, Филипп тата Антон, пĕр-пĕринпе тавлаша-тавлашах, земснарядсем çинчен каласа пачĕç. «Гидротехник» земснаряд сехетре çичçĕр аллă, «520-мĕш» земснаряд — пиллĕкçĕр кубометр çĕр чавса кăларать Атăл тĕпĕнчен. Юшкăнне Петро шăратса çыпăçтаракан пăрăхсем тăрăх аякка ывăтаççĕ. Марина ĕненмест.

— Сехетре çавăн чухлĕ-и? Йăнăшатăр!

— Сехетре, сехетре,— çирĕплетеççĕ йĕкрешсем.

— Ай-ай,— тĕлĕнет Марина.— Вара икĕ земснаряд талăкра вăтăр пин кубометра яхăн çĕр чавса кăларать. Атăл тĕпне самант тасатаççĕ апла. Манас марччĕ-ха.

— Пĕл ĕнтĕ. Асра тытасшăн,— кулкалать Филипп.— Мĕншĕн-ши?

— Кирлĕ,— пат татса каларĕ Марина.

Хăпарса çитрĕç чăнкă ту тăрне. Тăсти-тăсти курăнать. Пăрахса каяс килмест туссен. Йĕкрешсем хăйсен ĕçнех тăваççĕ: пĕр вĕçĕмсĕр ӳкереççĕ.

— Часах кунта Шупашкар ГЭСĕ пулать,— тет Марина тарăн шухăшлăн.

— Çĕнĕ хыпаршăн тав,—шăл йĕрсе илчĕ Альак. Йĕкрешсем унпа килĕшнине пĕлтернĕн кулаңçи пулаççĕ.

— «Тав, тав...»— витлерĕ Марина.— Пуçăрта пĕр илĕртӳллĕ ĕмĕт, çунатлă шухăш çук сирĕн.

— Сан пур-и?— Пĕр харăс ыйтрĕç арçын ачасем.

— Пур.

— Кала, кала.

— Итлĕр, атьсемĕр!— хăпартланать Марина.— Пăхăр Атăла. Лăпкăн юхса выртать. Мăнаçлă вăл, анчах мĕскĕн. Унта та кунта курпунĕсем тухнă. Ватăлнă-тăр. Хăçантанпа çапла асапланать вăл, ирĕккĕн юхаймасăр. Паттăр çынсем килчĕç ун патне. Вĕсем Атăла çĕнетеççĕ. Атăл çамрăкланать. Шупашкар ГЭСне тусан, кунти сăн-сăпат калама çук илемленĕ. Иртĕç çулсем, ĕмĕрсем... Ун чухне те ачасем тухĕç Атăл хĕррине. Шухăшлĕç: «Ĕмĕрех çапла пулнă Атăлăмăр». Атьăр, хамăр та ĕçе карах тытăнар. Çырлахар мар паттăрсем ĕçленине пăхса кăна тăнипе.

Тавлаштарса ячĕ юлташсене Марина халапĕ. Мĕн тумалла? Ĕçлеме илес çук Атăла пĕвеленĕ çĕре. Йĕкрешсем электростанци тунă çĕрте нихçан та пĕр ача та курман. Пустуй калаçу.

— Эсĕ ху мĕн тăвасшăн?— ыйтать Альак.

— Эпĕ-и? Эпĕ — Атăл çинчен, Шупашкар ГЭСне тăвакан паттăрсем çинчен, хам курнă хăватлă машинăсем çинчен кĕнеке çыратăп.

Тĕлĕнсе пăхрĕç ачасем Марина çине. Ĕненмерĕç ун сăмахне. Йĕкĕлтесе кулчĕç. Анчах та кулă темшĕн часах сӳнчĕ. Ăнланчĕç. Марина çыратех. Тепĕр тесен, тупата, лайăх сĕнӳ пачĕ Марина. Шухăша кайрĕç.

— Тупрăм, пĕл!— çăвар уçрĕ Филипп чылайччен çĕрелле пăхса тăнă хыççăн.— Эпир Марина кĕнекин фотокорреспонденчĕсем. Килĕшетĕн-и, Антон?

Йывăç туратти çинче ларакан Антон пуçне сĕлтрĕ. Тепĕр ачи кăна мĕскĕннĕн пуçне усса тăрать. Марина пулăшать ăна:

—Альак, эсĕ киртинăсем тума ăста-иç. Пăх йĕри-тавра. Сана пурте кăчăк туртаççĕ. Ав, Атăл, пăрахутсем, утрав, чăн-

кă сăртсем, тарăн варсем, йывăçсем, тăрна мăйлă кран, пăрăхсем... Ӳкер те ӳкер. Сана çакăншăн тав тăвĕç.

Паха япала тупнăн çĕкленӳллĕ кăмăлпа тапранчĕç туссем. Вăрман кĕтессипе иртнĕ чух Альак кăшт шаларах ларакан юман çумĕнче пĕр этем тăнине курах кайрĕ. Ун пуçĕнче сасартăк шухăш вĕлтлетсе илчĕ: «Тем тесен те, ку çын — леш, мина пăрахакан сăтăрçă. Вăл çак таврара явăнса çӳрессине чун тахçанах сиснĕ. Ырă çын мĕн туса тăтăр пĕччен? Сăнамалла. Май килсен ярса тытмалла...»

Вара вăл, ним шарламасăр, тепĕр енчен вăрмана чăмрĕ. Юман çумĕнче тайăнса тăракан çын патнелле çывхарса пычĕ те пĕр пысăк тунката хӳттине пытанчĕ. Юлташĕсем темĕн чухлĕ кăшкăрса чĕнсен те, вăл сасă памарĕ. Альака халь юман вулли çумĕнче тăракан çын йăлтах курăнать. Çынни ку — хура сухаллăскер. Темшĕн-çке сухалĕ ун чăн-чăн сухал пек курăнмасть, янахĕ хĕррипе хура кĕрĕк арки касса çыпăçтарнă тейĕн. Сăмси çинче хура куçлăх. Сарă вăрăм кĕпине шăлавар çине кăларса янă. Пĕр аллине шăлавар кĕсйине чикнĕ. Альак пĕлсех тăрать: ывăçĕнче ун — мина. Тен вăл минине Петро шăратса çыпăçтаракан пăрăх ăшне хурса хăварасшăн? Ĕçлекенсем кайса пĕтсен, тилĕлле йăпшăнса пырĕ те унта... Çавăн чухне шăп ярса илмелле те ăна. Тăрать-ха вăл. Кĕнеке вуланçи тăвать. Мĕн вăхăт тăрĕ-ши çапла ку хура сухал?

Аптрасах çитрĕ Альак. Ывăннипе вăл ларчĕ. Акă выртрĕ. Пурпĕрех курăнать-иç леш çынĕ.

Хĕвел анать. Унăн пайăркисем йывăç тураттисем хушшинче пытанмалла выляççĕ. Кайăксем те юрлама чарăнчĕç, йăвисене ларчĕç пулас. Тĕттĕмленет. Саспаллисем сиккелеççĕ-тĕр. Кĕнекине хупса хул айне хĕстернĕ хайхи çын. Пĕтĕмпех паллă, пăч курăнми пуласса кĕтет ĕнтĕ вăл. Тăрать, тăрать çаплах. Шăтарасла пăхса выртатчĕ Альак, куçĕ хăш самантра мăч хупăннă ун. Мĕн вăхăт тĕлĕрнĕ-ши? Вăранса кайрĕ те — йĕп чиксен те куç курмасть. Таçта аслати кăлтăртаттарать. Хăрушă пулса кайрĕ. Йăпăр-япăр сиксе тăчĕ те, пуçран çапнă пек, вăрмантан тухса сирпĕнчĕ. Çул çине тухсан аса илчĕ: ара вăл хура сухала сыхланăччĕ-çке. Хăй выртăнĕнчех тăрса юлчĕ-ши çав хура сухал? Каялла кайса тĕрĕслес, ытла хăрамалла. Альак чунне хытарсах кĕчĕ вăрмана. Юман çумĕнче никам та тăмасть.

Çак каç Альак çĕрĕпе ыррăн çывăраймарĕ, халь-халь

пăрăхсем хăрушла сасăпа сывлăша сирпĕнессĕн туйăнчĕ ăна. Аслати авăтса çиçĕм çиçни те самаях сехĕрлентерчĕ.

Альак тепĕр кунне аппĕ-амăшĕ, урамри çынсем мĕн калаçнине тимлерĕ. Çук усал сас-хура. Аван. Тен сăтăрçă минине хума ĕлкĕреймен. Хурсан та, пĕри-пĕри сехет тесе пĕшкĕнсе илнĕ.

Шкултан таврăнсан, Альак, блокнотпа кăранташ илсе, Атăл хĕррине вĕçтерчĕ. Петро çаплах ĕçлет. Сывлăх сунчĕ ăна. Ĕçсем ун чиперех пыраççĕ имĕш. Хăй мĕншĕн килнине те каларĕ.

— Эсĕ, Альак, художник эппин,— мухтать Петро.— Маттур.

Çŭллĕрех тĕмеске çине вырнаçрĕ Альак. Кунта пурте курăнать. Çын иртсе çŭрени те... Ав, пăрăхсем, «КПТ-1» кран. Çавна ŭкерме тытăнчĕ те Альак. Ларчĕ, ларчĕ. Ĕнтĕ майĕпен кран хут çине куçрĕ. Чиперех. Петро та пырса пăхрĕ, ырларĕ вăл та.

Тĕттĕмленет. Киле таврăннă чух вăрман кĕтессинче чарăнса тăчĕ ача. Хура сухал курăнмасть. Пĕр куçран вĕçертсен, ăçтан тупăн çынна, тĕнче аслă.

Кунсем иртеççĕ. Шупашкар ГЭСĕ пулас вырăнти тавралăх улшăнсах пырать. Çыран хĕррине йĕкрешсем каласа тĕлĕнтернĕ «Гидротехникпа» «520-мĕш» земснарядсем килсе чарăнчĕç. Альак вĕсене те хут çине ŭкерчĕ. Миçе ŭкерчĕк Марина кĕнеки валли! Марина тенĕрен, вăл та çак кунсенче Атăл хĕррине килсех çŭрерĕ. Анчах та вăл Альака курмарĕ. Те юри, чăрмантарасшăн мар, курмăша хыврĕ.

Тепрехинче, киле таврăннă чух, Альак Шупашкар ГЭСĕ пулас вырăнтан чылай аялта, Атăл хĕрринчи ту тăрринче, хай леш, сухаллă çынна курах кайрĕ. Хура сухал тем çухатнăн çырмара çŭрет. Арçын ача татах чарăнчĕ. Сăнать. Леш ăна-кăна сисмест. Сăрт сĕвекне шав утăмпа виçет. Мĕн-ши ун пуçĕнче? Тен вăл кунта хăйĕн япалисене пытарасшăн? Шупашкар ГЭСне туса пĕтериччен пытарса усрĕ те хăйĕн минисене, кайран усал ĕçне тăвĕ. Сыхламалла, сыхламалла.

Хура сухал çырма тĕпĕнчен хăпарчĕ. Альака те паçăрах, те халь тин курчĕ. Вĕсен хушши темиçе хăлаç çеç. Вăл, ирсĕр этем, чĕлхине кăларса кăтартрĕ те аслă çул еннелле сукмаксăр-мĕнсĕр вĕçтерчĕ. Тарăхрĕ те Альак, хуса çитсе лектерессĕнччĕ, пысăк-çке хура сухал, хĕнеттерес çуках. Вăл автобус чарăнакан çĕре çитрĕ, вара ларса кайрĕ. Каллех нимсĕр тăрса юлчĕ сыхлавçă.

Вырсарникун Марина ирех хӑй патне чӗнчӗ тусӗсене. Альак каярах юлса ҫҫрӗ. Марина пианино калать. Антонпа Филипп яланхиллех фотоаппаратпа муталанаҫҫӗ, тӗллевре — Марина.

— Пурте пухӑннӑ-и? — пӑхса ҫаврӑнчӗ пӳлӗм тавра Марина, калӑн: ҫӗр ҫын килессе кӗтнӗ вӑл.

— Пурте! — пӗр харӑс каларӗҫ тусӗсем.

— Сире кӗнекен хӑшпӗр сыпӑкӗсене вуласа парасшӑн. Итлӗр тимлесе. Кайран тишкерсе тухӑпӑр.

— Юрать!

— Тытӑн!

— Итлетпӗр! — теҫҫӗ арҫын ачасем, пукансем ҫине меллӗн вырнаҫса. Сӗтел ҫинче, вазӑра — канфет. Ил те ӗмсе лар, тархасшӑн — ирӗк панӑ. Марина юлташӗсем умне учительница евӗр тухса тӑрать.

«Умсӑмахӗ»,— тет вӑл, вулама тытӑнса.

«Ку кӗнеке Шупашкар ГЭСӗ ҫинчен. Ӑна 1968-мӗш ҫулхи май уйӑхӗнче ҫырма тытӑннӑ. Авторӗ — Марина; фотоӳкерчӗкӗсем Антонпа Филипӑн, ӳкерчӗкӗсем Альакӑн.

## Хуламӑр

Ҫӗнӗ Шупашкар. Ҫапла эпир пурӑнакан хула ячӗ. Ҫапҫамрӑк вӑл. Пирӗнтен темиҫе ҫул кӗҫӗн. Нихӑш урамра та латака йывӑҫ пӳрт шыраса тупаймӑн. Пӗтӗмпех чул ҫуртсем. Асанне ҫапла калать. «Ваттисем ӗлӗк, аслӑ ывӑл авлансан, ӑна пил парса тӗп килтен уйӑрса кӑларнӑ. Ватӑ Шупашкар та, ав, ырӑ сунса, хӑй ятлӑ хула аслӑ Атӑл хӗрне уйӑрса кӑларчӗ. Ирӗкре хула хӑвӑрт ӳсет». Чӑнах та малтан пӗр-ик ҫурт ҫеҫ пулнӑ, вара вӑрӑм урам тӑсӑлнӑ. Халӗ ӗнтӗ темиҫе урам. Тӑхӑр хутлӑ пурӑнмалли ҫуртсем тума тытӑнчӗҫ. Мӗн кирли пурте пур: шкулӗ, магазинӗ, столовӑйӗ, кинотеатрӗ, больници тата ытти те.

Савӑнать ҫӗнӗ хула халӑхӗ. Таҫта, таҫта пӗлеҫҫӗ пирӗн хула ҫинчен, мӗншӗн тесен хаҫат-журналсем ҫырсах тӑраҫҫӗ. Пуласлӑхӗ ун питӗ чаплӑ. Чап кӳрекенӗ — пулас Шупашкар ГЭСӗ. Ӑна пирӗн хуларан кӑшт ҫӳлерех тӑваҫҫӗ.

## Атӑл

Атӑл... Ҫак юханшыв ӗмӗр-ӗмӗр килентернӗ ҫынна. Ахальтен мар-тӑр сӑвӑ-юрӑ кӗрлет ун ҫинчен. Ҫулӗ-йӗрӗ Атӑлӑн

вăрăм, вăрăм. Эпир утса тухайман-ха. Ӳссен çӳл вĕçне те, аял вĕçне те çитĕпĕр.

Тăратпăр юлташсемпе çӳллĕ-çӳллĕ чăнкă ту çинче. Ку вăл Атăлăн сылтăм çыранĕ. Çакăнта пулать те Шупашкар ГЭСĕ. Çак тĕлте Атăл сарлака-сарлака. Ăшăхланнă ватă Атăл. Унта та кунта сарă курпунсем тухнă. Пирĕн умрах, ав, утрав, вăл Атăла икке уйăрать. Эпир ачасемпе темиçе хут та утрав çине ишсе каçнă. Выртаттăмăр вара хăйăр çинче, хĕвелпе пиçсе. Çыран хĕрринчех вĕтĕ пулăсем вылятчĕç. Час-часах утравăн тепĕр вĕçне каяттăмăр. Пăрахутсем ирте-ирте кайнине пăхса тăма çав тери савăк. Астăватăп-ха, пĕррехинче пысăк пăрахут ишсе пынă çĕртех чарăнса тăчĕ. Тытăнчĕ хурлăхлăн кăшкăртма: ту-ту-тут! Мĕншĕн чарăнчĕ? Çывăхра пристань те çук. Куç илмесĕр сăнатпăр. «Пулăшма чĕнет»,— тет тантăшсенчен пĕри. Тĕпĕ шăтман-ши таçта? Вара шыв юхса кĕрĕ те, пăрахут шыва путать. Хăрушă. Çынсене хăтарма хатĕр тăратпăр. Инкек ан пултăрах. Унччен те пулмасть буксир кăшкăртнă сасă илтĕнчĕ. Пĕчĕккĕ çеç пулин те, вăл юхăма хирĕç, шыва икĕ айккинелле сирсе, хăвăрт ишет. Унăн моторĕ таçта илтĕнмелле кĕрлет. Майĕпен буксир пысăк пăрахут çумне йăпшăнчĕ. Унтан мала иртрĕ. Курах кайрăмăр: пăрахут ун хыççăн шăвать. «Урра!» кăшкăртăмăр. Пурте паллă, пăрахут хăйĕн виçеллĕ çулĕнчен кăшт пăраннă та хăйăр çине тăраннă.

### Куçа хупсан курăнни

Шупашкар ГЭСĕ... Чăннипе мĕнле пулĕ-ши вăл? Халĕ эпĕ ăна, куçа хупсан, йăлтах-йăлтах куратăп. Акă çӳллĕ-çӳллĕ пĕве. Вăл Атăл урлă чугун çулĕ евĕр ярт тăсăлса выртать. Ун тăршшĕпех çӳллĕ юпасем. Вĕсен тăрринче хунарсем çапçутă йăлтăртатаççĕ. Атăл тинĕс пек сарлака. Утрав курăнмасть текех.

Шыв пĕве умне капланнă. Шыва тăвăр, вăл тухса тарасшăн явăнать. Ĕнтĕ мăн карапсем сасă параççĕ. Шывĕ те, карап-пăрахучĕсем те пĕр вырăнта тăрасшăн мар. Хыпаланаççĕ таçта. Кайăсăр. Пĕве хапхи ерипен уçăлать. Вара ыткăнать малалла шыв таппи.

Чаплă çурт курăнать аякранах. Пĕве хĕрринчех вăл. ГЭС çурчĕ. Çакăнтан тухса, пралуксем тăрăх чупать ĕнтĕ электричество хуласем витĕр, ял-ял урлă. Кашни киле кĕрсе, йăл çутатать электричество, фабрик-заводсенчи станоксем те ун вăйĕпех çавăрăнаççĕ.

Ку картинăна эпĕ, каларăм ĕнтĕ, куçа хупсан куратăп. Чăннипе, тен, вăл пачах урăхла пулĕ. Халĕ эпир вуниккĕ-вунвиççĕре. Шупашкар ГЭСĕпе пĕрле эпир те ӳсĕпĕр. Ăна туса пĕтернĕ çĕре вунçичĕ-вунсакăр çула çитĕпĕр. Çак хушăра мĕн курнине пĕтĕмпех кĕнекене çырса пырăп.

## Ылтăн пулă мăнукĕ

Манăн виçĕ кĕтеслĕ пĕчĕк сĕреке пур. Пулă тытма асанне ятарласа çĕлен çипрен çыхса панăччĕ. Пĕррехинче илĕмтилĕмпех атте вăратрĕ мана. «Пыратна, хĕрĕм, пулă тытма?»— тет. Юлăп-и? Хăпăл-хапăл тăтăм та тумлантăм. Самант та иртмерĕ, эпир Атăл хĕррине çитсе те тăтăмăр. Атте илемлĕ кукăра вырнаçса вăлта ячĕ. Эпĕ, çыран хĕррипе утса çӳресе, сĕрекепе сĕрсе кăларатăп. Пĕчĕк пулăсем лекеççĕ. Витрене яратăп вĕсене. Кушак валли тутлă апат. Асанне те вĕтĕ пулла ăшаласа çиме юрататъ.

Сĕретĕп, сĕретĕп... Мĕн амакĕ. Сĕреке мана чиперех шывалла сĕтĕрме тытăнчĕ. Пĕтĕм вăя пухрăм та чаш туртса кăлартăм. Мĕн пуррине çыран хĕрринчи типĕ хăйăр çине силлерĕм. Эх, çатăлтататъ! Пăхатăп: хĕрлĕ çунатлă пулă! Пысăкскер, кашăк тăршшĕ пулатех. Сикет-сикет хайхискер. Тупăннă спортсмен. Ярса тытрăм. Çăварне уçать, хупатъ. Чим, ара ку Пушкин юмахĕнчи ылтăн пулă мăнукĕ мар-и? Çуначĕ хĕп-хĕрлĕ. Çийĕнчи вĕтĕ нухрачĕсем ылтăн сăрăпа пĕвенме ѐлкĕреймен-ха. Тыткăна лекрĕ. Чăнах, тем каласшăн çăварне каратъ. Путех вăтă асламăшĕ пек этем чĕлхипе каласма вĕренсе çитеймен. Ыйтатъ-тĕр: «Мĕн кирлĕ сана, Атăл хĕрачи? Пурне те парăп». Айван пулă, мана ним те кирлĕ мар! Ав, еплерех пуçĕпе шăвăнатъ вăл ывăç тупанĕ çинче. Ăнланатăп: «Яр мана Атăла,— тет ĕнтĕ.—ГЭС тусан Шупашкар тинĕсĕ пулатъ».—«Илтнĕ, илтнĕ,— тетĕп.— Эсир те, пулăсем, ун çинчен пĕлетĕр-и?» Хĕрлĕ çунатлă пулă авкаланатъ. «Пĕлетпĕр. Кĕтетпĕр çав саманта. Пирĕн ушкăн йышлă. Пин тĕслĕ вăйă выльăпăр. Пыр ун чух тинĕс хĕрне. Сана телей хыççăн телей парса тăрăп».

Тӳсеймерĕм. Ятăм Атăла Шупашкарăн пулас тинĕсне килнĕ ылтăн пулă мăнукне. Шалалла ишсе кĕриччен, вăл шыва хӳрипе çат çапрĕ.

— Сывă пул, тепре тĕл пуличчен!— алă сулатăп.

Шел, ыйтма пĕлеймерĕм: мĕнле телей парĕччĕ-ши? Шухăшăм вĕçет, вĕçет... Ӳссен инженера тухăп. Тен, Шупашкарăн

гидроэлектростанцинче ĕçлеме пуçлăп. Е тата тинĕс хĕррин-чех пулă завочĕ туса лартсан? Çук, унта та, кунта та ĕçлеме килĕшес çук эп. Вĕренсе тухас акă пулă ĕрчетекене. Мĕн тери лайăх! Вара чăнах та ылтăн пуллăн мăнукĕ телей хыççăн телей парĕ. Ĕмĕт пурнăçланас пирки иккĕленместĕп».

— Ку сан юмах-и?— тĕлĕнет Антон.

— Пуллине тытман эсĕ. Пĕл!— тет Филипп.

— Эпĕ ĕненетĕп,— сиксе тăчĕ Альак.— Тинĕсĕ пулать? Пулать. Унта пулă кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе ишсе çӳрĕ. Пулă ĕрчетекене мĕнле калаççĕ-ха? Антон, эсĕ пĕлетне?

— Ихтиолог.

— Вăт, вăл ихтиолог пулать.

— Çу-у-ук, Марина пианистка пулать, пĕл!— тавлашать Филипп.

Хĕрача чĕнмест, кăмăллăн çеç кулкалать.

«Чăрмантармăп, калаçăрах»,— тенĕн çаврака пукан çине пырса ларать те ваштах тытăнать пианино калама. Пӳлĕм илемлĕ кĕвĕпе тулать. Арçын ачасем тавлашма чарăнаççĕ. Вĕсене музыка хăйĕн çуначĕ çине лартрĕ ĕнтĕ. Тимлесе тăнлать Альак та. Кунсеренех итлет вăл стена витĕр сăрхăнса тухакан музыкăна. Нихăçан та йăлăхтармасть Альака музыка. Итлесе ларнă май, урок тума манса каять вăл хăшпĕр чух. Марина пианино чĕлĕхне тĕкĕнсенех малалла мĕнле кĕвĕ шăранассине тавçăрса илме хăнăхнă Альак. Халĕ пачах урăххи, халиччен янраманни. Çĕнĕ произведени эппин. Альак музыка итленĕ май шухăшлама юратать. Çак музыка ăна çыран хĕрне илсе çитерчĕ. Илтрĕ шăнкăр-шăнкăр шыв юххине. Пăрахутсем салют парса иртеççĕ. Ĕç шавĕ те пур кунта. Мотор кĕрлет, ав, çывăхрах. Таçтан тимĕр листи ӳкет. Пысăк стройка пырать. Ачасем юрласа килеççĕ мар-и? Тĕрĕс. Экскурсие килеççĕ. Чим, ара Шупашкар ГЭСне тăваççĕ вĕт.

Музыка татăлчĕ.

— Мĕнле,— тет Марина,— кĕнекен çĕнĕ страници килĕшет-и?

Йĕкрешсем тӳрех ним те чухласа илеймерĕç. Альак хăйне ырă тĕлĕк тĕлленсе выртнă чух сасартăк вăратнăн туйрĕ. Вăл сăмах мĕн çинчен пынине пĕтĕмпех ăнланать. Çак музыкăна Марина Шупашкар ГЭСĕ çинчен хывнă ĕнтĕ. Альак хăйĕн шухăшне çийĕнчех мăнаçлăн систерчĕ:

— Тĕлĕнмелле чаплă страница, пĕтĕм кĕнекене илемлетекенни.

— Ытлашши ан мухта,— вăтанчĕ Марина.

Филипп та ăнкарса илчĕ. Тӳсеймерĕ ырламасăр:

— Эсĕ чăн-чăн композитор, Марина. Пĕл!

Антон кĕнекере татах мĕн пуррине пĕлесшĕн. Марина хирĕçлемест. Тетрадьне илет те вулать: «Чаплă ĕçĕн пуçламăшĕ...»

Çак пайра пĕчĕк писательница чуна хумхантаракан чылай самантсене эрешленĕ. «Вăрăм мăй» тĕрленчĕке хапăлласа йышăнан, «Гидротехник», «520-мĕш» земснарядсем куç умне тухса тăраççĕ. Вĕсен хăвачĕ пирки асăннă чух Антонпа Филипп каласа панисене те кĕртнĕ.

Шупашкар ГЭСне тума килнĕ çынсенчен чи малтан ачасем Петро электросварщикпа паллашнă. Кĕнеке малалла ун çинчен. Халлĕхе Марина çав страницăсене çырма ĕлкĕреймен-ха.

Сӳтсе явма тытăнчĕç туссем кĕнекене. Хăйсем мĕн шухăшланине йăлтах каларĕç. Хуратса пăрахмалли тупаймарĕç хаяр критиксем. Ĕнтĕ черет ӳкерчĕксене суйласси. Кăларса хучĕç сĕтел çине кашниех хăйсен ĕçĕсене. Аван япаласем пур. Альакăн «КПТ-1 кран» пурне те килĕшрĕ. Ăна кĕнекере шăпах «Вăрăм мăй» сыпăка кĕртмелле. Çапла йышăнчĕç те. Йĕкрешсен те фотоӳкерчĕксем илĕртӳллĕ. «Атăл», «Утрав», «Пăрăхсен вăрăм çулĕ», «Петро электросварщик» ӳкерчĕксем, паллах, кĕнекене пуянлатаççĕ.

Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ кун, каçалапа, йĕкрешсем патне Петро электросварщик кĕчĕ. Альак та кунтах. Савăнăç! Сырса илчĕç вара арçын ачасем хăнана! Виççĕшĕ виçĕ енчен çакăнчĕç мăйран. Пысăкки ахăлтатать, çаврăнать карусель. Тĕпĕртетеççĕ. Евдокия Петровна хăтăрать ачасене: «Йĕксĕксем, чарăннă пулăр! Çынна сывлăш çаврăма парăр!»

Итлес пур-и. Ывăниччен кĕрмешрĕç. Чарăнсан тин Петро çамрăк туссене улттăмĕш класа куçнă ятпа саламларĕ. Атăл леш енне пулла пĕрле ушкăнпа кайма чĕнчĕ. Аçтан аюклатса тăрăн? Шупашкар ГЭСне тăвакансенчен пĕри хăй пулла илсе каять. Мĕн тери савăнăç! Хăпăл-хапăл пуçтарăнчĕç. Анчах Евдокия Петровна хăнана апатлантармасăр кăларса яма, тем тусан та, килĕшмест.

— Маринăна чĕнетпĕр-и, Петро пичче?— тет Антон.

— Хăвăрăн ирĕк.

Виççĕшĕ те тĕпĕртетсе каçрĕç Марина патне. Унсăрăн кичем пуласса туяççĕ вĕсем. Пĕр-пĕрне пӳле-пӳлех калаçрĕç вара. Апла та капла шӳтлеççĕ, пурте ылтăн пулă мăнукĕпе

каласасшăн, теççĕ. Марина çеç мар, унăн ашшĕ те пулла кайма килĕшет.

Ĕнтĕ пурте хатĕр. Çула тухрĕç. Пăхаççĕ юлташĕсем Маринăна. Арçын ачасенчен уйăрса илме те çук ăна. Çийĕнче шăлавар, свитер. Вĕсем пекех сиккелет, чупкалать, шăхăрать.

Атăл урлă моторлă кимĕпе каçрĕç.

Тĕлĕнмелле çутçанталăк кунта. Кирек хăçан та çыран хĕрне тухнă-тухман хырăм выçнине туян.

«Шӳрпе пĕçерĕпĕр»,—терĕç тин çех каçнă пулăçсем те. Вара Марина ашшĕпе Петро васкасах, Атăл хĕррине майлашса ларса, вăлта ячĕç. Марина çĕрулми шуратать. Арçын ачасен хăйсен ĕçĕ: хăрăк çапă пуçтармалла Вĕсем самант кĕрсе кайрĕç хăва хушшине.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, тантăшсен пухнă çапă çĕмел çӳллĕш купаланчĕ. Пулăçсем те таврăнчĕç. Петро шыва путнăн йĕп-йĕпе. Вăл витререн хупах çулçи çине пысăк çăрттан кăларса хучĕ.

— Шывра кĕрешрĕмĕр,— тет Петро.

— Ай, ку пулă каснă-лартнă ман асанне касити,— кулкалать Марина.

— Миçе тытрăр, миçе?— вĕтеленет Антон витре тавра.

— Виççĕ,— пĕлтерет Марина ашшĕ,— ăнăçлă.

Шӳрпе çав тери тутлă пиçрĕ. Чĕлхене çăтса ярас лах çирĕç вара пурте.

Петро хăйĕн йĕпеннĕ тумтирне кăвайт çывăхне типĕтме çакать. Шăршăннă аттине хывса, пуртенккине салтрĕ. Çарран юлсан пурте асăрхарĕç: унăн пӳрнисенчен пуçласа ури туни тăрăх çулăм чĕлхи хăпарнăн хĕп-хĕрлĕ çĕвĕсем. Ури çеç мар, алли те çавах-мĕн. Пӳрнисенче вĕтĕ-вĕтĕ çĕвĕсем. Ывăç тупанне те тарăнах шăйăрнă. Мĕн пулнă ăна? Мĕнле инкек тӳснĕ вăл? Унччен хавас лă шăв-шав тăратчĕ ушкăнра. Тăртанса тăракан сурансене курсан пурин те тутисем самант пĕрĕнчĕç. Ачасем, паллах, хăяймарĕç çăвар уçма. Марина ашшĕ ерипен ыйтрĕ:

— Шăллăм, мĕн палли ку сан?

— Вăрçă палли,— йывăррăн сывласа илчĕ Петро.

— Чим-ха, ара эсĕ манран нумай çамрăк пулма кирлĕ.

— Çулĕ пур, çирĕм саккăрта.

— Калатăп çав, вăрçăра эсĕ мар, ман çултисем те пулман. Эпĕ çапах та вунă çул аслă санран.

— Тĕрĕс. Пăшал тытса çапăçман. Эпĕ ун чух утма та вĕренеймен пĕчĕк шĕпшĕл пулнă. Анчах та тискер вăрçăн

кăвар чĕлхи ниме те уяман, кăкăр ачине те ĕнтĕ. Фашистăн пичет йĕрри ĕмĕрлĕх юлчĕ. Эпĕ ӳснĕçемĕн вăл та пычĕ сарăлса.

Шăп. Юрламаççĕ кайăксем. Хĕвел хупрĕ куçне. Вăрман хыçне кайрĕ çывăрма. Майĕпен, систермесĕр хуплать çĕр питне хура чатăр. Çĕнтерейместь каç тĕксĕмне йăл-йăл çунакан кăвайт та. Юрать-ха, вăл хăй тавра кăшăлланнă çынсен пичĕсене çап-çутă çутатать.

Петро чĕркуççине ыталанă та ача евĕр сулкаланса ларать. Шухăшĕпе вăл халĕ хăйĕн пурнăç пуçламăшне çитнĕ. Унашкал хăрушă самантсене аса илнĕ чух ирĕксĕрех калаçтарать чун.

— Эпĕ Украинăçĕршывĕнче çуралнă,— тет Петро.— Атте-анне те украинецсем. Атте шахтăра ĕçленĕ, коммунист. Анне малтанхи ывăлĕ çуралсан ĕçлеме пăрахнă. Пĕчĕк ачаран этем туса çитĕнтересси, кил-çурт тирпейлесси çавăн пекех пархатарлă ĕç, тесе шутланă атте. Пурăннă çапла ырă та савăк. Унтан эпĕ çуралнă. Вĕçĕ-хĕррисĕр савăннă атте-анне. Ывăлĕсене сывлăхлă ӳстерме ĕмĕтленнĕ.

Ĕнтĕ эпĕ çутă тĕнчере çичĕ уйăх пурăннă. Акă ним кĕтментуман çĕртен пирĕн Тăван çĕршыва нимĕç фашисчĕ тапăнать. Вăрçă эпир пурăнакан çĕрелле çывхарнăçемĕн çывхарать. Пире атте шалалла ăсатасшăн пулнă. Тем пекех ӳкĕтлесен те, анне кĕршмен ун сăмахне. Пĕрле пурăннă, пĕрле вилетпĕр, тенĕ çеç вăл. Атте хăй ниçта та тапранман. Ăна тата темиçе çынна парти ĕçĕпе вырăна хăварнă. Тăшман сĕмсĕрленсе пуçне килсе чиксен, вĕсен шахтăна сывлăша сирпĕнтермелле. Шахтăпа тăшман нимĕн чухлĕ те усă ан куртăр. Нимĕç фашисчĕсене çĕркăмрăкĕ çăкăр пекех кирлĕ-çке. Хĕçпăшал тиенĕ пуйăссене фронт çывăхне сахал чуптармалла-и?

Тăшман эпир пурăнакан вырăна бомбăсем тăкать. Çунаççĕ çуртсем. Ӳкеççĕ, вилеççĕ çынсем. Ман пĕчĕк пиччен те пурнăçĕ татăлать. Çапла сехрене хăпартса пырса кĕрет фашист яла танкпа та мотоциклпа. Шăп çак вăхăтра шахта сывлăша сирпĕнет. Урсах каяççĕ вара лешсем. Вĕсем халăха шахтăра ирĕксĕрлесех ĕçлеттерме шутланă. Халĕ, ав, шахтăран ним те юлман, пĕр ишĕлчĕк кăна. Паллах, ку вĕсемшĕн кĕтмен шырлăх. Камсем тунă çак ĕçе? Ертсе пыраканĕ кам? «Пурне те тупмалла, ялйыш умĕнче çакса вĕлермелле»,— çапла тĕллев лартаççĕ фашистсем. Çăмăл килмен мĕн шухăшланине пурнăçлама. Нихăш те тăшмана пĕр сăмах пĕлтермен. Усăлать вара фашистсен чăн-чăн тамăк алăкĕ. Тыта-тыта пыраççĕ

çынсене, тӗрлӗ майпа асаплантараççӗ, усси çук, шахтăна сирпӗтекенсем — ирӗкре. Анчах пӗр усал выльăх пӗтӗм кӗтӗве варалать. Ку вăхăтра та тупăннă Совет влаçне шăл хăйăракан. Çав ирсӗр чунлă этем элеклесе панă та фашистсене ман атте пирки. Пирӗн килте айӗн-çийӗн тустараççӗ, аннене асаплантараççӗ вӗсем. Анне атте ăçтине пурпӗрех каламан. Персе пăрахас вӗçнех çитеççӗ ăна. Мӗн тумалла? Ялйыша пӗр çын юлмиччен хуса пыраççӗ шахта умне. Кунта шӗл-кăвар çӗркăмрăк купи амаланса выртать. Куç уçса пăхма хăрушă. Кашниннех чун сисет ырă мара. Акă пӗр илес-милесӗ тухать халăх умне. Шахтăна сывлăша сирпӗнтерекенсене тытса пама хушать, унсăрăн пурне те вилӗм кӗтет имӗш. Темӗн чул хăратсан та, нихăшӗ те чӗнмеççӗ, пуçӗсене пӗксе тăраççӗ. Аннем те кунтах. Аллинче — ачи.

Тулхăрать фашист. Юнать. Аллинче револьвер. Çавăнтах хăйсен чӗлхипе командăсем пама пуçлать. Икӗ салтак анне патне пырать. «Ăçта упăшку? Каламасан ачуна вутта пăрахатпăр!» — ӗрлет фашист. Анне мана кăкăр çумне пăчăртаса тытнă. «Памастăп ачана,— хирӗçленӗ вăл.— Хăпăр ман çумран! Упăшка ăçтине эпӗ пӗлместӗп!» Унччен те пулмасть — аннерен ачине — мана ӗнтӗ — туртса илеççӗ те вӗлт ывăтаççӗ амаланса выртакан шӗл-кăвар çӗркăмрăк купи çине. «Ах!— ахлатнă тахăшӗ.— Ачасене вутта пăрахаççӗ! Фашистсене хирӗç çӗкленер! Пуçӗсене çапса çурар!»

Çак тискер ӗçе курса тăнă халăх, вут хыпса илнӗн, карах сиксе ӳкет тăшман çине. Кам мӗнле пултарнă çапла çапăçнă тăшманпа. Самант чул муклашкисем хута каяççӗ. Арçынсенчен нумайăшӗсем пушă алăпа пыман, вӗсем пăтăрмах сиксе тухасса малтанах кӗтнӗ. Вăрттăн çӗре пытарнă револьверсене туртса кăларнă та тӗллесе пенӗ тăшмана. Тытăçу хӗрнӗçем хӗрсе пырать. Фашистсем ним тăваймаççӗ. Тахăш енчен çӗнӗрен ушкăн килсе тухать. «Партизансем!» — кăшкăрса ярать тахăшӗ.

Тăшман хыпăнса ӳкет. Ку таврара çав хатӗр хăвăрт партизан отрячӗсем чăмăртанасса кӗтмен вăл.

Партизансем лайăх кăна тыллана фашистсене, пилӗкӗсене хуçа-хуçа хăварнă. Мана çунма паман. Хамăрпа кӳршӗллӗ пурăнакан Павло пичче мана çӗркăмрăкӗ çине ӳкнӗ-ӳкмен ярса тытнă. Çапах та вут çулăмӗ ал-урана çуласа илме ӗлкӗрнӗ.

Тӗркӗшнӗ вăхăтра пире аннепе иксӗмӗре те партизансем патне тартнă. Унта отряд тухтăрӗн вăй хурсах тăрăшма тив-

нĕ пĕчĕк этемшĕн. Сыватнă-сыватнах мана. Çĕвĕсем вара ĕмĕрлĕхе юлчĕç.

Ырă кăмăллă, хура-шура пайтах курма тивнĕ аннем мĕн тăшмана чикĕрен хӳтерсе кăларичченех партизанта çӳренĕ. Апат-çимĕç пĕçернĕ, кĕпе-йĕм çунă. Пурăнать-ха, кĕтет кунсерен ывăлне киле таврăнасса. Аттене çĕнтерӳ кунне кĕтсе илме пӳрмен, йывăр çапăçура пуçне хунă вăл.

Петро чарăнчĕ. Калаçу пуçламăшĕнчи пекех шăп. Хутранситрен кăна çапă çатăртатса çунни е вăрăм туна хăлха çунатти çине ларасшăн нăйлатни илтĕнет. Аслисем те, кĕçĕннисем те тарăн шухăшра.

Марина вĕçне çитиччĕнех хускалмасăр тăнларĕ. Вăл шĕлкăвар кăмрăк купине, ун çинче ача упаленнине те шухăшра курса тăчĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе сехĕрленчĕ. Ылханать хĕрача хаяр тăшмана. Ачана вилĕмрен çăлнă сынна тав тăвать. Шывра та путман, вутра та çунман сынсем паян Тăван çĕршывăн аслă стройкисенче ĕçлеççĕ. Халĕ ĕнтĕ пĕчĕк писательницăна Шупашкар ГЭСне тума килнĕ Петро электросварщик çинчен кĕнекере мĕн çырмалли паллă.

— Тивнĕ сана, тăванăм, тӳсме,— тет Марина ашшĕ, хаш-ш сывласа, чылайччен тăхтанă хыççăн.

— Вăрçă никама та тĕкĕнмесĕр хăварман,— пуплет Петро.— Тӳсессе те тӳснĕ, çĕнтерессе те çĕнтернĕ.

Çывăрма вăхăт. Ушкăнпа хăпăл-хапăл палатка карчĕç. Петрон тумтирĕ паçăрах типнĕ. Тăхăнчĕ. Йĕкрешсем унăн хӳри тейĕн, шит юлмаççĕ Петроран. Çывăрма та юнашар кĕрсе выртрĕç.

Альакăн ыйăхĕ çук. Куç умĕнче шав Петро каласа панисем. Çывăрса кайсан та тĕлĕкре вăрçă курчĕ. Хĕçпе турарĕ вара тăшмана. Тимĕр-тăмăр çине мина пăрахнă сăтăрçа та курчĕ. Курчĕ çеç мар, ярсах тытрĕ. Парăнмасть. Тытăнчĕç кĕрешме, çыхлансах ӳкрĕç. Акă тăшман ун аллинчен çăлăнса тухрĕ те тарма пикенчĕ. Кăшкăрса ячĕ Альак: «Тытăр, вĕçерĕнет!» Сасă тухмасть.

Шăп çав вăхăтра Альака хулпуççинчен лăскарĕç. «Вăрансам, мĕншĕн йынăшатăн? Чирлемерĕн-и?»— тенине илтрĕ вăл. Куçне уçса ячĕ. Тул çутăлнă иккен. Умра Петро тăра парать. Йĕкрешсемсĕр пуçне ыттисем пурте ура çинче. Ыйхăран вăраннисем пурте, вăлтисене илсе, Атăл хĕрне утрĕç.

Пысăккисем уйрăм вырăн тупса ларчĕç. Альак йĕкрешсене хĕрхенчĕ, кайса вăратрĕ тепĕр самантран. Пурпĕрех вĕсен пулă тытасси асĕнче пулмарĕ, çаплах фотоаппарачĕсене

шатлаттарчӗҫ. «Маринăпа Альак — Атăл пĕвин тĕпĕнче — пулăра!» ятлă альбом тăватпăр теççĕ хăйсем. Чăрăш, хыр йывăççисене, хăвалăха, хăйăр куписене ӳкерчĕç. Ăнланмалла ĕнтĕ, Шупашкар ГЭСне тусан, кунти вырăнсем пĕтĕмпех Атăл тĕпне юлаççĕ.

Атăл леш енчен пулăçсем туллипе тавăрăнчĕç.

Ашшĕ ывăлне савăнăçлă хыпар пĕлтерме васкарĕ:

— Альак, ташла! Пионер лагерьне кайма путевка параççĕ.

— Каймастăп!— тет ывăлĕ.—Таçти-таçти ачасем Шупашкар ГЭСне тунине курма экскурсие килеççĕ, ман пăрахса каймалла.

Темĕнле ӳкĕтлесен те, Альак яхăнне килĕшмерĕ.

— Ан кай, çăвĕпех мана пулăшăн,— терĕ юлашкинчен ашшĕ.— Мана та Шупашкар ГЭСне тунă çĕре ĕçе ячĕç.

— Сана-и?— тĕлĕнет ывăлĕ.

— Эсĕ мĕн шутлан? Платник, тăванăм, пур çĕрте те кирлĕ çын.

Альак ашшĕне Шупашкар ГЭСне тума килекенсене Атăл хĕррине анса çӳремелли пусма ăсталама хушнă-мĕн.

Хыпар Альака чăннипех савăнтарчĕ. Вăл ĕнтĕ пысăк стройкăра хăй ĕçлет. Ку чи пахи. Тата леш сăтăрçа сыхлама май пур. Çийĕнчех йĕкрешсем патне чупрĕ. Ашшĕпе иккĕш пусма тума тытăнасси çинчен каласа пачĕ. Лешсем те çунатланчĕç, пулăшма пырасшăн. Кам чартăр — ушкăнпа ĕçĕ те кал-кал каять.

Кĕçнерникун, хĕвел тухичченех, ывăлĕпе ашшĕ чăнкă ту еннелле утрĕç. Теплерен Альак çаврăнса пăхрĕ те курах кайрĕ: хыçалта ун виçĕ тусĕ утаççĕ. Марина та юлман. Савăннипе кăшкăрса ячĕ Альак: «Хăвăртрах!» Хуса çитсен асăрхарĕ: Марина аллинче хăмăр хупăллă тачка тетрадь. Мĕн курни-илтнине çырса пыма илнĕ ĕнтĕ вăл. Пусма туни çинчен те кĕнекене кĕртет пулас.

Çырма хĕрне пырса тăнă-тăман грузовик çитсе чарăнчĕ. Юпасем, хăма тиесе килнĕ-мĕн.

Кун каçа ачасем ăмăртса юпа шăтăкĕсем чаврĕç, ашшĕ çаплах каскаларĕ.

Ĕç эрне ытлана тăсăлчĕ.

Июнĕн тăххăрмĕшĕнче тăватă тантăш хăйсем пулăшнипе тунă çĕнĕ пусма тăрăх аялалла анатчĕç. Сасартăк хăлхана халиччен илтмен шав хупларĕ. Мĕн япала? Туссем пĕр-пĕрин

куҫӗнчен ыйтуллӑн пӑхкаларӗҫ. Филипп вӑштах уйӑрса илчӗ:

— Земснаряд шавӗ! Пӗл!

Земснаряд ларакан ҫӗрелле васкарӗҫ туссем. Атӑл хӗрринче Петро тӑрать. Вӑл ачасене асӑрхарӗ те кӑчӑк туртрӗ. Лешсем ҫума пырса тӑрсан, ҫӗкленӳллӗн каларӗ:

— Паян «Гидротехник» земснаряд ӗҫе кайрӗ! Пӑрӑхсене лайӑх сыпӑҫтарнӑшӑн пире, электросварщиксене, тав турӗҫ.

Антонпа Филипп ӑна алӑ тытса саламларӗҫ.

Марина шывра кӗрлесе ларакан хӑватлӑ машина ҫине куҫ илмесӗр пӑхать. Пӑрӑхӗ таҫта ҫити тӑсӑлать. Унтан хӗрача ҫапла ыйтрӗ:

— Петро пичче, «Гидротехник» земснаряд ҫинче миҫе ҫын ӗҫлет?

— Мӗнпурӗ те вунпӗр ҫын ҫеҫ.

— Ай-уй, мӗнле сахал.

— Часах ақӑ «520-мӗш» земснаряд ӗҫе тытӑнать,—тет Петро.— Атӑл тӗпӗ ҫатма пек якалӗ, пӗр ҫӑпала юшкӑн юлмӗ.

Айккинерех кайса тӑчӗ Марина. Уҫрӗ тетрадьне. Пӳрне хушшине хӗстернӗ кӑранташӗ вӑй вылять, ав.

— Мӗн ҫырать сирӗн хӗрача?— пӑшӑлтатрӗ Петро, пуҫне Марина еннелле сӗлтсе.

— Кӗнеке ҫырать,— терӗҫ пӗр харӑс арҫын ачасем.

— Мухтавлӑ ӗҫ.

Йӗкрешсем те фотоаппарачӗсене мӗншӗн ҫакса ҫӳренине аса илчӗҫ.

Чикӗ сыхлама тухакан хуралҫӑ евӗр, Альак каҫсерен Атӑл хӗррипе утса тухать. Сӑтӑрҫа тытас шухӑш ӑна пӗрре те канӑҫ памасть. Шупашкар ГЭСне тума хатӗрлекен ҫынсем кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ҫав этем те ӗҫлӗ ҫынсем хушшинчех явӑнса ҫӳрет пулӗ. Сӑтӑрҫа хӑйӗн ирсӗр ӗҫне тунӑ чухне ярса тытас пирки нимӗн чухлӗ те иккӗленмест Альак. Анчах юлташӗсене ҫакӑн ҫинчен каласа пама именет. Класри пек пӑтӑрмах сиксе тухасран, тусӗсем хӑйӗнчен сивӗнесрен хӑрать вӑл. Каҫкӳлӗм картишне пухӑнакан ачасемпе те вӑл вӑрахчен вылямасть. Альак час-часах таҫта кайса ҫухалнине, киле ҫӗрле тин таврӑннине Марина асӑрхать-мӗн. Пӗррехинче хытах тӗпчерӗ те, Альак шарламарӗ.

Утать, ав, каллех хуралҫӑ Атӑл хӗррипе. Хыҫра, курӑникурӑнми, Марина пырать. Вӑл ҫывӑх юлташӗ ӑҫта тата мӗн

сăлтавпа çӳренине пĕлесшĕн. Альак хăйне кам та пулин йĕрлесси çинчен шутламасть те, çаплах хура сухала шырать.

Йăлăм енче тӳпене хура пĕлĕт капланса хăпарать. Хĕвеле те пытарчĕ вăл. Урлă-пирлĕ йăл-ял çиçет çиçĕм. Аслати кăлтăртатать аякра, халлĕхе ун сасси аран çеç илтĕнет.

Çырма-çатраллă вырăна пырса тухрĕ Альак. Тĕттĕмленет. Витĕр пăхать çамрăк пограничник. Куçĕсем ун чăн-чăн çутă çăлтăр. Акă тарăн вар. Пĕркун шăпах çакăнта каллĕ-маллĕ утăмлатчĕ хура сухал. Çавăнтанпа Альак тек ăна ниçта та тĕл пулаймарĕ. Ăçта кайса çухалчĕ çав этем? Чим, темле ĕмĕлке курăнать мар-и? Выльăх-и, çын-и? Тинкерсе пăхать Альак. Уйăрса илчĕ — çын.

Кун пек вăхăтра ту тăрринче шалчалла каçăрălса тăма юрамасть. Выртрĕ ӳпне. Унччен те пулмарĕ, ун çумне кăштăрт пырса йăпшăнчĕ пĕри. Шартах сикрĕ Альак. Пăхать хайхискер... Марина иккен.

— Мĕн туса çӳрен эсĕ? Пĕтĕм ĕçе пăсан, кай кунтан!— тет Альак хаяр та шăп сасăпа.

— Эсĕ мĕн тăван?

— Кай кунтан, теççĕ сана!

— Каймастăп!

— Шăп пул, çынна **хăратан!**

— Мĕнле çынна?

Марина курах кайрĕ çырма тĕпĕнче мĕшĕлтетекен çынна.

— Кам вăл, Альак?

— Шпион.

— Ан лĕпĕртет,— ĕненмест Марина.— Кунта мĕн шпионĕ пултăр?

— Пур!— çирĕплетсе каларĕ юлташĕ.— Ăна тахçантанпах йĕрлетĕп-ха. Вăл пирĕн отряд пухнă тимĕр-тăмăр çине мина пăрахса завода сывлăша сирпĕтесшĕн пулнă. Юрать-ха, тимĕр-тăмăр шăратакан çын, чее куçлăскер, вăхăтра асăрханă çакна. Шпион халĕ Шупашкар ГЭСне сăтăр тăвассишĕн çӳрет.

Марина пĕрĕхтерсе кулса ямасăр аран-аран тӳсрĕ. Тимĕр-тăмăр купинче пĕр старик мина тупни çинчен çӳрекен юмаха вăл тахçанах илтнĕ. Ан ĕнен суя халапа теесшĕнччĕ. Анчах ăна çумĕнчи юлташĕ чавсипе кăлт-кăлт тĕртрĕ те шăппăн каларĕ: «Пăх, мĕн ĕçлет вăл?»

Çырма тĕпĕнчи çын темле шуррăн курăнакан купа патне пычĕ. Тем сĕтĕрет. Ик-виç утăм тусан, çĕр шăтăкне анса кайнăн, пăч çухалать. Унтан кăшт тăхтасан тухать, каллех шуррăн курăнакан купа патне пырать.

Тавçăрчĕç икĕ тус. Шуррăн курăнаканни — саваласа якатнă хăмасем. Шăтăка тултать. Халĕ ĕнтĕ Альака пурте паллă. Ку сăтăрçă шăтăка, пĕркун шухăшланă пекех, минăсем пытарать. Халех ярса тытмалла ăна. Çавăнпа та вăл Маринăна çирĕп сасăпа хушрĕ:

— Эсĕ юл! Çак сынна куçран вĕçертнĕ ан пул!

— Эсĕ ăçта каян?

— Милицие.

Тек калаçса-мĕн тăмарĕ Альак, куçран çухалчĕ.

Марина — хуралта. Пĕччен хăрушă. Сиксе чĕтремех тытăнчĕ. Çитменнине, аслати авăтни сехрене хăпартать. Юратьха, сырма тĕпĕнчи çынни тармасть, шав хăй ĕçĕпе тăрмашать.

Выртать-выртать Марина, пĕр ĕмĕр иртнĕн туйăнать ăна. Кĕтсен-кĕтсен, çитрĕ Альак. Унпа икĕ милиционер. Пĕвĕпе çўллĕреххи сырма тĕпнелле хунар çути ячĕ. Çутă пайăркине лекнĕ çын мулкачла ниçта вĕçерĕнеймест.

— Эй, мĕн тăватăн эсĕ унта? — кăшкăрчĕ тепĕр милиционерĕ.

— Ним те тумастăп! — илтĕнчĕ сырма тĕпĕнчи çыннăн тўрккес сасси. Вăл хăйпе милиционерсем калаçнине чухлаймасть-ха.

Анчĕç сырма тĕпне. Милиционерсенчен Маринăпа Альак та юлмарĕç. Альак тўрех палларĕ: леш хура сухаллă çынах иккен. «Тинех лекрĕ!» — хĕпĕртерĕ ача.

Чи малтан милиционерсем çак çын докуменчĕсене тĕрĕслерĕç. Комбинатра ĕçлет имĕш.

— Мĕн тăватăн эсĕ кунта? — ыйтрĕç милиционерсем.

— Çĕрпўрт ăсталатăп, — тет хайхискер. — Пулла килсен выртса-тăма.

Кăтартма хушрĕç. Шăтăка илсе кĕчĕ. Йĕри-тавра хăма çапнă. Темиçе кирпĕчрен купаланă кăмаки те пур. Алăк лартма та ĕлкĕрнĕ, чўрече те каснă.

Милиционерсем ăнланчĕç.

— Юрамасть, закон хушмасть. Халех пăс, — терĕç вĕсем ăна.

Çынни хирĕçлет, тавлашать. Чылайччен турткалашса тăчĕ. Çĕнтерес пур-и. Йăлт пăстарчĕç.

— Асту, пĕрреленĕхе каçаратпăр, — асăрхаттараççĕ милиционерсем, — тепрехинче айăпланан.

Çуллахи каç кĕске. Тул çутăлчĕ те. Атăл урлă çумăр пĕлĕчĕ те каçаймарĕ.

Çĕрпўрт хуçи ĕшеннĕ пулас, Атăла сикрĕ шыва кĕме.

Милиционерсем, мотоциклечĕсем çине Альакпа Маринăна лартса, хулана тавăрăнчĕç.

Милици уйрăмĕнче ачасем хăйсен ашшĕсене тĕл пулчĕç. Ашшĕсем ятламарĕç вĕсене. Ăнланчĕç тÿрех. Пăрăнчĕç, чăрмантармарĕç ĕçлĕ çынсене.

Уйăрăлнă чух милиционерсем çапла каларĕç ачасене:

— Тавтапуç сире, пионерсем. Яланах çапла тимлĕ пулăр! Ун пек йăх-яхсем ÿлĕм те тупăнĕç. Халĕ, Шупашкар ГЭСне тунă вăхăтра, Атăл илемне нихăçанхинчен те ытларах упрамалла. Пирĕн пата ют çĕршывсенчен те курма килеççĕ.

Туссем çурт умĕнчи пахчасем çумĕпе иртеççĕ. Калаçмаççĕ хăйсем. Пуçра иккĕшин те шухăшсем явăнаççĕ.

Ĕненмест Альак çав этем Атăл хĕрринчи çырмара ытахальтен кăна çĕрпÿрт лартнине. Вăрттăнлăх пурах унта. Хура сухала куçран вĕçертме юрамасть. Ăна йĕрлемелле, йĕрлемелле. Альак пионер-çке, унăн кирек ăçта та Тăван çĕршыв чиккинчи пек яланах сыхă тăмалла.

Маринăн вĕçсе кайманни кăна. Вăл паян кĕнекен тĕлĕнмелле çĕнĕ страницине çырать. Çав страница хăйĕн юлташĕ— Альак çинчен.

Хапха умĕнче йĕкрешсем кĕтсе илчĕç вĕсене.

— Хăвăртрах!— васкатать Антон.— Аэродрома каятпăр.

— Аттепе аннене илме. Пĕл!— тет Филипп.

Хавхаланса кайрĕ Альак. Шупашкар ГЭСне тăвакан инженерсем килеççĕ. Тĕнче курман аслă ĕç çĕкленет.

Декабрь, 1968 çул.



# АННЕ

*Калав*

Анне! Анне!

Кун каҫа миҫе хут каламастӑн-ши ҫав чӗререн тухакан сӑмаха?! Ирхине ыйхӑран вӑраннӑ-вӑранман ӑна чӗнетӗн:

— Анне!

Йӗри-тавра пӑхса куҫпа шыратӑн. Курмастӑн, саспа кӑшкӑратӑн:

— Анне! Анне! Ӑҫта эсӗ?

— Кунтах-ха, хӗрӗм! — илтетӗп эпӗ аннемӗн ҫепӗҫ те ачаш сассине. Туятӑп, вӑл тӗпел кукринче. Пӗлсех тӑратӑп, вӑл урине протез тӑхӑнасшӑн тӑрмашать ӗнтӗ.

— Анне! Аннем, тӑхта, эпӗ халех сана пулӑшма пыратӑп, — саслатӑп.

Хам ҫирен утияла сирсе пӑрахатӑп та, йӑпӑр-япӑр сиксе те тӑнӑ.

Пирӗн аннен сылтӑм ури чӗркуҫҫи таран ҫеҫ. Вӑрҫӑра аманнӑ вӑл. Вӑрҫӑ тухиччен анне трактористка пулнӑ, колхоз хирӗсене сухаланӑ.

Кашни ирех эпир аннепе унӑн сылтӑм урине протез лартатпӑр. Ӗҫрен таврӑнсан протезне салтса хуратпӑр. Сылтӑм хул айне костыль хӗстерет, сулахай аллине патак тытать. Ҫӳрет вара ҫапла, кил таврашӗнче кӑштӑртатса.

Унччен аннене протез сырма аппапа пичче пулăшнă. Халĕ вĕсем хулара вĕренеççĕ. Килте эпир аннепе иксĕмĕрех пурăнатпăр. Эпĕ аннен чи кĕçĕн ачи. Пиллĕкмĕш класра çеç вĕренетĕп-ха. Атте эпĕ çураласса кăшт çеç кĕтсе илеймен, мана кураймасăрах вилнĕ. Ăна вăрçă суранĕсем тĕп тунă.

Анне мана ирхи апат çитерет. Апачĕ тутлă-тутлă. Уйрăмах хуратул пăттине çисе тăранмалла мар. Сĕтел хушшинчен тухатăп, чуппа паратăп:

— Тавтапуç анне, тутлă апатушăн,— тетĕп.

Вăл ман çине ăшшăн пăхать те йăл кулать. Шкула тухса каяс умĕн, алăк хăлăпне тытсан:

— Анне, эпĕ кайрăм!— тесе калатăп.

Шкула çитме васкатăп. Тепĕр чух тăк! такăнатăп. Сисмесĕрех:

— Анне!— вĕçерĕнет чĕлхерен.

Пĕр-пĕр хапха айĕнчен ăнсăртран усал йытă пуçне кăларса вĕрсе ярать. Чĕре шарт сикнипе хӳтĕлеме чĕнетĕп:

— Анне!

Шкулта учитель урока вĕренменшĕн ятласа «иккĕ» паллă лартса парать. Çак вăхăтра та ман тутасем мăкăртатаççĕ.

— Анне! Ятла мана, айвана.

Енчен «пиллĕк» паллă илсен, питĕм-куçăм — хăй хĕвел. Кам савăнĕ манпа пĕрле куншăн?

— Анне! Кил «пиллĕк» паллă курма!— чĕнетĕп ăна.

Çапла, анне вăл мана хăват паракан çын. Астăватăп-ха, хĕлле мана темшĕн вĕрилентерсе пăрахрĕ.

— Ай турах, кăвар пек тĕлкĕшен,— тет анне, çамкана тытса. Çук, ун алă тупанĕ пĕрре те кăпăшка мар. Унăн алли кушăрканă сăран евĕр. Пулин. Ку вĕт анне алли. Çак алă çамкана перĕнсен вĕри чакать.

Пылпа сĕт вĕретрĕ.

— Ĕç-ха, хĕрĕм,—сĕнет вăл.

Ун сăмахне кĕршетĕп. Анчах, сĕтне ĕçнĕ чух сăтма çав тери хĕн. Пыр ыратать. Ĕçетĕп. Лăнкăрт! лăнкăрт! çăтатăп. Хăрамастăп. Йывăрлансах каймăп-ха, мĕншĕн тесен ман умра — анне! Çĕрĕпех куç хупмасăр ларчĕ вăл. Чăнах, тул çутипе эпĕ ăшă ыйха путрăм.

Анне манăн совхоз мастерскойĕнче ĕçлет. Ялхуçалăх машинĕсене юсаççĕ кунта. Кашни кунах ĕç пĕтнĕ çĕре эпĕ аннене илме килетĕп. Кун йĕрки çапла ман: шкултан киле таврăнмалла. Кил хушшинче ĕç сахал мар. Шыв ăсса кĕресси, урай çăвасси, шăласси — ман ĕç.

Паян, шкултан тухсан, тӳрех мастерскойне чупрӑм. Анне ҫапла хушнӑ.

— Анне, эпӗ килтӗм!— кӑшкӑратӑп.

— Питӗ аван,— тет вӑл.

Кунта ӗҫлекен ытти ҫынсем те ӗҫе пӑрахсах мана пӑхаҫҫӗ. Кашниех сӑмах хушма пикенет:

— Ӗҫсем мӗнле, Натуша?

— Мӗнле паллӑ илтӗн паян?

Эпӗ кулкаласа ҫеҫ тӑратӑп.

— Натуша хӗрӗм, ил-ха сумкӑна,— хушать мана анне. Эпӗ анне каланипе сумкине алла илетӗп.

Пуринпе те сывпуллашса, аннепе иккӗн мастерскойӗнчен тухса каятпӑр.

Пӗлетӗп анне ӗҫрен мӗншӗн иртерех кайнине. Паян вунулттӑмӗш число. Кашни уйӑхрах вунулттӑмӗш числора пенси укҫи илсе килеҫҫӗ.

Тӗлӗнеҫҫӗ аннерен. Ыйтаҫҫӗ вара:

— Мӗн тума ӗҫлесе асапланан, Матӗрне аппа? Пысӑк пенси илен. Кан та кан.

— Килте ларса ухмаха тухса каятӑп. Вӑй пур чух ӗҫлес. Кайран, ватӑлсан, куҫ курӗ,— калаҫать анне.

Ҫитес январь уйӑхӗнче анне аллӑ пилӗк ҫул тултарать. Унӑн ҫуралнӑ кунӗ — пирӗншӗн уяв кунӗ. Хӑнасем пухӑнаҫҫӗ. Пурте хаваслӑ. Вӑрҫӑра пӗрле ҫапӑҫнӑ тусӗсенчен саламлӑ телеграммӑсем илетпӗр.

Васкамасӑр утатпӑр килелле. Ҫук, ҫӳренӗ чух анне ӳпкелешсе нӑйкӑшнине илтмен. Вырӑн ҫине выртсан час-часах вара айлатать.

Ҫитрӗмӗр. Анне хапха ҫумӗнчи сак ҫине ларса юлать. Эпӗ сумкӑсене хума киле кӗретӗп. Пирӗн пӳрт вӗр-ҫӗнӗ. Иртнӗ ҫул ҫеҫ лартнӑ ӑна. Пӗренисенчен тутлӑ сухӑр шӑрши кӗрет, такам духи сапнӑ тейӗн.

— Хыр пӗрени ялан тутлӑ шӑршӑ кӑларать,— ӑнлантарать анне.

Урама тухрӑм та эпӗ те аннепе юнашар лартӑм. Чӳрече умӗнче пирӗн ярӑм хунавлӑ йӑмра ӳсет. Илӗртмӗш вӑл. Сентябрь уйӑхӗ пулин те, ҫулҫисем сип-симӗсех-ха ун. Юнашарти лӑс хурӑнсем сарӑхнӑ ҫулҫисене тӑкрӗҫ ав. Миҫе турат-ха ку йӑмран?! Кайӑксене ку йӑмра килӗшет курӑнать. Ав мӗнле чӗвӗлтетеҫҫӗ. Ҫерҫисем пулас. Вӗсем ҫӑра туратсем хушшинче пытанмалла выляҫҫӗ-тӗр.

Йӑмра хыҫӗнчен Тукасри Сахье инке тухрӗ.

— Săвап пултăр, Матĕрне,— терĕ вăл.

— Кил лар, Сахье,— чĕнет анне. Анчах хăйĕн сасси темшĕн сиввĕн тухать.

— Ларам-ха, ятарласа килтĕм. Сана каламаллисем пур,— тет Сахье инке. Кăххăм-кăххăм ӳсĕркелесе, пыр шăтăкне тасатрĕ те тытăнчĕ çатăлтатма:—Эх, Матĕрне, Матĕрне, пĕрле ӳсрĕмĕр. Çавна мантăн пулать. Эсĕ правлени членĕ, хӳтĕлеместĕн пулать мана. Çаплах упăшкашăн—Кирукшăн питлетĕр пулать. Çитмелле пек, нушине тӳсрĕм. Пилĕк çула ссылкăна ячĕç. Татса тавăрантăм...

— Мĕн каласшăн эсĕ, Сахье?— ыйтать анне.

— Ха, пĕлменçи пулан?! Мĕншĕн мана пенси памалла мар турăр. Хăв, ав, пенси укçи илетĕн, патьке. Совхоз кантур пек çурт лартса пачĕ!

Анне темшĕн тӳрех ним те калаймарĕ. Пӳлĕнчĕ. Тем, чуна ыраттаракан саманта аса илнĕн, тутисем пĕрĕнсе, куçĕсем хĕсĕнсе илчĕç. Унтан çивĕччĕн çапла каларĕ:

— Сахье, эсĕ ман пенси укçине ан хапсăн. Эпĕ хĕрарăм пуçпа фронтра хаяр тăшманпа çапăçрăм. Аса ил-ха, эсĕ ăçта пултăн вăл вăхăтра? Колхозра ĕçлеме те тивĕçлĕ пулаймарăн. Сутăнчăк арăмĕ, кай кунтан!

— Эпĕ чирлĕ çын, совхозра тек ĕçлеместĕп!— кăшкăрашать Сахье инке.

Те Çиркка пичче-почтальон килнине курса, Сахье инке çуйăха-çуйăха йăмра хыçнелле кайса çухалчĕ.

— Мĕн пит кăшкăрашать ку Сахье?— пĕлесшĕн пулчĕ Çиркка пичче.

— Пенси паманшăн мана ятлама килнĕ,— терĕ анне.

— Ĕлĕкхи йăлана виличчен ĕх пăрахмасть иккен,—тет Çиркка пичче.— Астăватăн-и, Матĕрне, хамăр шкулта вĕреннĕ саманта? Вĕсене Кирукпа иккĕшне те шкултан кăларса ывăтрĕç. Кирукăн ашшĕ пусмапа сут тăватчĕ. Сахьен — сушкă пĕçерсе сутатчĕ. Кайран каялла илчĕç. Колхоза та кĕчĕç.

— Чĕрере пурĕпĕрех хура юн тапнă вĕсен. Вăрçăра пĕр чаçра пулма тиврĕ çав Кирукпа. Сутăнчăк! Ых-х! Пĕр ял çынни, намăс кăтартрĕ, ирсĕр.

— Сур вĕсем çине, Матĕрне,—йăпатать Çиркка пичче.— Хăйсем ĕçĕсемпе чыхăнчĕç-ха вĕсем.

Анне мана хальччен пĕрре те каласа паман Кирук пирки. Пĕлес килет.

— Иккĕмĕш хут килтĕм сан патна, Матĕрне,— тет Çиркка

пичче, хӑйӗн почта сумкинче тем чакаланса.— Пенси ҫеҫ мар, ҫыру та паратӑп сана.

— Хуларан ачасем ҫыраҫҫӗ пулӗ-ха.

— Темӗн. Украинӑранах килнӗ ку,— тет почтальон, ҫырӑвне тыттарса. Унтан вӑл укҫа ҫыххи парать.— Шутла, ҫӗр тенкӗ.

Анне Украинӑран килнӗ ҫырӑвне мана парать. Хӑй укҫашӑн алӑ пусать.

— Мӗн килте эсӗ пӗрмаях, Матӗрне, пусма ларнӑ пуслӑх чӑххи пек. Усӑ кур-ха ҫӗнӗ законпа. Шӑллу патне Находкӑна кайса кил. Ҫул укҫи пирӗнтен, вӑрҫӑ инваличӗсенчен, ҫур хак ҫеҫ илеҫҫӗ.

— Ҫитет,— тӳрре тухать анне.— Ҫамрӑк чух, вӑрҫӑ инкекӗ таҫта та ыватрӗ. Берлина та ҫитсе куртӑм.

Ман анне Берлина ҫитнӗ. Ку тӗрӗсех. «Чӗлхе» тытса таврӑннӑшӑн Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе наградӑланӑ ӑна. Медальсем ун миҫе! Орденӗ, медалӗсем гимнастерка ҫумӗнче тирӗнсе тӑраҫҫӗ. Аннене эпӗ ҫар тумӗпе пӗрре те курман. Темшӗн тӑхӑнмасть. Ҫакӑнса тӑрать унӑн ҫар тумӗ шкапра, музейри пек. Шинель те пур. Аппа ҫеҫ, каникула килсен, аннен ҫар тумне тӑхӑнса тӗкӗр умӗнче ҫиҫкӗнленет.

Ҫиркка пичче кайсан, эпир пӳрте кӗтӗмӗр. Хыпалансах кантӑк умне ларатпӑр ҫыру вулама. Анне конверт ӑшӗнчен хут листи кӑларчӗ. Чи малтан вӗҫне пӑхать хӑй.

— Э-э, ара куна шкул ачисем ҫыраҫҫӗ. Ме вула, Натуша хӗрӗм.

Эпӗ ҫырӑва алла илтӗм те вулама тытӑнтӑм:

«Хисеплӗ Матрена Павловна!

Чи малтанах йышӑнсамӑрччӗ Украина пионерӗсенчен хӗрӳллӗ салам!

Эпир, хӗрлӗ йӗрлевҫӗ-пионерсем, хамӑр ялӑн кунҫулне тӗпчеме ҫула тухрӑмӑр. Нумай асап-хур тӳснӗ иккен вӑл. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче икӗ ҫул нимӗҫ фашисчӗсен пусмӑрӗнче пурӑннӑ. 1944-мӗш ҫулта хамӑрӑн тӑван Совет Ҫарӗ кунта фашистсене ҫапса аркатнӑ. Пирӗн яла ирӗке кӑларнӑ ҫӗрте эсир те, Матрена Павловна, ытти совет воинӗсемпе пӗрле тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫни ҫинчен пӗлтӗмӗр.

Сирӗнтен ҫав вӑхӑтри асаилӗвӗрсене ярса пама ыйтатпӑр.

Украина, Изюм ялӗ, Валя Котик
ячӗпе хисепленекен пионер отрячӗ».

Вуласа пĕтертĕм çырăва. Анне ним те чĕнмест. Иртнисем аса килчĕç ĕнтĕ ăна. Вăрçă...

Çулла эпир «Зарница» — урăхла каласан, çарпа спорт вăййи — ирттертĕмĕр. Эпĕ разведчица пулнăччĕ. Вăрманта Германпа иксĕмĕр тăшман çарĕ ăçта пытанса ларнине шыратпăр. Сасартăк мана тыткăна илчĕç. Штабне илсе кайрĕç вĕт. Ах, кулянатăп. Штабĕнче тĕпчеççĕ мана. Ним каламастăп, çăвара уçмарăм шыв сыпнăн. Ку пĕтĕмпех вăйă. Анне вара чăн-чăн вăрçăра çапăçнă. Паллах, унта хăрушă, çав тери хăрушă.

— Анне, — тетĕп, — эсĕ хĕрарăм, çитменнине, санăн алри ача пулнă. Мĕншĕн вара сана вăрçа илсе кайнă?

— Йывăр кунсем килсе тухсан, Натуша, пурин те Тăван çĕршывăмăра хӳтĕлеме тăмалла. Фронта эпĕ хам ирĕкпе кайнă. Аппуна асламăшĕ пăхма килĕшрĕ.

Манăн питĕ нумай пĕлес килет. Ахаль чух эпĕ унăн вăрçă кунĕсем пирки сăмах тапратман. Тĕпчеме ăс çитереймен, тата аппапа пичче те хушмастчĕç анратма.

— Анне, — тетĕп татах, — сан аллунта пăшалччĕ-и е автоматчĕ-и?

— Ман çумра яланах револьверччĕ. Эпĕ малтанах шоферччĕ. Хĕçпăшал турттараттăм фронта. Унта та салтаксем пĕр профессипе çеç çырлахмастчĕç. Эпĕ радист ĕçне вĕрентĕм. Ку часах питĕ кирлĕ пулчĕ. Пĕррехинче хăрушă çапăçура радиста вĕлерчĕç. Командир ман пата чупса пычĕ те: «Хĕрĕм, — терĕ, — пулăш, тархасшăн. Пирĕн çыхăну çук». Лартăм вара радиоаппарат умне. Мĕн аманичченех тек уйрăлаймарăм радиоаппаратран.

Кухньăна апат пĕçерме кĕчĕ анне. Эпĕ сĕтел хушшине урок тума лартăм.

Хăвăрт иртеççĕ кунсем.

Вырсарникун анне украина ачисем патне çырнă çырăвне почтальона — Çиркка пиччене кайса пама хушрĕ.

— Мана вуласа тухма юрать-и?

— Вула, — ирĕк парать анне. Хăй тaçта тухса кайрĕ.

Эпĕ пĕчченех. Анне çырăвне вулатăп, вулатăп. Мĕнле паттăр хĕрарăм иккен ман анне! Ку вăрçăри пĕр çапăçу историйĕ анчах. Кун пеккисем мĕн чухлĕ пулнă-ши! Тĕлĕнмелле. Çук, эпĕ вăш-вашах почтальон патне тухса чупмарăм. Темшĕн ман анне çырăвне хамăн шкул тетрачĕ çине çырса илес килчĕ. Пĕлччĕр пурте ман анне мĕнле паттăр пулни çинчен. Тăшманпа вăл хаяр, килте вăл çепĕç, ачаш чунлă.

Акă анне çырăвĕ ман тетрадьре:

«Хаклă ачасем!

Эсир калама çук пархатарлă ĕçе тытăннă. Куншăн эсир тивĕçлипех мухтава тивĕçлĕ. Тĕпчĕр. Хаяр тăшмана хирĕç çапăçнă пĕр çын та манăça ан юлтăр. Совет воинĕсем чăннипех те — паттăрсем. Вĕсен пурнăçĕ сирĕншĕн, пионерсемшĕн,— пример.

Хальхи пек астăватăп Изюм таврашĕнчи çапăçăва. Фашист ку таврара хытах çирĕпленсе ларнă. Халăха икĕ çул хушши пусмăрта усранă. Сасартăк Совет Çарĕ нимĕçсене хĕссе пыма тытăнчĕ. Тăшман ункăра. Тăшман ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр ăшталанать, ункăран çăлăнасшăн. Хĕрӳ пычĕç çапăçусем. Тĕлĕнмелле: çулăн пĕр айккинче — шырланта — нимĕç салтакĕсем, çулăн тепĕр айккинче—совет салтакĕсем. Переççĕ кăна. Ялсем пĕрре тăшман аллине, тепре пирĕн алла куçаççĕ. Астăватăп, сирĕнпе кӳршĕллĕ вырнаçнă Павловка ялĕнчен ним те юлмарĕ. Унта-кунта çеç кăмака мăрйисем кăнтарса тăраççĕ.

Изюм ялне тарăн çырма икĕ пая уйăрать. Çырма пĕр енче тăшман, тепĕр енче — эпир. Хамăн радиоаппарата эпĕ кӳлĕ хĕрринчи çурта вырнаçтартăм. Штаб начальникĕ — Петров майор кĕчĕ те командирсемпе çыхăнтарма ыйтрĕ. «Эпĕ Пăрчăкан, эпĕ Пăрчăкан...» теме тытăнтăм. Унччен те пулмарĕ, танксем шатăртаттарса килни илтĕнсе кайрĕ. Пăхатпăр хайхискер кантăкран, курах кайрăмăр: чиркӳ айккипе, çăва енчен, фашистсен танкĕсем пирĕн паталла шăваççĕ, тупписенчен хăрушла переççĕ. Начальник пире хăвăртрах окопа ăсатрĕ. Машини хăйĕн хĕмленсех çунать. Çула пӳлчĕç. Петров майор кӳлĕ урлă ишсе каçрĕ. Шыв сивĕ, çуркунне-çке.

Командăсем янрарĕç. Пурте самант йĕркеленчĕç. Тăшмана тивĕçлипе кĕтсе илмелле. Пуçланчĕ вара ахăр самана. Çĕр кисренсе тăрать. Фашистсен темиçе танкĕ пынă çĕртен чăлханса ларчĕ. Анчах та вĕсен танкĕсем йышлă. Вĕсем пирĕн çинелле сĕмсĕрле куçса килеççĕ. Вара Капаев капитан ертсе пыракан танкистсем тăшман танкĕсене хирĕç тарана тухрĕç. Фашистсене ним юлмиччен аркатрăмăр. Изюм ялне çапла ирĕке кăлартăмăр.

Тата çакна çырмасăр хăварас килмест.

Пурччĕ пирĕн çамрăк кăна танкист. Миша тесе чĕнеттĕмĕр ăна. Çӳçĕ хăйĕн кăтра та йĕпхĕн хураччĕ. Куçĕ вара — хура çĕмĕрт. Яланах хаваслăччĕ. Нихăçан та эпĕ ăна кӳтсе çӳренине курман. Шӳтлет, култарать. Пушкин сăввисене калама

тытӑнатчӗ те вӑл, ӑна пурте каҫса кайса итлетчӗҫ. Пӗтрӗ Миша Изюм ялне ирӗке кӑларнӑ ҫӗрте. Ҫапӑҫӑвӗ хӑрушла пулчӗ-ҫке. Танк ӑшӗнчех ҫунса кайрӗ. Мӗн тери ҫынсем пӗтрӗҫ. Тӑприсем ҫӑмӑл пулччӑр вӗсен!

Тата ирсӗр этем пирки те пӗлтерем. Ҫырас килмест ун ҫинчен ман. Анчах, ачасем, пӗлмелле сирӗн, сыхланмалла ун пек сутӑнчӑксенчен.

Пурччӗ пирӗн повар. Пар лашапа апат турттаратчӗ. Ахӑр саманара мӗн турӗ тетӗр пулӗ ҫав хӑравҫӑ чунлӑскер? Пар лашапах хӑй ирӗкӗпе нимӗҫсем енне куҫнӑ. Ҫитменнине, вӑл пирӗн ял этемми. Ячӗ ун — Кирук. Пӗтмен вӗт-ха вӗсен хура юнлӑ йӑхӗ. Ылхан, ылхан ӳктӗр вӗсен пуҫӗсем ҫине.

Ҫапла, ҫӗнтерӳ ҫӑмӑллӑн килмен. Хаяр ҫапӑҫура кӗрешсе илнӗ ҫӗнтерӗве ӗмӗр-ӗмӗр ҫирӗп алӑра тытар.

Сывӑ та телейлӗ пулӑр. Чӑваш ҫӗршывӗнчен хӗрӳллӗ салам яратӑп!

Сире чунтан юратакан — М. П. Кудряшова».

Утатӑп почтальон патне. Пуҫра тем тӗрлӗ шухӑш явӑнать. Аллӑмра—анне ҫырӑвӗ. Акӑ мӗн: ыран эпӗ ӑна хамӑр отрядри пионерсене вуласа парӑп. Ялта анне пек вӑрҫӑра пулнисем татах пур. Йӗркелес вӗсем ҫинчен асӑну альбомӗ. Ӳлӗмрен шкула ҫӳрекен кашни ача вулатӑр та пӗлтӗр, хӑй те пурнӑҫра пултӑр паттӑр!



## ЛЕНУК

*Калав*

Уçă сасă сывлăша çурса ячĕ:

— Ленук! Ле-н-у-ук!

Çак сасса илтсе картишне кам чупса тухасса ку икĕ хутлă пысăках мар çуртра пурăнакансем чӳречерен пăхса илмесĕрех пурте пĕлеççĕ. Кашни куçĕ умне йĕтĕн çӳçлĕ, ырханкка хĕрача Ленук тухса тăрать. Çуркуннехи хĕвел ăшшипе чĕрĕлнĕ, илемлĕ сăрăсемпе тĕрленнĕ вĕл-вĕл лĕпĕшех вăл. Çийĕнче унăн аркине хăю тыттарнă сап-сарă е хĕп-хĕрлĕ кĕпе. Куçĕсем сенкер, чăр-чăр пăхаççĕ. Çăмăл шăмшаклă, алли-ури çĕре лекмест. Кирек хăçан та хаваслă. Кăмăлĕ — сар çу. Чĕлхи — чĕвĕлти чĕкеç. Паллакана вăл аякранах йăл кулса кĕтсе илет те ăшшăн саламлать:

— Сывлăх пултăр!

Пĕр-пĕр карчăк магазинтан йывăр сумка йатса килнине курсан, тӳрех чупса пырать:

— Кӳр, пулăшам.

Çапла. Ку çуртра Ленука пĕлмен çын çук. Ара вăл пурин куçĕ умĕнчех ӳсрĕ-çке. Кăçал унăн, кĕркунне çитсен, шкула иккĕмĕш класа вĕренме каймалла.

Паян янăравлă сасса илтнисем чӳречерен пăхмасăр тӳсеймерĕç. Кашнинех пĕлес килчĕ: тăнă-ши хĕрача ура çине ĕнерхи пăтăрмах хыççăн? Тухĕ-ши вăл тантăшĕ патне?

Пăхрĕç, пăхрĕç чÿречерен, анчах кĕтсе илеймерĕç. Тухмарĕ Ленук тус-тантăшĕ патне. Эппин, вăл халĕ те чĕтресе выртать. Ăçтан тÿсĕн, ĕнер ăна вăрра хушса намăслантарнă. Милицие тыттарса ярассипе сехрине хăпартнă, пĕчĕк чĕрине калама çук йывăр амантнă. Кам? Мĕнле çын вăл? Палласçĕ-и ăна ку çуртрисем? Палласçĕ, çак çуртрах пурăнать вăл. Эх, Ленук, Ленук, çав çынна тĕл пулсан, мĕншĕн йăл кулнă-ши эсĕ? Мĕншĕн пĕлеймен-ши Çынак инкен ăшчикне ку таранччен?

Янăравлă сасли вăл Кулине. Тахçантанпах юлташлă пурăнать Ленукпа. Телевизор та пур вĕсен савăнмалăх. Ĕнер те вăл тусне тĕлĕнмелле фильм курма чĕннĕччĕ. Ăçтан ан пăхăн, ячĕ кулăшла — «Тамбу-ламбу».

Кулинесем патне çуртăн тепĕр вĕçĕнчи крыльцаран кĕмелле. Акă вуннăмĕш хваттер. Унта икĕ çемье пурăнать. Кĕрсенех сулахай енчи Çынак инке пÿлĕмĕ, вĕсен алăкĕ умĕпе иртсенех — Кулинесен пÿлĕмĕ.

Çынак инке ниçта та ĕçлемест. Тĕп ĕçĕ унăн урамра е паркри такăр сукмакпа утса çÿресси тейĕн. Хирĕç пулакан этеммисем темшĕн ăна çаврăнса тăрсах пăхаççĕ. Те тумĕ килĕшет вĕсене? Мăкăнь чечекĕ пекех ĕнтĕ. Кĕп-кĕрен кĕпе, сипсимĕс чăлха. Каç кÿлĕм çурăм çине шурă пальто уртса ярать. Хăлха унки те, пушмакки те йăлтăркка шурă. Чăлхи кăна — йĕпхĕн хура. Сăрланă хĕрлĕ çÿçне тем тĕрлĕ те турать. Çынак инкен упăшкине ачасем Хриссан пичче тесе чĕнеççĕ. Вăл темле управленинче ĕçлет. Мĕн пур пушă вăхăтне хула тулашĕнчи пахчинче ирттерет. Унта вĕсен дача та пур, теççĕ. Мĕнле кăна çимĕç йăтмасть пулĕ вăл килне: редиска, темиçе тĕрлĕ çырла, помидор, хăяр, панулми, сухан, çарăк, чĕкĕнтĕр тата темтепĕр. Унтан пасара ăсатать. Мĕн чухлĕ варени пĕçереççĕ тата! Сарайĕнчи нÿхрепе вуншар банка антараççĕ. Хыткукар мар Хриссан пичче. Ачасемпе вылять-кулать, пуç пÿрне пек çырла тыттарать.

— Кама хăналас ара? Хăйсен ача-пăча çук,— тет килхушшинчи сак çине пухăнса ларнă хĕрарăмсенчен пĕри.

— Эй, çырлах, хăйне каласа ан парăр та,—шăппăн сăмах хушать тепри, унталла-унталла пăхкаласа,— Хриссанăн таçта хĕрачапа ывăл пур теççĕ.

Ку йышши сăмах-юмаха ачасем ăнлансах çитерейменççĕ: хĕрачипе ывăлĕ пулсан, Хриссан пичче вĕсене мĕншĕн киле илсе килмест-ха? Ыйтас кинемейсенчен — юрамасть. «Нумай пĕлсен, час ватăлăн»,— тесе хăтăрса çеç пăрахаççĕ.

Кулине ӗнер тус тантӑшне хӑйсем патне илсе кӗнӗ чух Ҫынак инкен алӑкӗ уҫах тӑратчӗ. Пӳлӗмре кушак ҫурисем макӑрни илтӗнетчӗ: «мяук, мяук!» Епле иртсе кайӑн? Ленук алӑк урати ҫине яштах хӑпарса тӑчӗ те:

— Ҫынак инке,— терӗ,— сирӗн кушак ҫурисем сӗт ӗҫеҫҫӗ-и? Курма юрать-и вӗсене?

— Пӑхах, пӑх теттемсене.

Хӗрача урата урлӑ каҫма хӑяймарӗ. Пуҫне ун-кун пӑркаларӗ те кушак ҫурисене часах шыраса тупрӗ. Ав, диван ҫинче йӑраланаҫҫӗ. Вӗсем тавра тӗрленӗ пӗчӗк ҫытарсем хурса тухнӑ — урлӑ каҫаймаҫҫӗ. Инкен«теттисемпе» Ленука вылям май килмерӗ, мӗншӗн тесен Кулине хӑйсен телевизорне ӗҫе янӑ та тусневаскатать ҫеҫ. Вӑл пӗлсех васкатнӑ-мӗн. Вырнаҫса ларнӑ-ларманах, телефильм пуҫланчӗ те. Кинора чи малтан акӑ мӗн кӑтартрӗҫ: будкӑран пӗр кӗрнеклӗ ҫын телефонпа калаҫса тухрӗ. Хӑй хаваслӑ. «Тамбу-ламбу» тесе юрлать. Ҫак ҫын хыҫҫӑн будкӑна юлташӗ патне шӑнкӑравлама арҫын ача кӗрет. Курах каять: унта блокнот выртать. Страницисем ҫинче темле-темле цифрӑсем. Арҫын ача хыпӑнса ӳкет. Тем тесен те, ку питӗ кирлӗ блокнот. Вирхӗнсе чупса тухать будкӑран, анчах леш ҫынӗ куҫран ҫухалма та ӗлкӗрнӗ. Хула пысӑк, халӑх варкӑшать кӑна. Хуса ҫит, туп ӗнтӗ ӑна. Пуҫланать вара чӑн-чӑн ҫавраҫил. Ҫухатнӑ япалана хуҫине тупса пама ҫӑмӑл мар иккен. Арҫын ачапа юлташӗ, ҫав Тамбу-ламбуна шыраса, мӗн кӑна тумаҫҫӗ-ши! Ленукпа Кулине те, хӑйсем ҫинчен манса кайсах, кинори ачасен пурнӑҫӗпе пурӑнма тытӑнаҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗ ӑнманшӑн кулянаҫҫӗ, мӗн те пулин лайӑххи килсе тухсан, савӑнаҫҫӗ.

Телефильм пӑхнӑ чух Ленукӑн амӑшӗ кӗрсе тухса кайрӗ. Тем каларӗ вӑл. Сӑмахӗ пӗр хӑлхаран кӗчӗ, тепринчен тухрӗ. Ара Тамбу-ламбу халь-халь самолетпа вӗҫсе каймалла вӗт. Ачасем ун йӗрӗ ҫине ӳкнӗ, ӗлкӗрейӗҫ-ши? Блокнотне ҫитсе парайӗҫ-ши? Ҫакӑн пек хыпӑнса ларнӑ вӑхӑтра пуҫра урӑххи тытӑнса юлать-и вара?

Телефильм курса пӗтернӗ хыҫҫӑн, кайран тӑкӑрлӑкра лапталла вылянӑ чух, хырӑмӗ выҫса килсен тин асне килчӗ Ленука амӑшӗ. «Кухньӑри сӗтел ҫине турилккепе вӗри икерчӗ лартса хӑваратӑп, хам командировкӑна каятӑп, Кулинепе пӗрле ҫийӗр»,—тесе хӑварчӗ иккен вӑл. Ҫапла ҫав, ҫапла— халь аса илчӗ ӗнтӗ Ленук.

— Кулине, атя-ха сирӗн пата икерчӗ ҫиме,— чӗнчӗ вӑл

тус тантăшне.— Унта анне икерчĕ лартса хăварнă пулмалла — иксĕмĕре пĕрле çиме хушрĕ.

Эх, шеремет хĕрачи, амăшĕ «пĕрле çийĕр» тенипе, икерчине вăл Кулинесем патне лартса хăварнă тесех шутланă çав — инкекĕ вара кайран пĕтĕмпех çавăнтан сиксе тухрĕ.

Кулине кĕмест. Унăн мечĕкне çапса, хăвăртрах чупмалла. Вăйăра çĕнтересшĕн тăрăшать мар-и?

Ленук, хырăмĕ пит выçнипе, пĕчченех вĕçтерчĕ. Мĕнех вара? Çăра уççине Кулине ăçта пытарнине пĕлет вăл. Тен, килне Çынак инке те таврăннă? Анчах, алăк умне çитсенех, хĕрача Кулинесен хваттерĕнче никам та çуккине пĕлчĕ. Çăра уççи те çавăнтах — пĕрене çурăкĕнчех. Уçса кĕчĕ вара Ленук çын хваттерне. Вăл тӳрех кухньăри Кулинесен сĕтелĕ патне пырса тăчĕ. Пăхкаларĕ, анчах мĕн амакĕ? Икерчĕ хунă турилкке мар, пушши те çук. Сĕтел сунтăхне лартса хăварманши? Уçса пăхрĕ. Сĕтел сунтăхĕ пуш-пушах. Тен, йăнăшпа Çынак инке сĕтелне лартса хăварнă? Пăхас. Уй-уй, сĕтел сунтăхĕ арча пекех пысăк. Мĕн кăна çук-ши кунта! Мĕн чухлĕ ĕçме-çиме! Анчах та икерчĕллĕ турилкке курăнмасть. Тен, савăтсем хыçне шутарса лартнă? Хĕрача вара пĕшкĕнсе ларчĕ те, сылтăм аллине шалалла чиксе, хыпашлама тытăнчĕ. Акă, пӳрне вĕçĕсем кĕсел евĕр çемçе япалана перĕнчĕç. Мĕн япала-ши? Аллине кăларса, пӳрнине чĕлхепе çулласа тутанса пăхасшăнччĕ. Шăп çак вăхăтра Ленукăн çурăмĕ хыçĕнче аçа-çиçĕм çапнă евĕр тахăшĕ кăшкăрса ячĕ:

— Хурах! Вăрă! Вăрă тытрăм!

Унччен те пулмарĕ Ленук çӳçĕнчен такам питĕ вирлĕ ярса тытнине туйрĕ. Вăл хăранипе шартах сикрĕ. Пăхать хайхискер — кăшкăраканни Çынак инке пулах кайрĕ. Сасси урмăшса тухать. Пичĕ каснă-лартнă арăсланăнни пек. Сурчăкĕ енчен енне сирпĕнет.

— Хриссан, кил хăвăртрах! Вăрă вĕçерĕнсе тарать!— кăшкăрать татах Çынак инке.— Пӳрнисем варениллĕ. Виктори çырлинчен пĕçернине хапсăннă. Явăл ачи! Хĕрача пуçĕпе вăрра ярăннă!

Хриссан пичче вăрт-варт утса пычĕ.

— Ай-яй, хĕрача. Çын япалине тивме юрать-и вара? Кам сана варени вăрлама хушрĕ? Аннӳ-и?

Ленук ним чĕнме те пĕлмест, чĕлхине çăтса янă, тейĕн.

— Милицие тыттарса ярас!— чĕлхипе касать Çынак инке.— Унта калаçтараççĕ. Лартăр пĕр вунпилĕк талăк, тăн кĕртĕç. Ăспа таврăнĕ киле.

Милицине асӑнсан, Ленук ӗсӗклесе йӗрсе ячӗ.

— Эпир ырӑ ҫынсем, арӑм. Малтанхи хутах милици чӗнсе айкашмӑпӑр,— сӗнчӗ Хриссан пичче. Хӑй ҫавӑнтах арӑмне тем пӑшӑлтатрӗ. Сӑмахӗ илтӗнмест. Вара вӑл хупӑнса тӑракан кухня алӑкӗ ҫумне кайса тайӑнчӗ.

Куҫҫулӗ витӗр пӑхать хӗрача хӳтӗлӗх шыраса Хриссан пичче ҫине. Анчах ӑна паллаймӑн. Картишӗнче ачасемпе вылякан, вӗсене ҫырлапа сӑйлакан, уҫҫӑн пӑхакан ҫын мар — пачах ют этем. Ленука ҫав тери хӑрушӑ туйӑнса кайрӗ, вӑл тӑр-р, тӑр-р чӗтреме тытӑнчӗ. Вырӑнтан тапранма вӑйӗ ҫитмест, ӳт-пӳ урайне тымар янӑ, тейӗн.

Куҫҫулӗпе йӗпеннӗ пит-куҫне сӑтӑркаласа тӑнипе Ленук сӗтел ҫине шурӑ хут листипе кӑранташ хӑш вӑхӑтра тухса выртнине те асӑрхамарӗ. Ҫынак инке, ав, тӑрӑшсах тем ҫырать. Нумай мар, темиҫе сӑмах ҫеҫ йӗрлерӗ. Часах ҫырма чарӑнчӗ те, чӗнчӗ «айӑпланакана»:

— Кил-ха, алӑ пус ҫак хут ҫине.

Мӗншӗн алӑ пусмалла? Мӗн тесе ҫырнӑ унта? Шкулта пӗр ҫул кӑна вӗреннӗ ача ваштах вулама, пуҫ тавра шухӑшлама ӑс ҫитерет-и? Паллах, ҫук. Аслисем мӗн хушнине тумалла. Ҫапла кирлӗ пулӗ. Ленук илчӗ те кӑранташ вӗҫне чӗлхепе йӗпетрӗ, вара хушаматри кашни саспаллине ҫав тери тӑрӑшса ҫырчӗ.

— Каях ӗнтӗ,— терӗ Ҫынак инке хӗрачана куларах. Унтан тӑрӑхланӑ сасӑпа лӑпкӑн ҫапла каларӗ:— Ӳлӗм япала ҫухалсан-тусан, кайӑкӗ халех серепене ҫакланнӑ.

Тухса кайрӗ Ленук. Ҫӑварта йӳҫӗ, кӑмӑл пӑтранать. Ура ураран иртмест. Картишӗнче сак ҫинче ларакан хӗрарӑмсенчен пӗри, Ленуксемпе пӗр хваттертех пурӑнакан ватӑ хӗрарӑм Гурьевна, ҫакна самант асӑрхарӗ.

— Хӗрӗм,— чӗнчӗ вӑл йӑвашшӑн,— чирлемен пулӗ те эс?

Ҫынак инке те килне тӑрса юлман-мӗн, картишӗнче сӑмахюмах пуласса сиссе пуль, хыҫранах тухнӑ. Ҫавӑнпа та, Ленук ҫӑварне уҫиччен, Ҫынак инке, пулеметран пенӗ пек, шатӑртаттарма та ӗлкӗрчӗ:

— Вӑрӑпа тытӑнсан, чӗлхе ҫапла ҫухалать вӑл, ҫын куҫӗнчен пӑхаймасть, ав.

Ку сӑмахсем кама тивнине Гурьевна тӳрех ӑнланчӗ. Унӑн самант юн вӗресе хӑпарчӗ. Ҫиллес сасӑпа Ҫынака пат татса хучӗ:

— Кирлӗ мара пуплетӗн.

— Ӗненместӗн пулсан, хӑй алӑ пусса панине вула!— хӗре-

месленсе кайсах хирӗҫлерӗ Ҫынак инке, хут татӑкне ҫӳлелле ҫӗклесе. Гурьевна алне ҫеҫ сӗлтрӗ. Вӑл ҫеҫ те мар, ыттисем те Ҫынак инкен хут татӑкне тытса пӑхма кӑмӑл тумарӗҫ, ун ҫине пӗри те тепри сиввӗн кӑна мӗл те мӗл пӑхса илчӗҫ.

Хӑйсем пуранакан крыльца умне ҫитсен, Ленук сулӑна-сулӑна кайрӗ, вара ҫӗр ҫине тӗшӗрӗлсе анчӗ.

— Ай турах!— терӗ тахӑшӗ,— мӗн тунӑ вӑл хӗрачана?

Шикленчӗ пулас хӗрарӑмсенчен Ҫынак инке, ним курманилтмен пек йӑш! шурӗ килне. Гурьевна хӗрача патне ыткӑнчӗ. Тӑма пулӑшрӗ ӑна. Ҫук, ним ҫинчен те ыйтса тӗпчемерӗ. Кухньӑна илсе кӗрсен тин:

— Ҫӑвӑн-ха,— терӗ, кӑмкана витререн шыв тултарса.

Ленук ҫӑвӑнкаларӗ. Сивӗ шыв ӑна ҫапах та пулӑшрӗ. Хӗрачана тепӗр самантран ерипен хӗрлӗ сӑн та ҫапа пуҫларӗ.

— Хырӑму та паян хыр тӑрне кайрӗ пулӗ. Апатлан-ха,— сӗнчӗ Гурьевна.

Ленук сӗтел патне пычӗ. Пукан ҫине пырса ларсан, тӗлӗнсех кайрӗ: икерчи килти сӗтел ҫинчех иккен!

— Мана халь текех никам та ӗненмест ӗнтӗ,— кулянчӗ хӗрача. Унӑн пичӗ тӑрӑх вара вӗри куҫҫулӗ юхса анчӗ. Каллех ҫанҫурӑмӗ сӑр-сӑрлатма пуҫларӗ.

— Лӑплан. Ӑҫтиҫук япалашӑн мӗн-ма ҫав териех хуҫӑлас?— йӑпатрӗ ӑна Гурьевна. Унтан темле эмел ӗҫтерчӗ те ҫаплах чӗтрекен хӗрачана вырӑн ҫине вырттарчӗ.

Миҫе кун чирлесе выртӗ-ши Ленук? Аманнӑ черчен таса чӗре часах сывалаймӗ ҫав.



## ВОДОЛАЗ

*Калав*

Кӳл хӗрринчи тӑвата чӳречеллӗ ҫуртра пӗр ҫемье пурӑнать: ашшӗпе амӑшӗ тата икӗ ывӑлӗ. Аслин ячӗ — Кирук. Вӑл ҫартан таврӑнни нумай пулмасть-ха, Хура тинӗс Ҫар Флотӗн морякӗ пулнӑ. Кӗҫӗннине Шелюк тесе чӗнеҫҫӗ. Шкул ачи ҫех-ха вӑл. Ял ҫыннисем ҫак килйыша хисеплеҫҫӗ: ашшӗ-амӑшне — ӗҫчен пулнӑран, ывӑлӗсене — сӑпайлӑхӗшӗн.

Пиччӗшпе шӑллӗ пӗр-пӗрне ҫав тери юратаҫҫӗ. Туслӑ. Вӑхӑт кӑнтӑрла енне сулӑнсан, Кирук чӳрече умӗнчен каймасть, шав кӗтет шӑллӗ шкултан таврӑнасса. Пӗрле вӗсем йӗлтӗрпе ярӑнма каяҫҫӗ.

Кирука ашшӗ-амӑшӗ ӗҫе яма васкамарӗҫ. «Салтакран таврӑннӑ хыҫҫӑн пӗрер уйӑх кантӑр-ха» — пуплерӗҫ вӗсем кӳршӗсемпе.

Анчах та ҫамрӑкки ӗҫсӗр тунсӑхларӗ. Часах вӑл ӗҫе кайса кӗчӗ.

— Шыв айӗн ҫӳреме водолаза кӗтӗм,— пӗлтерчӗ вӑл килтисене.

Амăшĕ хыпăнса ӳкрĕ. Ывăлĕн ĕçĕ чунтан пăшăрхантарса пăрахрĕ ăна.

— Ай, тамаша,— терĕ вăл, ик пĕççине шарт çапса.— Сан валли колхозра ĕç тупăнмастчĕ-и? Ферма таврашĕнче мĕн чухлĕ механизатор кирлĕ те...

— Ан ятла-ха, амăшĕ,—сăмах хушрĕ ашшĕ мăшăрне лăплантарас шутпа.— Мĕнле ĕç килĕшет, çавăнпа çыхăнтăр çын. Вара пурнăçĕ ăнăçлă пулĕ.

Шелюк ним те шарламарĕ. Ахалех паллă, вăл пиччĕш майлă.

Кашăк-тирĕк килте текех шакăртатмарĕ. Çӳрерĕ ĕçе Кирук. Кашни ирех икĕ тăван хапхаран пĕрле тухаççĕ. Кĕçĕннин çулĕ юнашар ялти шкулалла, аслин — хуланалла выртать.

Кунсем майĕпен иртсе пычĕç. Пĕррехинче, яланхиллех ирхине çула тухсан, урамра асли кĕçĕннине акă мĕн каларĕ:

— Паян эпĕ, Шелюк, Атăл тĕпне анатăп. Шкултан таврăнсан пыр. Кĕтетĕп.

Шелюк калама çук савăнчĕ. Шкулта вăл кун пирки пĕтĕм юлташĕсене хыпарларĕ. Курма пырас текенсем вара тупăнчĕç темиçен. Хула аякра мар, юнашарах. Йĕлтĕрпе саманг çитен. Урокĕсем те паян ытти кунхисенчен сахал.

Юлашки шăнкăрав хыççăн пĕри те киле каймарĕ. Чăнчăн водолаза камăн курмасăр юлас килтĕр? Водолазĕ тата кам? Юлташ пиччĕшĕ.

Ачасем, Шупашкара çитсен, тӳрех Атăл хĕрне кайрĕç. Атăл талккăшпех пăрпа витĕннĕ. Ун урлă унталла та кунталла çынсем йăрккаççĕ, машинăсем кумаççĕ.

Çурçĕр енчен çил вĕрет кассăн-кассăн. Сивĕ сăмсана вĕтелет.

Авă — шыв станцийĕн çурчĕ, çыран хĕрринчех. Шелюк водолазсем кунта иккенне пĕлет, пиччĕш каланă ăна. Пĕрремĕш хӳт пулин те, вăл хăйне хăюллăн тыткалать. Вăтанса тăрсан юлташсенчен аван мар.

Шелюк алăка уçсан ачасем ушкăнпах пӳрте кĕрсе тăчĕç.

— У-ух! Пулас водолазсем çитрĕç!— терĕ хавас сасăпа кунта ларакансенчен пĕри.

Часах Шелюк хăйĕн пиччĕшне асăрхарĕ. Ун çийĕнче ăшă свитер. Тĕл пулсан, куçĕсем йăл çиçсе илчĕç иккĕшĕн те.

— Пулăшакансем çитрĕç, халĕ ĕнтĕ пуçтарăнма вăхăт,— шӳтлерĕ кулкаласа Кирук, водолазсене хăйĕн шăллĕпе паллаштарнă май.

Пӗчӗк пӳлӗмрен комбинезон евӗр япала илсе тухрӗ мӑйӑхлӑ ҫын.

— Скафандр ку,— ӑнлантарчӗ Шелюк юлташӗсене.

— Кирук, сунасламастӑн-и эсӗ?— ыйтрӗ сӗтел хушшинче ларакан хӗрлӗ питлӗ ҫын.

«Начальник»,— шутларӗҫ ачасем ун пирки.

— Ҫук,— терӗ лешӗ.

— Сунасласан, шыв тӗпне антармастпӑр.

— Сывах, сывах. Хама лайӑх туятӑп.

Ҫапла пулчӗ Кирукӑн татӑклӑ сӑмахӗ. Вӑл сак ҫине ларчӗ те урисене скафандр ӑшне чикрӗ, вара ура ҫине тӑчӗ. Малалла пӗччен тӑхӑнма май ҫук-мӗн ӑна. Юлташӗсен пулӑшмалла. Темиҫен пӗр харӑс тытса скафандрне сарса ҫӳлелле ҫӗклеҫҫӗ. Аранах тӑхӑнтарчӗҫ. Резина кӗпе — скафандр шӑп мӑй таран.

Пӗчӗк пӳлӗмренех мӑйӑхли пушмак кӑларса лартрӗ.

— Пар пиччӳне,—сӗнчӗ вӑл Шелюка.

Ача йӑпӑр-япӑр ярса тытрӗ, анчах ҫӗклеме пикенсе чутах чикеленсе ӳкмерӗ.

— Ай-ай! Питӗ йывӑр-ҫке,— персе ячӗ вӑл.

Водолазсем ахӑлтатсах кулчӗҫ вара.

— Тимӗр пушмак-ҫке ку,— текелерӗ Шелюкименсе.

Юрать-ха, пӗр пушмакне юлташӗ ярса илчӗ, унсӑрӑн, тен, татах намӑс курма тиветчӗ-и.

— Кашни пушмакӗ вуник килограмм,—пӗлтерчӗ мӑйӑхли.—Ҫавӑнпа йывӑр. Икӗ пушмакне те пӗр харӑс йӑтма нумайрах турник ҫинче пӑлтӑртатмалла.

Пушмак тӑхӑнсан, Кирук ҫине умлӑ-хыҫлӑ тимӗр пашалусем ҫакрӗҫ. Шӑллӗ шанчӑксӑррӑн тытса пӑхрӗ тимӗр пашалӑва. Ҫӗклемелле мар йывӑр.

— Мӗн тӑватӑр эсир? Капла вӑл путать вӗт!— ҫиллессӗн каларӗ Шелюк.

Каллех кулаҫҫӗ водолазсем.

— Путин!

— Хӗрхенет пиччӗшне!

— Ах, шӑпӑрлан!— шавларӗҫ водолазсем.

Сӗтел хушшинче лараканни ача хутне кӗрет:

— Эсӗ, ачам, ан пӑшӑрхан. Шыв тӗпӗнче тӗрӗс-тӗкел утса ҫӳреме ҫакаҫҫӗ те ӗнтӗ ҫак йывӑр япаласене. Унсӑрӑн шыв водолаза ҫиеле тапса кӑларать. Шыв ҫийӗнче мачча евӗр — пӑр. Тимӗр пашалу чӑнах та йывӑр. Кашниех вунсакӑр килограмм.

— Иккĕшĕ икĕ пăт ытла,— тĕлĕнчĕ Шелюкпа юнашар тăракан каçăр сăмсаллă ача, куçне мĕлт-мĕлт хупкаласа.

— Çапла, ачам, çапла,— текелерĕ леш.

Пурте пӳртрен тухрĕç. Пусма тăрăх Атăл çине анаççĕ. Кирук шыв айне анмалли тумтирпе аран уткалать. Çанталăкĕ сивĕ. Ура айĕнчи юр кăчăртатса çеç тăрать.

Авă вак куçĕ. Хулăн пăра мĕн сарлакăш касса уçнă! Урлăш тăршшĕ пĕр-ик хăлаç ытла. Çывăхрах темле аппарат.

Кирука юлташĕсем сарă йĕс калпак тăхăнтартрĕç. Вăл çап-çаврака. Тыткаланинченех паллă, йывăрскер пулма кирлĕ. Пит енче кантăкли. Чӳрече лартса панă пăхма. Калпакне скафандр çумне пăраласах вырнаçтарчĕç. Кунпа çитмерĕ-ха. Татах темĕскерсем çакрĕç, аппаратран тăсăлса килекен резина пăрăхпа çыхăнтарчĕç. Атăл тĕпĕнче çӳренĕ чух телефонпа калаçма та пултарать. Кирук ачасем тăракан енне пăхса шăллĕне куç хĕсрĕ. «Ну, эпĕ кайрăм!» — терĕ ĕнтĕ.

Вак куçĕнчен тимĕр пусма кăнтарса тăрать. Çавăн патне утса пычĕ те Кирук шыва анма. Çынсем нумайăн пухăнчĕç вак патне. Атăл урлă каçакансем пулас, хĕрсем те, яшсем те пур. Пĕри те чĕнмест, кашниех сывламасăр сăнать. Шăплăха икĕ хĕр сасси хускатрĕ.

— Ы-х-х! Сивĕ!

— Чунăм çӳçенет, пăр айĕнчен палкаса тухакан шыва курсан.

Шелюк пиччĕшĕ çинчен куç илмест. Лешне пилĕк таран шыв илнĕ те. Анать, анать майĕпен. Шыв кăкăра, унтан хулпуççисене хуплать. Юлашкинчен пуç тӳпи те курăнми пулчĕ. Вакка пысăк чул пăрахнă тейĕн, шыв пакăртатса явăнать.

Пăр çине тăрса юлнă юлташĕсенчен пĕри Кирук хыççăн çаплах аппаратран тăсăлса килекен резина пăрăха майласа шыва ăсатать. Аппаратăн кустăрмисене иккĕн çавăрса тăраççĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку?—ыйтрĕ вĕсенчен Шелюк.

— Шыври водолаза резина тăрăх сывлăш уçласа ăсататпăр,— терĕ аппарат кустăрмине çавăраканнисенчен лутраххи.

Леш мăйăхлă çынни водолазпа телефон тăрăх калаçма пуçларĕ:

— Кирук, мĕнле туян хăвна? Чиперех утса çӳретĕн, эппин, Атăл тĕпĕнче. Аван. Саламлатăп!

Шыврин сасси ыттисем патне çитмест. Ăна телефонпа калаçаканни çеç илтет, мĕншĕн тесен наушникне ун çĕлĕкĕ ăш-

нех майлаштарса лартнӑ. Анчах пурте ӑнланчӗҫ: водолазӑн ӗҫсем ӑнӑҫлӑ.

Нумай-ши, сахал-ши вӑхӑт иртрӗ? Хумхануллӑ самантра ун пирки шухӑшламастӑн. Вак куҫӗнче ним те курӑнмасть, шыв ҫийӗ тикӗс. Ҫынсем водолазпа телефон тӑрӑх ҫыхӑну тытакан тавра кӗпӗрленчӗҫ.

— Кирук, мӗнле эсӗ унта? Мӗн, мӗн? Мӗн тупрӑм тен? Ну! Ха-ха-ха. Эппин хӑпаратӑн?

Калаҫӑва итлекенсем каллех вак куҫӗ патне ыткӑнчӗҫ. Водолаз Атӑл тӗпӗнче мӗн тупнине пӗлесшӗн мар-и ара. Телефонпа калаҫаканӗ ахӑлтатрӗ-ҫке. Мӗн-ши ҫав териех кулӑшласкер?

Пӑхаҫҫӗ пурте тӗмсӗлсе. Вӑл хӑпарасса тӳсейми кӗтеҫҫӗ. Акӑ паҫӑрхиллех шыв пакӑртатма тытӑнчӗ. Унччен те пулмарӗ водолазӑн пуҫӗ курӑнса кайрӗ.

— Хӑпарать!— кӑшкӑрса ячӗҫ ҫынсем.

Ҫӗкленнӗҫемӗн водолаз тӑрӑх шыв юхса юлать. Ай! Пӑх та кур, пӑр ҫине вӑл шак тулли рак кӑларса пӑрахрӗ. Сетка шӑтӑкӗсенчен хаччисем е уссисем тухнӑ. Халӑх шавлать, кулать:

— Мӗн амакӗ?

— Раксем!

— Тупнӑ ӑшӑ хуран.

— Шака лексен тухаймӑн!

— Мӗнле тытрӑн кун чухлӗ рак?

Часах ӑнланаҫҫӗ. Паллах, раксене водолаз тытман. Ҫулла пӗри-пӗри Атӑла пулӑ тытма шак лартнӑ. Теплерен вӑл, вӗҫерӗнсе, Атӑл тӗпне анса выртнӑ. Айван раксем ӑна-кӑна пӗлмен, шака кӗнӗ те кӗнӗ.

— Ракӗсем чӗрӗ!— терӗ Шелюк.— Йӑшӑлтатаҫҫӗ.

— Хӑшӗсем хускалма пӑрахрӗҫ,— асӑрхаттарать арҫын ача, куктӗррилли.— Шӑнчӗҫ.

Кӑвак пальто тӑхӑннӑ, тутӑр ҫыхнӑ хӗрарӑм пӗр ракне пама ыйтрӗ.

— Манӑн Павлик ятлӑ ывӑлӑм пур, ача садне ҫӳрекенскер. Вӑл халиччен те чӗрӗ рак курман. Питӗ кӑтартас килет,— тет вӑл.

Чармарӗҫ. Илтӗр. Ыттисем те илсе кӗсйисене чикрӗҫ. Пурпӗрех шакри рак ним чухлӗ те иксӗлмерӗ.

Шыва тек анмарӗ водолаз. Пӳрте кӗрсен ӑна хывӑнтарчӗҫ. Кӑмака хутса ярсан, плита ҫине витрепе рак пӗҫерме лартрӗҫ.

Кирук рак пиçессе кĕтмерĕ, ачасемпе киле тухса утрĕ.

— Шывра питĕ хăрушă пулĕ, Кирук пичче,—терĕ куктĕррилли.

— Мĕншĕн апла шутлатăн?—ыйтрĕ водолаз.— Атăлта крокодилсем ĕрчемеççĕ-çке. Никам та çыртмасть, акула çук.

— Çаплине çапла та-ха,— текелерĕ лешĕ.

Ачасен пĕлмелли питĕ нумай.

— Шывĕ сивĕ, шăнтăр пулĕ,— хушса хурать тепĕр ачи.— Эсир шывра курăнми пулсан, юриех вака пўрне чиксе пăхрăм. Ай, вĕтелет!

Тантăш сăмаххинчен пурте ихиклетсе илчĕç.

— Хĕлле. Паллах, шывĕ пăр пек. Анчах та пире водолазсене сивĕ мар. Пирĕн тумтирĕ мĕнлескер! Шыв витермест, сивĕ ямасть.

Шелюкăн та калаçмаллисем пур. Анчах та ăна пиччĕшĕпе юнашар утма памаççĕ. Вăл, тĕрткелешкелесе аранах пиччĕшпе шайлашрĕ. Акă иккĕш те урисене харăс пусма тытăнчĕç.

— Пичче, Атăл тĕпĕнче те пăр-и?—ыйтрĕ вăл.

— Мĕн эсĕ, Шелюк,— хирĕçлерĕ пиччĕшĕ.— Унта вырăнĕ-вырăнĕпе хăйăр, вĕтĕ чулсем выртаççĕ. Çўретĕн лăпкăн вун-вунпилĕк метр тарăнăшĕнче.

— Мĕн куртăн унта?

— Мĕн пуррине пурне те. Иртнĕ хутĕнче тĕлĕнмелле япала куртăм,— аса илчĕ Кирук.— Çўретĕп çапла Атăл тĕпĕнче, скафандр тăхăннăскер, курах кайрăм хайхискер: ман тавра пулăсем тăра параççĕ.

— Мĕнле тăраççĕ?

— Ишеççĕ пулĕ!— хирĕçлерĕç ачасем.

— Çук, тăраççĕ,— çирĕплетрĕ водолаз тепĕр хут хăй сăмахне.— Çĕртен пĕр шит çўллĕшĕнче, шыв юххине хирĕçле. Хуллен хўрисене вылянтараççĕ хăйсем. Ун чухне вара харăсах алăпа темиçе пулă тытса тухрăм. Ăшаласа çирĕмĕр вара.

Ачасем тĕлĕнсе пĕтерейменççĕ. Кашни хăй ăшĕнче водолаз пуласчĕ тесе ĕмĕтленет.

* * *

Шăматкун кĕçĕн классенче вĕренекенсем улттăмĕш класс алăкĕ умĕнче урок пĕтессе кĕтсе тăчĕç. Класран Шелюк тухсанах, вĕсем ăна çавăрса илчĕç:

— Атя каток çине!

— Пире конькипе ярăнма вĕрент!

Пĕр сăрăшсан, вĕсенчен никам çăлăнаймасть. Кайма тиврĕ вара ун. Чылайччен вĕрентрĕ вĕсене. Киле тĕттĕм пулас умĕн тин çитрĕ. Кирук килте. Сĕтел хушшине ларнă та ашшĕпе калаçать.

«Мĕнле сăмах-юмах-ши?» — чăнк тăратрĕ хăлхине Шелюк. Акă мĕн илтрĕ вăл:

— ...Атăла путнă трактора мана шыраса тупма хушрĕç.

— Йывăр сан, ывăлăм, ĕçӳ. Çитменнине, тата хăрушă, — терĕ ашшĕ, ассăн **сывласа. — Асту, аннӳне** ан шарла.

— Пăшăрханма кирлĕ мар, атте. Тракторне тупатăпах.

Çапла пулчĕ аслă ывăлĕн татăклă сăмахĕ.

Шелюкăн чĕри ырăнта мар. Тем пекех ыйтса пĕлес килчĕ ун. Çынни путман-ши тракторĕпе? Анчах ăна йĕркене вĕрентнĕ: пысăккисен калаçăвне ан хутшăн. Ирĕксĕрех вара унăн аслисен сăмахĕ вĕçленессе кĕтме тиврĕ.

Ашшĕ картишне выльăхсене апат пама тухсан, пиччĕш ытамне ыткăнчĕ.

— Ыран йĕлтĕрпе каятпăр-и? — ыйтрĕ вăл.

— Пулаймасть. Питех те кирлĕ ĕç пур.

— Атăл тĕпне трактор шырама анатăн-им?

Пиччĕшĕ, куçран пăхса, пуçне çеç сĕлтрĕ.

— Анне умĕнче кун пирки персе ан яр, — асăрхаттарчĕ ăна юлашкинчен Кирук.

— Пĕлетĕп, ухмах мар, — текелерĕ Шелюк. Унтан çапла ыйтрĕ: — Эпĕ те пыратăп санпа. Юрĕ-и?

— Шăнатăн вĕт, сивĕ.

— Кăçатпа кĕрĕк тăхăнатăп.

Тăвансем килĕшсе татăлчĕç.

* * *

Пĕрле килнĕ икĕ тăван уйăрălчĕç. Асли тăхлан тĕслĕ сивĕ шыва чăмрĕ, кĕçĕнни — касса уçнă пăр хĕррине юлчĕ. Ун çийĕнче вăрăм тăлăп, пилĕкĕнче — пиçиххи. Çухавине тăратнă, çĕлĕкне çамки çине антарса лартнă. Хура куç çийĕн пас тытнипе шуралнă хăрпăксем эрешлĕн курăнаççĕ.

— Шелюк, сивĕ мар-и сана? — ыйтаççĕ унран пиччĕш юлташĕсем.

Мăш-ш çеç сывлать Шелюк, хирĕç ним те чĕнмест. Шухăшĕнче пĕр Кирук кăна. Уншăн пăшăрханса чĕтремест вăл. Пиччĕшĕ тепле пулсан та ăнăçлăн çĕкленессе шансах тăрать. Урăхла пулма пултараймасть. Анчах хăçан туртса кăларĕ тракторне? Хăвăртрах курасчĕ.

Атăл варринче, касса уçнă пысăк вакă тавра, ик-виçĕ çын тăтăр çех — самантрах çав тĕле магнит туртнăн халăх пухăнать. «Мĕн пулнă, мĕн?» — тĕпчеме тытăнаççĕ вара. Кун пек чух пурне те пĕлекенни те тупăнатех.

— Атăл тĕпĕнче водолаз çӳрет.

— Мĕн çухатнă вăл? — ыйтать тăрăхласа тахăшĕ.

— Шăл ан йĕр. Вăл путнă трактора шырать.

— Тракторĕпе çынни те анса кайнă-ши?

— Çынни сиксе юлнă.

Водолаза хĕрхенекен те пур.

— Çуллаччен тăхтасан та юрамалла, шăнса пăсалас çук.

— Трактор шыв айĕнче ларнинчен мĕн усси?

Шыв айĕнчи тĕнчепе çыхăну тытаканĕ аллинчен телефон трубкине кăшт та ямасть. Акă вăл водолазран хыпар йышăнать: трактора тупнă! Халăх пĕр хушă шавласа илчĕ. Пурте водолаз ĕçĕ ăнăçлă пулнăшăн савăнаççĕ.

Тухрĕ шывран водолаз. Анчах та унăн каллех анма тиврĕ: трактора сăнчăрпа кăкармалла-мĕн. Сăнчăрĕ вă-ăрăм.

Хăйĕн ĕçне пĕтерсен, Кирука шыв станцине машинăпах ăсатрĕç. Шелюка кунтан вĕренпе сĕтĕрсен те илсе каяс çук. Вăл малалла мĕн пуласса кĕтет. Малалла акă мĕн пулчĕ. Трактор тупнă вырăнтан çыран хĕрне çитиччен Атăл пăрне пăчкăпа хăвăрт çеç касса уçрĕç. Çыран хĕрринче питĕ пысăк трактор ларать. Сăнчăрăн вĕçне ку тракторпа çыхăнтарнă-мĕн. Часах мотор сасси сывлăша çурса кĕрлеме тытăнчĕ. Карт! туртăнчĕ сăнчăр. Пурпĕрех чарăнмарĕ трактор. Кăларчĕ-кăларчех шыва путнă трактора.

— Çăвăнса, çĕнелсе тухрĕ! — тет пĕр çынни.

— Çĕнелсе сана, — хирĕçлет юнашар тăраканни, — мастерскойĕнче пĕр кана аппаланаççĕ-ха унпа. Сӳтсе, пур пайсене тасатмалла, çупа сĕрсе тухмалла.

Кирукăн каялла килмесĕр чунĕ тӳсмен. Çийĕнче унăн ăшă тум. Ăна трактор тупса панăшăн алă тытса тав турĕç.

* * *

Хăвăрт иртеççĕ ĕçлĕ кунсем. Акă юр та кайрĕ, çу та çитрĕ. Атăл тăрăх пăрахутсем çӳлелле те, аялалла та ирте-ирте каяççĕ. Ăçта килнĕ унта кимĕсем ишеççĕ. Çыран хĕрринче шыва кĕрекенсем кĕшĕлтетеççĕ яра кун. Водолазсемшĕн халĕ чи хĕрӳ вăхăт. Вĕсен пурне те витĕр курса тăмалла. Инкек-синкекĕ вара сыхласах тăрать тейĕн этеме.

Кирук водолаз кунне-çěрне шыв станцинче ирттерет. Шăллěне вăл, Шелюка, лайăх ишме, чăмма вěрентсе çитерчě.

Акă пěр кунхине çакăн пек ěç пулса иртрě Атăл çинче.

Вăл кун Кирук хуралтаччě. Станцин вышки çинчен бинокльпе Атăл çине пăхса тăратчě. Унпа юнашар — Шелюк, вăл та тавралăха сăнать. Çыран хěррипех пěчěк пăрахут-трамвай иртсе кайрě. Хум çине кимě тухрě ишсе. Икě хěр те икě каччă ларса пыраççě. Унччен те пулмарě тытăнчě кимě чуччу ярăнма.

— Путасран та хăрамаççě, мур илесшěсем!

Кирукăн сăмаххисем шăл витěр сăрхăнса тухрěç. Ахальтен пăшăрханман водолаз. Унталла-кунталла тайăлчě те кимě, çыннисем шыва тухса ӳкрěç. Çавăнтах кимми те ӳпěнчě. Пěри ишме тытăнчě, виççěшě курăнмаççě ниçта та. Паллă, путрěç ěнтě вěсем. Тек тăхтама юрамасть. Часах хайхискерсем моторлă кимě çине лараççě. Врач та кунтах. Çынсем путнă вырăна кимě çиçěмле хăвăртлăхпа çитет. Пěр харăс сикеççě шыва: пиччěш тата шăллě. Чăмаççě пулă евěр. Самант та вăхăт иртмест, шыв çинче курăнаççě. «Хăшě-ши?»—шухăшлать врач. Шелюк иккен. Вăл вăрăм çивěтлě хěре хăпартать. Акă Кирук. Ун аллинче те хěр. Вăрт-варт хěрсене кимě çине. Ěнтě шанчăк пурах вěсенче, врач пулăшатех. Шыв айěнче татах тепěр çын-çке, ăна çăлмалла. Каллех чăмрěç пиччěшпе шăллě. Ку хутěнче вара малтан пиччěшě тухрě, йěкěте илсе.

Çапла пурнăç пачěç вěсем виçě çамрăка. Калас пулать, каярахпа, тăна кěрсе çитсен, йěкěчě никам çине те куç уçса пăхма хăяймарě. Вăл-çке каппайланнă. Шыв вěçкěнсене юратмасть. Хěрсем тав туса çитерейменççě пěртăвансене.

— Мěнле тупрăр пире шыв айěнче?— теççě вěсем.

— Кукленсе ларнă та ларатăр,—тет Шелюк. Унтан ӳпкеленěн çапла хушса хурать:— Ишме пěлместěр, шыва кěретěр.

— Эпě кимě çинче хăрушă мар пулě тесе.

Куна икě çивěтли, Шелюк çăлнă хěр, каларě.

— Айвансем çав эпир. Çав йěкěтсене шанса лартăмăр мар-и,—сăмах хушать Кирук туртса кăларнă хěрě.—Пěри, ав, тарчě—хăй çăлăнса пултăр. Тепри — пирěн пекех айванскер. Ишме те пěлмест.

Кирук хěрсене ишме вěренме шыв станцине çӳреме сěнчě.

Ырă ěç вăл ялан хăй хыççăн йěр хăварать. Пěртăвансен сăнӳкерчěкěсене хаçатра кăларчěç. Сăнӳкерчěк айне пиччěшпе шăллě виçě çын пурнăçне çăлса хăварни çинчен çырнă.

* * *

Тепӗр кунне, ирхине, шыв станцине телефонпа шӑнкӑравларӗҫ. Ҫӗмӗрле калаҫать. Унта Сӑр шывне ҫын путнӑ-мӗн. Ӑна тупма Шупашкартан васкавлӑн водолаз чӗнеҫҫӗ.

— Кама ярӑпӑр?— терӗ начальник.

— Мана кайма ирӗк парӑр,— терӗ Кирук.

— Килӗшетӗп,— пулчӗ начальникӑн сӑмахӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн пиччӗшпе шӑллӗ хушшинче ҫакӑн пек калаҫу пулса иртрӗ:

— Эпӗ те пыратӑп.

— Юрамасть.

— Илсе кай ӗнтӗ.

— Юрамасть.

— Эпӗ пурпӗрех пыратӑп.

— Ай, санпа. Пуҫтарӑн, эппин.

Кайран пиччӗшӗн шӑллӗне тав тума та тиврӗ. Мӗншӗн? Водолаз та инкеке лекме пултарать иккен, ӑна та ҫын пулӑшӑвӗ кирлӗ-мӗн.

Сӑр хӗрне ҫитсенех Кирук скафандр тӑхӑнса шыв айне анчӗ. Ҫӳрет-ҫӳрет вӑл. Ниҫта та путнӑ ҫын выртни курӑнмасть. Сӑр шывӗн тӗпӗ Атӑлӑнни пек мар, пачах урӑхла. Кунта урлӑ та пирлӗ туратлӑ йывӑҫ вуллисем, тункатасем, тымарсем выртаҫҫӗ. Кирук хӑй те сисмест, сывлӑш парса тӑракан резина шланг турат-тымарсемпе ҫыхланса ларать. Чутах вӑл сывлӑшсӑр ӳкмест, антӑхса. Юрать-ха, пӗлтерме ӗлкӗрчӗ ҫавӑн ҫинчен. Кам чӑмрӗ шыва ун чух? Шӑллӗ—Шелюк. Вӑл хӑтарчӗ вилӗмрен пиччӗшне.

Киле таврӑнсан Кирук шӑллӗ паттӑрлӑхӗ ҫинчен аппӗшпе амӑшне каласа тӗлӗнтерчӗ.

— Малтанах чун сисрӗ ман,— терӗ амӑшӗ куҫҫулӗ витӗр, куляннипе ахлата-ахлата.— Пӑрах ҫав хӑрушӑ ӗҫе, ывӑлӑм? Сисетӗп, кӗҫӗнни те сан хыҫҫӑн пырать.

Кирук амӑшне куҫӗнчен чӑр-р пӑхрӗ те ҫирӗп сасӑпа ҫапла каларӗ:

— Аннеҫӗм, ан та ӳпкелеш. Пӑрахаймастӑп. Водолаз ӗҫне чунтан юрататӑп. Шелюк та ҫавах.

Мӗнле ӳкӗте кӗртейӗ ӗнтӗ амӑшӗ шиксӗр ывӑлӗсене.



## ТУПАЯСЧӖ ЮРАХЛӐ МУЗЫКА

*Калав*

Ним тума аптранӑ енне эпӗ чӳрече умне пырса лартӑм. Хушӑран пахчаналла пӑхкаласа илетӗп. Унта ылтӑн тум тӑхӑннӑ вӗрене курӑнать. Вӑрӑм турат вӗҫӗнче шурӑ пӗсехеллӗ чакак ярӑнать. Пахчара пӗччен хуҫа пулса юлнӑшӑн савӑнать, ахӑр.

Кӑмӑл ӳрӗк-сӳрӗкленсех ҫитрӗ. Каллех купӑса ярса тытрӑм. Пӳрнесем кӑнттам, хӗсӗнсе тухать тунсӑхлӑ юррӑн кӗвви. Пуҫра пӗр тӗвӗ пур ман. Вӑл ним тума памасть, ялан хамӑр ӳстернӗ кукурус ҫинчен те Хумкка юлташ пирки шухӑшлаттарать. Тӗрӗссипе каласан, Хумкка ӗнтӗ текех ман юлташ мар. Ӗнтӗ унпа юнашар тӑрса пӗр утӑм тӑвас ҫук эп. Капла уйрӑмла, чӑннипе каласан, питех те шел: лайӑх тусчӗ вӑл, ман сӑмахран нихӑҫан та тухман. Пыл та ҫу пурӑнаттӑмӑр. Пӗр парта хушшинче ларнӑ. Миҫе ҫул! Пӗтӗм пионер пирӗн туслӑха ӑмсанатчӗ. Вожатӑй та ҫавна шута илсех ӗнтӗ иксӗмӗре кукурус ани уйӑрса пачӗ.

— Тяккапа Хумкка, акӑ участок,—терӗ вӑл, пире кукурус ани ҫине илсе пырса.— Сире эпӗ вӑйлӑ кукурус пӑхса ӳстерме сунатӑп.

Эпир хамӑра ӗҫ шанса панӑшӑн мӗн тери ҫунатланмарӑмӑр-ши! Хӳхӗм кукурус туса илес шухӑш пире ҫывӑрма выртсан та канӑҫ памарӗ. Анчах... ҫав кукуруса пулах Хумккапа иксӗмӗр хушӑри туслӑх пӗтрӗ. Мӗншӗн тетӗр пулӗ? Пирӗн

опыт ăнăçсăр пулчĕ. Эпир пăхнă кукурус ашкăрса ӳсеймерĕ. Уншăн пире ятларĕç, стена хаçатĕнче çырса кăларчĕç. Тӳсрĕмĕр, кулянтăмăр. Юрĕ. Айăплă. Килĕшетĕп. Çавăнпа çырлахмаллаччĕ пек. Çук çав. Хумкка ытла та канăçсăр çын. Вăл, манран ыйтмасăр-тумасăр, вăрттăн, хамăра çирĕплетсе панă участокри кукуруса шкул выставкине тăратнă. «Мĕншĕн?»— ыйтатăп унран. «Пĕлччĕр, курччăр эпир санпа мĕнле ĕçленине»,—тет. Кӳренмелле мар-и çакăншăн? Чăн-чăн юлташ çапла хăтланать-и? Шухăшласа, виçсе пăхăр-ха, шкулти тантăшсем пĕлни çитмест ăна, пĕтĕм колхоза кăтартмалла иккен. Камăн ят каять? Унăн та, манăн та. Çакна ăнланмасть. Пулать кам хăлăхсăр этем!

Халăхĕ, тата, халăхĕ, ĕмĕр кукурус курман пекех. Пирĕн кукурус умне çитеççĕ те тăпах чарăнса тăраççĕ. Тупнă курмалли! Выставкăра унсăрах мĕн чухлĕ экспонат! Ытама кĕрейми кавăнсем... Чашки-чашки панулми, çырли... Халь-халь çăвара илсе хыпас килет. Хăярĕсене пăхсан, тупата, сысна çури тейĕн. Мĕнешкел селĕм тата ылтăн пучахлă тулă, ыраш кĕлтисем! Пултараççĕ те пирĕн шкулти юннатсем. Чăнах. Юлашкинчен çынсем умне вă-ă-рăм туналлă кукурус тухса тăрать. Çӳллĕшĕ, тем тесен те, чалăш çурă пулатех, чутах маччана тивмест. Акă эпир ӳстернĕ кукурус та кунтах. Мăшкăлласа, ăна вăрăм туналлă кукуруспа юнашар тăратнă. Капла вăл, паллах, хăйĕн пĕвĕнчен те кĕске, карлик пек çеç курăнать.

Çынсемшĕн кулăш. Чунтанах ахăлтатаççĕ. Чухлатăп: халиччен халăх выставкăра чи лайăххине çеç курма хăнăхнă. Вĕсемшĕн япăххи çĕнĕ япала.

Тавçăратăр-и манăн кăмăл мĕншĕн хуçăлнине?

Паян пирĕн канмалли кун. Çапах та шкулта хор репетици ирттерет. Эпĕ вăйăç. Репетици пуçланиччен вăхăт пĕр-икĕ сехет те пур-ха. Анчах та килте ларас-тăрас килмест. Мĕн илĕртет-ши шкула? Купăса çурăм хыçне çакрăм та тухса утрăм. Шкула çитсен тӳрех репетици ирттерме уйăрнă класа кĕрес килмерĕ. Чун выставка залне туртать. Пăхатăп: курма пынă халăх каллех пирĕн кукурус умĕнче калаçса тăрать. Эпĕ вĕлт çеç пытантăм.

— Мĕншĕн вара ку ӳсеймесĕр паталанса юлнă?— ыйтаççĕ çынсем пĕр-пĕринчен.

— Çырса хунă унта. Тытса пăхăр-ха ав, çав хытă хут таткине,— вĕрентет тахăшĕ çавăнтах. Унтан вара кăшт ӳпĕнет те этикетка çине çырнине сасăпа, пурне те илтĕнмелле, ву-

лать.— «Тяккапа Хумкка çамрăк натуралистсем юрăхлă музыка илтеттерейменшĕн ӳсмесĕр юлнă кукурус».

Унччен те пулмарĕ, чечеклĕ тутăрне шĕвĕртсе çыхнă хĕрарăм, çынсене тĕрткелесе, мала иртрĕ. Çийĕнчех палларăм ку инкене. Вĕсем пирĕнтен инçетре — Турикасра пурăнаççĕ. Фермăра ĕçлет. Астăватăп-ха, шефа илес тесе пăрусем курма пырсан, пире витене те кĕртмерĕ.

— И-и, сирĕнтен, шăпăрлансенчен, мĕн усси? Урайне варласа çӳрени çеç. Сирĕн хыçăртан тасатса та çитерейместĕн. Кайăр, кайăр!— тесе алăка хупсах лартнăччĕ вăл.

Халĕ çав инке... пирĕн кукуруса, ай, тĕлĕнсе пăхать. «Тьфу!» — тесе сурансçи пулчĕ. Вара икĕ пĕççине шарт! çапрĕ те:

— И-и, ара, чике тăршшĕ те ӳстереймен!— терĕ, янкăшса.— Тупăнаççĕ-мĕн пĕчĕкренех йышра ассисем. Нумайăшĕ ытармалла мар ĕçленĕ ав, вĕсем туса илнĕ пахчаçимĕçе пăхса тăранаймăн. Ку икĕ йĕксĕкĕ ĕçлеме ӳркеннĕ. Хăйсене тӳрре кăлармa ăçтан ăс çитернĕ? И-и, ара, илтнĕ, тем чул та илтнĕ, кукурус ани енчен фермăна çитиех купăс калани ян! пыратчĕ. Пĕлмен, пĕлмен... çĕрне çемçерех кăпкалатас вырăнне купăс каласа ларнă иккен! Музыкăпах кукурус ӳссен ытла ансатчĕ те... Кулсах вилмелле-çке ачи-пăчинчен. И-и, ара! Тупата, ха-ха-ха!

Тутăрне шĕвĕртсе çыхнă инке сăмахĕпе пурте килĕшеççĕ пулас. Унсăрăн пĕрле кулса ямĕччĕç.

Çак мыскарана эпĕ, пытаннăскер, шăла çыртса итлесе тăтăм. Чунăм тӳсме çук ыратать. Хама хам та шанмастăп: çав инкене, çывăхра тăнă пулсан, иртнишĕн те, хальхишĕн те тарăхса чĕпĕтсе илеттĕм пулĕ. Кирек те мĕн пултăр, текех пытанса тăма халăм çук, тӳсĕм вĕçне тухрĕ. Чавсасемпе тĕрткелешсе, купăса айккинчен айккинелле сулкаласа, чечеклĕ тутăрне шĕвĕртсе çыхнă инке çумне пырса тăтăм та:

— Кая юлнă çын çеç çĕннине ĕненмест,— терĕм. Вăл мана куçне чарса пăхрĕ. Çамкине пĕркелентерчĕ, тутине мăкăртрĕ. Сăхма мăйне тăсса пыракан хур аçи хӳтернĕнех тытăнчĕ çатăлтатма:

— И-и, ара, эсĕ пултăн-и-ха кукуруса купăс каласа ӳстерекенни! Ав, мĕн ĕнентересшĕн эсĕ çынсене. Хăв юлхав пирки...

Вăл татах вăтантармалли сăмахсем калать. Эпĕ икĕ хăлхана та алăпа хупларăм. Малалла тем пулатчĕ, тем килетчĕ, анчах çак вăхăтра пĕр уçă та янăравлă сасă илтĕнчĕ:

— Юлташсем, эпӗ ӗненетӗп.

Хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхрӑм. Куратӑп: хулпуҫҫи урлӑ фотоаппарат манерлӗрех сумка ҫакса янӑ ҫӳллӗ те ҫамрӑк ҫын, мӑйӑхлӑскер, калаҫать-мӗн.

— Музыка вӑл, ырӑ ҫынсем, мӗн тери вӑйлӑ та хӑватлӑ,— тет татах ҫак ҫын.— Ӑна нимпе те танлаштараймӑн. Музыка итлесе ларнӑ май эсӗ шухӑшпа таҫта-таҫта ҫитсе куратӑн. Хӑвна ытла та селӗм туятӑн. Кӑмӑл ҫӗкленет, ӗмӗт ҫунатланать, чун савӑнать. Юрлас, ташлас килет. Ҫук, музыка чӗрчуна ҫеҫ мар, ӳсентӑрана та хӑват парать. Ӗненетӗп.

Сӑмахне каласа пӗтерсен, тӗлӗнтермӗш ҫын мана, аларан тытса, тулалла тухма чӗнчӗ.

— Санпа калаҫмалли пур,— терӗ.

Выставка курма пынӑ халӑх хушшинчен тухнӑ чух акӑ мӗн каласа юлчӗҫ пирӗн хыҫҫӑн:

— Ай-уй, кам пулчӗ ара ку?

— Шӑпрах... Радиокорреспондент тет-и...

Эпӗ хама хӳтӗлекен хыҫҫӑн утса савӑнса пыратӑп. Шел, Хумкка ҫук, шутласа пӑх кӑна, кам, кам — корреспондент пирӗн ӑнма пӗлмен опыта ӗненет. Чӑн-чӑн этем эппин вӑл, хисепе тивӗҫ.

— Юлташу ӑҫта санӑн?— ыйтрӗ, урама тухсан, корреспондент.

— Текех ман юлташ ҫук ӗнтӗ,— тетӗп хайхискер.

— Мӗнле апла? Эсӗ кукурус ани ҫинче пӗччен ӗҫлеменҫке.

— Хумккапа ӗҫленӗ. Малтан юлташчӗ, халӗ...

— Йывӑр вӑхӑтра юлташран сивӗнни килӗшмест.

— Ха, вӑл хӑй айӑплӑ. Хамӑра намӑс кӑтартрӗ. Мӗншӗн ӑнӑҫсӑр пулнӑ япалана выставкӑна тӑратас?— тӳрре тухасшӑн пултӑм эпӗ.— Текех вӑл юлташ...

Эпӗ калас сӑмаха каласа пӗтереймерӗм, корреспондент пӳлчӗ:

— Ан шӑртлан,— терӗ.— Атя, илсе кай Хумкка юлташу патне. Пӗрле калаҫар. Вӑл сӑпайлӑ ача тата чӑн-чӑн юлташ пулма пултарнине ӑна курмасӑрах чухлатӑп.

Ку ҫынна нимле сӑмах та витменнине сисрӗм, хушнине итлемех тивет.

Эпир пырса кӗнӗ чух Хумкка килте ҫукчӗ, амӑшӗ ҫеҫ. Вӑл, ывӑлӗ патне корреспондент килнине пӗлсен, ӑна шырама тухса чупрӗ.

Купăса хывса сак çине лартрăм. Куратăп, сĕтел çинче темиçе патефон пластинки выртать, пĕлтĕрхисем мар. Хăçан туяннă-ши вĕсене Хумкка? Тем тесен те — хальтерех, конверчĕсем çĕнех, тыткаласа хуратнă пӳрне йĕррисем палăрмаççĕ. Эппин, вăл хамăр тунă ĕçе ĕненме пăрахман!

Хумкка таврăнчĕ. Радиокорреспондент, сывлăх сунса паллашкаланă май, сумка хуплашкине уçса темĕнле аппаратне шăлт-шалт пăркаласа ĕçлеттерме пуçларĕ. Унтан вăл пире:

— Ну, туссем, сире радиопа калаçтаратăп, хăвăр ĕç çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа парăр, сирĕн сасса пленка çине çыратăп,— терĕ.

Эпĕ шалт тĕлĕнсе кайрăм. Пире радио тăрăх калаçтарасшăн. Акă, пыр та кур. Ку ытахальтен марах. Эпĕ хам та темĕн чул шухăшланă, çĕнни тӳрех пулмасть тесе. Тен, пирĕн опыт начарах та мар. Радиопа питĕ калаçасчĕ. Вара никам кулма хăяймĕ. Хыпăнса ӳкрĕм. Хумкка та манашкалах шухăшлать пулас, туятăп. Тӳрех вăл та, эпĕ те каламалли нимле сăмах та тупаймарăмăр. Сапаланчăк шухăш пуçтарăнма пĕлмест.

— Пуçла, Хумкка,— хушрăм пăшăрханса: тем курса тăрăн, калаçаймаççĕ тесе, аппаратне ĕçлеттерме пăрахĕ.

— Ху кала. Шухăшласа тупаканĕ эсĕ-çке,— хирĕç тавăрать Хумкка.

— Аса ил-ха, Тякка. Кукуруса музыка итлеттересси ăçтан пуçланса кайрĕ?— йăвашшăн калать корреспондент.— Манăн пурне те пĕлес килет.

Вăл пиччелле ăшшăн пуплени мана лăплантарчĕ. Пуçа иртнĕ кунсем пĕрин хыççăн тепри пыра-пыра кĕме тытăнчĕç. Вара эпĕ сăмахăма пуçларăм.

«...Пирĕн дружина колхоза кукурус ӳстерсе пама йышăнчĕ. Уйне вара куçпа виçсе илеймĕн, таçтанах сарăлса выртать. Сахал-махал мар, вунă гектар.

Çĕр ăшăнсан, кукуруса ачасемпе хамăрах акрăмăр, çĕнĕ меслетпе — тăваткăл тĕммĕн. Акнă хыççăн вăхăт самаях иртсен, пирĕн кукурус кăр-р шăтса тухрĕ, аякран пăхсан, чăнчăн симĕс кĕççе тейĕн!

«Пирĕн кукурус вăрман пек кашласа ӳсмелле,— тет вожатăй.— Пурин те тăрăшмалла, кашниех хăйĕн пултарулăхне кăтартмалла. Çав-çав ача чăн-чăн пионер, вăл кукурус ăсти, тесе калама пултарар эпир кайран».

Кашни ачана кукурус ани уйăра-уйăра пачĕç. Шанаççĕ.

Шанмасăр, эпир кукурус мĕнле ӳстермеллине пĕлетпĕр, ботаника урокĕнче пĕтĕмпех вĕреннĕ.

Пире, Хумккапа иксĕмĕре, йĕкрешсем пек уйрăлмасăр çӳрекенскерсене, пĕрле ĕçлемелле турĕç.

Акă ĕнтĕ хĕрӳ кунсем пуçланчĕç пирĕн. Кукурус тĕпĕ тавра çĕре кăпкалатмалла, унтан купаламалла. Эх, ĕçлетпĕр, эх, ĕçлетпĕр, пуçа çĕклеместпĕр. Явкай апатне ларас умĕн пĕррехинче манăн катмак аври тĕпĕнчен шарт! хуçăлчĕ. Пĕтĕм инкек те çакăнтан пуçланса кайрĕ пулас. Мĕн тăвас? Ирĕксĕрех киле утма тиврĕ».

— Эпĕ юлтăм, кукуруса катмакласа пĕтертĕм,— пӳлчĕ ман сăмаха Хумкка.

— Тĕрĕс,— çирĕплетрĕм эпĕ.

«Килте лупас айĕнче катмака çĕнĕ авăр лартрăм. Ана хулпуççи çине хутăм та, Хумкка патне уя каяс тесе, утрăм хапха патнелле. Хамăн, такам кăчăк туртнăнах, пӳрте кĕрес килет. Пĕлетĕп-ха: кăмакара вĕретнĕ сĕт пур. Пӳрте кĕтĕм. Килте никам та çук. Радио хăй тĕллĕнех кĕрлесе ларать. Хайхискер, питлĕхе уçса, ухватпа кăмакаран сĕт чӳлмекне кăларатăп. Çиелте пӳрне хулăнăш сап-сарă хăйма хытса ларнă. Кашăк илсе, хăймине сĕретĕп. Эх, тутлă та...»

Çак тĕле каласа çитсен, темшĕн Хумкка сăнĕ улшăнчĕ. Мана куç хĕсет. Эпĕ ăнланмастăп, пуçа суллатăп. Тӳсеймерĕ Хумкка:

— Пуçларĕ ĕнтĕ хăйма çини çинчен! Ай, кушак эсĕ. Кама кирлĕ санăн айванла калаçăву. Ĕç пирки кала. Сана çынсем итлеççĕ кунта,— тет.

Корреспондент пире пăхать те кулать. Эпĕ каллех малалла калама тытăнтăм.

«Хăйма çинĕ хыççăн пĕр курка сĕт ĕçрĕм. Те ытлашши ывăннăран, çан-çурăм шалтăрах кайрĕ. Диван çине выртса кăтăш пулса илем-ха, терĕм. Тин çех пуçа хунăччĕ, сасартăк репродуктортан диктор мана чĕнет: «Тусăм, итле-ха, калаçу пуçланать: «Ӳсентăрана хăвăрт çитĕнме музыка пулăшать-ши?»—тет. Кайран Хумкка ĕненесшĕн те пулмарĕ: «Ыйхăлăскер, итлеймен те эсĕ»,— тесе ӳпкелешрĕ».

— Паллах, унашкал калаçу пулман, эсĕ тĕлĕк курнă, акă мĕн,— хирĕçлесе илчĕ Хумкка.

«Çывăрма терĕ ун чух!— тетĕп сасса хăпартса, ĕнентерме тăрăшса.— Калаçăвĕ тĕлĕнмелле кăсăклă. Чăнах, куç хупанки çине ыйхă тăманисем тĕр-тĕр вĕçе-вĕçе ларчĕç, анчах эпĕ тӳсрĕм. Калаçăва чиперех итлесе пĕтертĕм. Ăнлантăм, музы-

ка ӳсентӑрана хӳхӗм ӳсме пулӑшать! Маттур та иккен учепӑйсем. Эпӗ тӳрех хамӑр кукуруса аса илтӗм. Пирӗн кукурус — ӳсентӑран-и? Ӳсентӑран. Ҫакна тавҫӑрса илтӗм те ай! савӑнтӑм. Ара, текех кукуруса катмаклама кирлӗ мар. Вӑл йывӑр ӗҫ, пилӗке ыраттарать. Музыка итлеттересси мӗн вӑл? Ҫав тери ҫӑмӑл. Телее пула, хам купӑс калама пӗлетӗп. Тӑратӑп та, Хумкка патне ҫӗнӗ хыпарпа каяс, тесе шухӑшлатӑп. Мӗн тейӗр эсир? Ыйха путнине сисмен те, ырӑ ӗмӗт мана сӑпка ҫине хурса утьӑкка сиктернӗ. Тепӗр кунне ытла та кулӑшла пулса тухрӗ.

Ыйхӑран шартах сиксе вӑрантӑм. Куҫ самантрах чарӑлчӗ, такам вӗрсе уҫнӑнах. Унталла-кунталла пӑхкалатӑп, никам та курӑнмасть. Мӗн мурӗ? Чиперех илтрӗм, аякран кӑт! чышса: «Тякка, вӑран хӑвӑртрах»,— терӗ такам... Пӑхатӑп, кравать ҫинче ҫывра паратӑп. Диван ҫинчен мӗнле майпа куҫса выртнӑ, пӗлместӗп. Сиксе тӑтӑм та хама вӑратакан ҫынна тытӑнтӑм шырама, анчах ниҫта пӗр чун курӑнмарӗ. Ир пулин те, анне ӗҫе кайнӑ пулас. Пуҫа хыҫкаласа илсен тавҫӑртӑм: мана ӗнерхи шухӑш вӑратнӑ. Акӑ мӗн. Чи кирли пирӗншӗн музыка! Кайӑкла вӗҫме хатӗр хам. Ҫӑмӑллӑн тытӑнтӑм гимнастика тума. Раз-два! Раз-два! Урасем хӑйсем тӗллӗнех тапӑртатаҫҫӗ. Пӗр пӗшкӗнетӗп, тепӗр ярт тӑсӑлса тӑратӑп. Хам тӑрӑх сивӗ шыв ярсан та, ним те ҫӳҫенместӗп.

Тумлантӑм. Апат ҫиме вӑхӑт ҫук. Кӗсъене тӑвар сапнӑ ҫавра чӗл чиксен пурӑнан вара. Чи кирлине — купӑса манас мар. Ӑна тытманни темиҫе кун та ҫитет. Урайӗнче ларакан-скерне, тусан пуснӑ. Кӗпе ҫанни вӗҫӗпе шӑлса тасататӑп ӑна. Хамӑр юратнӑ купӑсшӑн ним те шел туйӑнмасть. Купӑс — ман тус. Хисеплетӗп ӑна. Вӑл пӗтӗм отряда чапа кӑларчӗ. Эпӗ купӑс каламан пулсан, пирӗн пионер отрячӗ фестивальре мала тухаймастчех. Халӗ, ав, пионерсен пӳлӗмӗнче мухтав грамоти ҫакӑнса тӑрать.

Ку таранччен эпӗ купӑс каласа шкул ачисене йӑпантарнӑ. Вечерсенче вара пӗри те тепри чупа-чупа пыратчӗҫ: «Тякка, вальс кала-ха, Тякка, полька, полька кала»,— тетчӗҫ. Ҫитет кун чухлӗ вылянипе, пӑнчӑ лартас. Малашне купӑс каласа тӗлӗнмелле усӑллӑ ӗҫ тӑвас.

Купӑсӑма хул айне хӗстертӗм те, йӑмӑкпа шӑллӑма ыйхӑран вӑратасран шикленсе, шӑппӑн, чӗрне вӗҫҫӗн пускаласа, урама тухрӑм. Халӑх ирхи тутлӑ ыйхӑра пулас, ниҫта пӗр сас-чӳ илтӗнмест. Ярӑнтартӑм тӳрех Хумкка патне. Вӑл ӑҫтине пӗлетӗп: килтисене чӑрмантарасран именмелле мар. Кар-

та урлă пахчана йалт çеç сикрĕм. Ўплене кĕтĕм, Хумкка ним те сисмест. Сăмса витĕр ш-ши! ш-ши! шăхăрса çывăрать».

— Суятăн!— кăшкăрчĕ Хумкка, каллех ман сăмаха татса.— Эпĕ нихăçан та шăхăрмастăп, ман унашкал айванла йăла çук.

— Эсĕ?! Ара ўплере сансăр пуçне урăх никама та курмарăм-çке.

Хумкка, сылтăм аллине чăмăртаса, тепринпе кăкăртан ярса илчĕ.

— Ун чухне те вăрансан мана çапла ярса тытрăн. Ну, асту!..

Кĕçех çыхланса ўкеттĕмĕр. Юрать пирĕн хушша корреспондент кĕрсе тăчĕ.

— Çăвăр автансем иккен эсир. Хăвăрăн культура çитменнине кăтартатăр,— терĕ вăл, пире уйăрса ярса.

Тĕрĕссипе каласан, Хумккана пуриншĕн те тыттарса ярас шухăш пурччĕ, çын умĕнче именни чарать.

— Малалла мĕн пулчĕ?— ыйтать эпир мирлешнĕ хыççăн корреспондент.

— Малалла мĕн пулнине Хумкка калатăр. Вăл пĕтĕмпех пĕлет, иккĕн ĕçленĕ.

— Юрĕ,— килĕшрĕ корреспондент.

Хумккан, те вăтаннипе, те хăранипе, пичĕ çине тĕмпĕлтĕмпĕл хĕрлĕ пăнчăсем тапса тухрĕç. Сасси хăйĕн çинçе, йынăшса тухать.

Корреспондент, тĕлĕнсе, ун куçĕнчен чăр-р пăхса илчĕ.

— Хумкка, ма йынăшан, чирлемерĕн пулĕ те?.. Пиччўпе калаçнă пек калаç,— асăрхаттарчĕ вăл ăна.

Хумкка ассăн сывласа ячĕ.

— Лăплан,— тет корреспондент Хумккана.— Унччен эпĕ аппарата чарса лентине улăштаратăп.

Хумкка ўплере эпĕ ăна ыйхăран вăратасшăн утиялне сире-сире пăрахнине, питĕнчен шывпа пĕрĕхнине ним те шарламарĕ, вăл тўрех кукурус çинчен калама пуçларĕ.

— Пирĕн кукурус речĕ çип çапнă евĕр тўп-тўрĕччĕ. Ретпе рет хушшинче — уçланкă. Каллĕ-маллĕ темĕн чул утсан та кукурус таптанмасть. Вăл кун, Тякка çĕнĕ хыпар илсе килнĕ кун, эпир ана çине ирех çитрĕмĕр. Вăл вăхăтра унта никам та пулман. Иксĕмĕр икĕ рет хушшине тăтăмăр та кайрăмăр купăс каласа анан тепĕр вĕçне çитиччен.

— Купăс çеç каламан, эсĕ юрласа пытăн. Тен, сан сассу

чăрмантарнă? Эсĕ ĕнĕрешни музыках мар ĕнтĕ,— хушса хутăм эпĕ, ăна пӳлсе.

Хумкка çилленсе ӳкрĕ.

— Ху культурăллă юрă тупаймарăн та çын çине йăвантаран.

— Чимĕр-ха, туссем,— чарать пире корреспондент.— Пăрахăр-ха эсир тавлашма. Манăн пĕлес килет, мĕнле кĕвĕ каланăччĕ?

— Мĕн мĕнли унта,— тет Хумкка.— Ялти карчăксен ĕçкĕ юрри: «Кума, кума».

— Пулин, вăл пурпĕрех савăнăçлă юрă,— хӳтĕлетĕп хам каланă çемме.— Тепĕр тесен, эпир сăмахĕсене каласа юрламан.

— Тякка, купăспа каласа кăтарт-ха, мĕнле çемĕ вăл?— ыйтать корреспондент манран.

Купăса илтĕм те тăсса ятăм. Эпĕ калакан юрă кĕвви корреспондента килĕшет пулас. Вăл йăл-йăл çеç кулкаласа тăрать.

Хумкка çав-çавах юрă килĕшӳсĕррине ĕнентересшĕн. Эпĕ калама чарăнсан, вăл çапла хушса хучĕ:

— Ана вĕçĕнчен каялла килнĕ чух такмаксем пуçларăн-çке.

— Такмаксем пушшех савăнăçлă.

Корреспондент хушмасăрах такмаксене янратма тытăнтăм.

Эпĕ купăс калама чарăнсан, Хумкка çăварне хупать пулĕ тенĕччĕ. Кукурус ӳсмерĕ — пĕр сăмах. Анчах кунпа çырлахмасть Хумкка. Тытăнчĕ вăл корреспондента тĕпĕ-йĕрĕпех тăхçалама. Хăй ним ыррине асăнмасть. Анчах пирĕн ĕçре те пархатарĕ пулнах. Чи пирваях, купăс каланă-каламанах темелле, виç-тăват кун хушши çумăр чашлатса çунă хыççăн, пирĕн кукурус ыттисенчен çӳлерех ӳснине вожатăй та асăрханăччĕ. «Маттур эсир»,— тесе мухтанăччĕ. Ку пире хамăр тăвакан ĕç ăнăçлă пулса пынине ĕнентерчĕ. Анчах эпир шăла çыртрăмăр, хамăр вăрттăнлăх çинчен никама та пĕлтермерĕмĕр. Çын куриччен кукурус ани çине тухса купăс каласа кĕреттĕмĕр те кунĕпех вара ӳплереччĕ. Пирĕн кукурус тахăш вăхăтра ӳсме чарăннă — сисмен те. Туйсан, хытă кускаларăмăр, район центрне пластинкăсем илме пайтах чупрăмăр, анчах усси пулмарĕ.

— Çапла, ытти ачасем кулленех ĕçлерĕç, çĕрне кăпкалатса, имçам сапса тăчĕç. Эпир хамăр вăхăта музыка шыраса

ирттертĕмĕр. Пирĕн кукурус çĕр çумĕнчен хăпаймарĕ, яштака ÿсеймерĕ,— вĕçлерĕ хăй сăмахне Хумкка.

Корреспондент пирĕнтен тăрăхласа та кулмарĕ, ятласа та илмерĕ. Пĕр çакна çеç каларĕ: «Сирĕн сăмахăрсене çырса илтĕм. Халĕ эпĕ ăна радиопа памастăп, çитес кĕркуннеччен тăхтатăп. Эсир юрăхлă музыка тупатăрах. Килес çул килĕп те сирĕн ĕçĕр çинчен калава малалла çырăп».

Корреспондент, ĕçре ăнăçлăх сунса, сывпуллашса тухса кайрĕ. Вăл пирĕн сăмаха çырса илнĕ. Килес кĕркунне калаçма эпир тивĕçлĕ пулайăпăр-ши? Тупаясчĕ юрăхлă музыка, вара...

— Тупатпăр,— лăплантарать халь мана Хумкка.— Иртнĕ йăнăшсене текех тумăпăр, иккĕн ĕç майне килтерĕпĕр.

Ытла та ырă ман юлташ Хумкка. Эпĕ малтан каланине ан ĕненĕр. Хумкка манăн тус, эпир унпа ытарайми кукурус çитĕнтерĕпĕр.



## КĔВĔÇ КУÇ

*Калав*

Шкул интернатне тунă хыççăн аякри ялсенчен çӳрекен ачасен пурнăçĕ пачах улшăнчĕ. Юлашки урокра текех, халичченхилле, йĕп çинчи пек ăшталанса лармалла мар. Чӳрече кантăкне хура чаршав евĕр хупласа илекен каç тĕттĕмĕ те çӳçентермест. Хăшпĕрисен киле темиçе çухрăм уй урлă, вăрман урлă, тарăн вар урлă каймалла-çке. Çĕрле тем курасси пур. Сăрă кашкăра тĕл пулса, те сехре хăпас; те ахракаҥ çил-тăман айне кĕрсе путас... Çул çинче ачапчашăн темле инкек те сиксе тухма пултарать. Халĕ, уроксем пĕтсен, тӳрех шкул картишĕнчи пысăк çĕнĕ çурта — интерната чупатăн. Кунта ăшă. Апачĕ те хатĕр. Ирхинех, вутă хутнă хыççăн, вĕри кăмакана тăм чашăкпа шаркку, чӳлмекпе пăрçа шӳрпи лартса хăварнă. Апатлансан, кан. Йĕлтĕрпе, çунашкапа е тăркăчпа ярăнма тух. Вăхăчĕ пур, уроксене йĕркеллĕ хатĕр-

ленме те, выляма та, кружоксене ҫӳреме те ҫителӗклех. Интернатра, калӑн, ачасен пурнӑҫӗ пыл та ҫу.

Урам енчи чӳрече умӗнче Санюкӑн кравачӗ ларать. Вӑл, интерната пырса кӗрсенех, чӳрече янахӗ ҫинчи чечеке куҫ хыврӗ те: «Манӑн вырӑн ҫакӑнта пулать»,— тесе пӗлтерчӗ, ыттисене яхӑнне те ямарӗ. Кӳршӗллех — Нинӑпа Тамарӑн вырӑнӗсем.

Нинӑпа Тамара — тахҫанхи туссем. Вӗсем пӗрле ӳснӗ, пуҫламӑш шкулта та пӗрле вӗреннӗ. Санюк вара — ҫӗнӗ юлташ-ха, вӑл Нинӑпа тата Тамарӑпа интернатра пурӑнма пуҫласан кӑна туслашнӑ.

Санюк хӑйӗн ҫӗнӗ тусӗсенчен кӑшт лутрарах, тулли питлӗ, питҫӑмартисем кулсан пӑч путаҫҫӗ, пӑлатна хӗрача. Мӑнтӑркка пулин те, вӑл питӗ ҫӑмӑллӑн сикет. Пӗртте вӑтанмасть, шутсӑрах хӑюллӑ. Ҫынпа хӑвӑрт паллашать, пӗр чӗлхе тупса калаҫма пӗлет, мӗн лайӑххине час курать, чее, килӗшнине, ырланине хӑвӑрт туять.

Уроксем хыҫҫӑн пӗррехинче пионерсен аслӑ вожатӑйӗ Валентина Михайловна интерната пычӗ те ачасене хӑй тавра пухрӗ.

—Ташӑ суйласа илер-ха,— сӗнчӗ вӑл, аллинчи сарлака кӗнекене сӗтел ҫине хурса.

Лешсем, сӗтел ҫине ӳпӗнсе, кӗнекене тараватах уҫма тытӑнчӗҫ. Унӑн страницисем илемлӗ картинкӑллӑ. Ташланине тӗрлӗ тӗслӗ сӑрӑпа хитрелетсе ӳкернӗ.

Виҫҫӗмӗш страницӑра арҫын ачана ӳкерсе панӑ. Шлепкепе вӑл. Ҫийӗнче тӗрленӗ шурӑ кӗпе, пилӗкӗнче хӗрлӗ хӑмач пиҫиххи, симӗс жилетка.

— Ух, маттурскер, мӗнлерех ташша ярать!— тӗлӗнчӗ ачасенчен тахӑшӗ.

— Валентина Михайловна, мӗнле ташӑ-ши ку?— ыйтать тепри.

— Чех халӑхӗн ташши,— ӑнлантарать вожатӑй.— Пӑхӑр-ха тӑваттӑмӗш страницӑна, ав, унпа ташлакан икӗ хӗрача.

— Ах! Пирӗн те вӗренесчӗ ку ташша!

— Мӗнех, вӗренме пулать!

— Вара пирӗн арҫын ача та ҫакӑн пек тум тӑхӑнать-и?

— Паллах.

— Пӗтӗм ял тӗлӗнсе пӑхӗ ку ташша!— калаҫаҫҫӗ ачасем.

— Аста ташлакансене юратаҫҫӗ, яланах алӑ ҫупса саламлаҫҫӗ,— тет вожатӑй, ачасене хавхалантарса.

Çакна илтсен, Санюк пурне те илтĕнмелле:

— Арçын ача пулса эпĕ ташлатăп!— тесе хучĕ.

Вожатăй ним те шарламарĕ, анчах та асне илсе юлчĕ. кайран темиçе пионера ташлаттарса пăхнă хыççăн, чăнах та арçын ача ташшине ташлама Санюка илчĕ.

Хытă тăрăшрĕ Санюк. Мĕн ĕмĕтленни çитрĕ. Малтанхи концертрах куракансем ăна хак пачĕç: «Чăн-чăн артист пулать»,— терĕç.

Çитес концертра ташлама Нина килтен хĕрлĕ çеçкеллĕ сарафан илсе килчĕ. Сарлака аркисене икĕ рет шурă хăю тыттарнă. Çĕнĕ сарафанне вăл арчине чиксе хумарĕ. Патакран «хулпуççи» турĕ те ун çине сарафанне тăхăнтартрĕ. Вара ăна стена çумне пăтаран çакса ячĕ.

— Пăхăр-ха кунталла!— чĕнчĕ вăл хĕрачасене. Хăйĕн турашăлĕ те витмен кăтра çӳçне аллипе тӳрлетсе илчĕ.— Чăннипех калăр-ха, тĕрĕс турăм-и эпĕ? Кун пек тусан сарафан пĕрре те лӳчĕркенмест вĕт, яланах яп-яка тăрать, кирек хăш вăхăтра тытса тăхăн.

Нина сарафанне çапла çакса хуни пурин кăмăлне те кайрĕ. Санюк та çаврăнса пăхрĕ. Анчах вăл сарафана курчĕ те шак хытса тăчĕ. Ăна юлташĕн çеçкеллĕ сарафанĕ чăтма çук илĕртрĕ. Çав тери килĕшнипе куçне илеймест. Ку сарафана тăхăнсан тусĕ мĕн тери ятуллă пулассине туйрĕ вăл. Ташланă май сарафанăн анлă арки пăр-р, пăр-р вĕçсе тăмалла. Пурте куç илмесĕр пăхрĕç.

Санюкăн пысăк хура куçĕсем ăмсаннипе вут евĕр ялкăшаççĕ.

Юлташĕ сарафан çине ытарайми пăхнине Нина асăрхарĕ те çапла ыйтрĕ:

— Килĕшӳллĕ-и ман сарафан, э?

Лешĕ хирĕç ним те калаймарĕ. Ăнланмалла мар тем мăкăртатрĕ çеç: «Çу-ук... Хĕрлĕ çеçки çеç кăштах илĕртет...»

Санюк, кăнтăрла пулин те, вырăнне майласах утиял айне кĕрсе выртрĕ, пуç çийĕнех витĕнчĕ.

— Ырă тĕлĕк курмалла пултăр,— сунчĕ ăна Нина çепĕççĕн.

— Çывăрас килнипе анаслаттарчĕ-ха,— илтĕнчĕ Санюкăн янăравсăр сасси утиял айĕнчен.

Çак вăхăтра тахăшĕ «Пионерская правда» хаçатра Тамара çырăвĕ тухни çинчен пĕлтерчĕ. Вара пурте пионерсен пӳлĕмне тухса вĕçтерчĕç. Тамара çырăвĕнче хăй тăлăх хĕрача, вата кукамăшĕпе çеç пурăнни çинчен, ăна шкул ачи-

сем ĕçлесе тупнă укçапа хĕллехи тумтир, кăçатă илсе пани çинчен сырать. Çапла хисеп тунăшăн вăл юлташĕсене чĕререн тав тăвать.

Санюкăн нумай выртма хал çитмест. Акă вăл утиялне сирчĕ те йĕри-тавра пăхрĕ. Пӳлĕмре никам та юлман. Ăна çакă çеç кирлĕ пулнă. Хăпăл-хапăл тăрса ларчĕ те пуçларĕ аякри амăшне сасăпах ятлама: «Эх, çав аннене, мĕншĕн вĕреннĕ чаплă çын мар-ши вăл... Ытла та ним те чухламасть. Çĕлесе парать михĕ евĕр ярт кĕпе, çӳре вара катемпилле. Кам кăмăлне кайăн унашкал? Нина амăшĕ, ав, пачах урăх çын. Вăл учительница. Хĕрне майра пек тумлантарать. Ун валли мĕнешкел илемлĕ кĕпе çĕлет. Çавăнпах ăна пурте юратаççĕ, унпа килĕштерсе калаçаççĕ».

Санюкăн кăмăлсăр пичĕ ял! çуталчĕ. Тути йăл-йăл кулчĕ. Çӳçне тирпейлĕн пуçтарса, çӳхе кăвак тутрине каялла çыхса лартрĕ те вырăн çинчен сиксе анчĕ. Мĕнпур вăйпа чупса пырса Нина сарафанне сĕвсе антарчĕ, унтан ăна хăй çине уртрĕ. Вара тĕкĕр умĕнче мĕн кăна хăтланмарĕ-ши! Хăй пĕр камит! Хуçкаланать, йăлт-ялт сикет, тĕкĕр çинчи ĕмĕлкине чĕлхе кăларса витлет, шухăша каять, сарафана хăй çумне пăчăртать. «Эх, мĕн тери илемлĕ! Эх! Çак сарафана тăхăнăттăм та хамăр яла кайăттăм. Клубра вечерта пулăттăм. Ачасем эпĕ ятуллă тумланнинчен тĕлĕнĕччĕç. Ташлама чĕнекенĕсем тата? Мĕн чухлĕ пулĕç! Ура тупанĕ çурăлсах тухĕ. Ташлама тухмасăр кама та пулин кӳрентерме те тивĕ. Çу-ук, çак сарафансăр манăн пурнăç та пулмĕ... Тупата вăрламасăр тӳсейместĕп. Мĕнех вара, чăнах, тытатăп та вăрлатăп акă, никам та курмасть. Тытсан? Тытсан...»

...Пĕчĕккĕччĕ-ха Санюк ун чухне, нумай пулсан та — улт-çичĕ çултаччĕ. Пĕрле вылякан хăй пекех пĕчĕк юлташĕ пурччĕ кӳршĕре. Пĕррехинче, ун патне кайсан, урайне пусма татăкĕсем сарса пăрахнăччĕ, пуçланнăччĕ пукане вăййи! Çавăн чухне ĕнтĕ Санюк сĕтел çинче выртакан канфета курах кайрĕ. Курчĕ те çак канфета çиес килнипе аптраса ӳкрĕ. Ыйтас — именет, ахалех илес — аван мар. Выляс-кулас кăмăлĕ унăн сӳрĕкленчĕ. Куçа илĕртекен канфет канăç памасть. Выртать те выртать, чуна вĕчĕхтерсе.

Тăрсан-тăрсан, юлташăн асламăшĕ тинех пӳртрен пăлтăра тухрĕ. Санюк чееленчĕ. Тетте кустăрмана илчĕ те сарлака сак айнелле кăлтăр-р кустарса ячĕ. Вара хăех тантăшне:

— Кĕрсе ил-ха çав кустăрмана,— тесе хушрĕ.

Юлташĕ сак айне упаленсе кĕчĕ. Çак вăхăтра Санюк сĕ-

тел çинчи канфета кап тытрĕ те çăварне персе чикрĕ; чăпчап чăмлакаларĕ те тути-масине туймасăр çăтрĕ. Асламăшĕ пӳрте кĕчĕ. Ун-кун пăхкаларĕ, канфет çуккине çийĕнчех асăрхарĕ:

— Ай-уй, кам хăямачĕ сĕтел çинчи канфетсене çаратса кайнă. Эсир курмарăр-и, атьсемĕр?— ыйтрĕ кинеми тĕлĕнем пек пулса.— Мĕнле намăс мар, пĕр канфетне те хăварман.

— Сĕтел çинче пĕр канфет çеçчĕ-çке,— хирĕçлерĕ Санюк.

— Э-э, эсĕ çирĕн пулать-ха, эппин.

— Эпĕ пĕр канфетне çеç çи...— Санюк каласа пĕтерейменрĕ, вăтаннипе пуçне çĕрелле усрĕ.

Тепĕр кунне кӳршĕ карчăкĕ, Санюк амăшĕ патне кивçен тăвар ыйтма каçсан, пĕр канфет çухални çинчен, вăррине мĕнле тытни çинчен каласа пачĕ. Ку хыпара хĕрача малтанах шикленсе итлесе тăчĕ, хăйне хытах тивессе кĕтрĕ. Анчах амăшĕ ахăлтатса кулса ячĕ те:

— Ара, ах, айван -çке! Чее пулаççĕ ăна пăртак! Чипчиперех хăйне хăй сутать. Тунаççĕ ăна, пăрчăканăм,— тесе, ачине чуптума тытăнчĕ. Хĕрин чĕри лăштах пулчĕ вара.

Нумайччен асăнса пурăнчĕ амăшĕ. Пĕлĕш-мĕн килсенех çав ĕç çинчен тапратать. Амăшĕ çапла куларах каласа панă тăрăх, Санюк канфета ыйтмасăр илсе çини пĕрре те усал ĕç тунине пĕлтермест. Санюк хăй те çаплах ăнланчĕ.

Тепринче вара Санюк чăнахах та тунчĕ. Ун чухне самаях ӳснĕччĕ, шкул ачиччĕ. Пĕрле вĕренекен хĕрача шкула шурă перчетке тăхăнса пынăччĕ. Санюк ăна тăхăнса курас килнипе лара-тăра пĕлмерĕ. Тăхăнса çеç курни — мĕн вăл? Ланлăхах хăйне пулсан, селĕмччĕ! Çак перчеткене вăрламасăр тăма вăй çитерейменрĕ. Перчетке çухатнă хĕрача макăрма пуçларĕ. Санюк тавăрса памарĕ, тунчĕ. Класри ачасем, алăк умĕнче тăрса, ухтармасăр пĕрне те киле кăларса ямарĕç. Санюк хăранипе ун чух чĕтрене ӳкнĕччĕ. Анчах никам куриччен вăрланă перчеткене шпалер çурăкне пытарма ĕлкĕрчĕ. Вара, ним пулман пек, алăк умнелле ярт-ярт утса пычĕ те тухса вĕçтерчĕ.

Тепĕр кунне перчеткене киле илсе таврăнсан, амăшĕ хĕрне, пурне те çапла чеен улталама пултарнă тесе, мухтарĕ çеç.

Çапларах ĕçсем пулса иртнĕччĕ Санюкăн маларах. Унтанпа вăл ĕнтĕ пысăкланнă, улттăмĕш класа вĕренсе çитнĕ, ачасемпе пĕрле интернатра пурăнать. Анчах, çын япалине куç хывсан, халĕ те вăрламасăр тӳсеймест-мĕн.

Авă пушă класра пĕр-пĕччен йăпшăнса ларать вăл, юлта-

шĕсенчен пытаннă. Аллинче унăн — Нина сарафанĕ. «Аркинчи пĕр рет хăюне сӳтсе илсен, сарафана никам та паллаймĕ»,— тесе шухăшлать Санюк. Пăр-р, пăр-р сӳтет çӳлти рет хăюне. Тепĕр шит тăршшĕ çеç юлчĕ сӳтмелли. Халь-халь ĕç вĕçленмелле. Пулмарĕ. Класс алăкĕ уçăлса кайрĕ те хăйпе пĕр пӳлĕмре пурăнакан хĕрачасем шавласа кĕчĕç.

— Кунта ларать-çке вăл,— терĕç вĕсем, Санюка курсан.— Сана шыраса эпир шалт ывăнтăмăр.

Санюк, ырра мара сиссе, ура çине йăпăр-япăрах сиксе тăчĕ, сарафанне хыпаланса саппун айне пĕтĕрсе чикрĕ.

Хĕрачасем пырса тăнă-тăман хыпаланса ыйтрĕç:

— Санюк, эсĕ Нинăн хĕрлĕ çеçкеллĕ сарафанне илмен-и?

Вăл тунчĕ. Хăвăрттăн кăна:

— Çын япалине тытасси ман йăлара çук,—терĕ.

— Эх, пĕлĕттĕм кам вăрланине...— хурланчĕ Нина.

Юлташĕсем ăна лăплантараççĕ:

— Хыпăнсах ан çун-ха, тупăнĕ,— теççĕ.

Тамара урайĕнче кĕске-кĕске çип татăкĕсем выртнине тата Санюкăн саппунĕ айĕнчен шурă хăю тăсăлса тăнине курах кайрĕ. Ыттисем те асăрхарĕç курăнать. Хăшпĕрисем сисрĕç пулас. Иккĕн-виççĕн хăйăва ячĕç тытрĕç. Саппун айĕнчен тĕркем тухса ӳкрĕ. Пăхаççĕ — Нина сарафанĕ. Пĕтĕмпех ăнланчĕç хĕрачасем, ятлама тытăнчĕç.

— Кукăр алăллă хĕрача!

— Текех пирĕн хушăра вăрă ан пултăр!

— Интернатран кăларса ямалла!

— Милицие пĕлтермелле! Тытса хупчăр!

— Вĕрентмелле ăна пĕрре лайăххрах, нихçан ан мантăр.

Санюкăн кăкăрĕнче чăн-чăн чĕре мар иккен, чăх чĕри çеç. Вăл ытла та кĕлттем, тăр-тăр-р чĕтрет, чуна шиклентерет. Аçта кайса кĕчĕ-ши хаваслăхĕ, хăюлăхĕ? Паçăр кăна вăл тĕкĕр умĕнче, хăй çине сарафан уртса, тăррин-тăррин сикетчĕ, куçĕ çутă çăлтăр евĕр йăлкăшатчĕ. Палласа илеймĕн, хĕрачасем умĕнче тăракан Санюк мар, пачах ютскер. Вăл куç умĕнчех тĕршĕнсе пĕрĕнчĕ, мĕскĕнленчĕ.

— Э-э-эп... эпĕ ил-илмен,— тет вăл. Унăн сасси чĕтренсе, урмăшса тухать. Мĕскĕнĕн куçĕ те ылмашăнса пăхать.

— Тунма намăс та мар-и?!— вирлĕн хăтăрчĕ пĕри.

Вăрă хĕрача чĕркуçленсе ларчĕ. Йĕре-йĕре каçарма тилмĕрет, милицие тыттарса ан ярăр тесе ӳкĕтлет.

— Тьфу, ирсĕр!— тет Нина, тутине пăрса,— вăрă çынсем çакнашкал этем иленкинчен тухаççĕ-çке.

Йĕрсе ларакан Санюк çине йĕрĕнсе пăхса тăнă хыççăн хĕрачасем тек сăмах чĕнмерĕç, сарафана илсе тухса кайрĕç. Мĕн пулса иртни çинчен вожатăя каласа пачĕç.

— Пĕррелĕхе каçарăр,— терĕ вăл ачасене йăвашшăн.— Интернатран кăларса ярас тĕлĕшпе те сăмах хускатар мар. Эсир ăна хăйĕн инкекĕпе тăр-пĕччен пăрахса хăварнă. Ку аван темелле. Лартăр-ха кулянса. Юлташсăр, пĕччен пурнăçра çăмăл мар. Тен, ăнланĕ йăнăш ĕç тунине.

Çакăн хыççăн Санюк чылай вăхăт хушши юлташĕсен куç тĕлне пулма шикленсе çӳрерĕ. Такама вăратасран именнĕ евĕр, шăппăн çеç калаçать, ерипен кăна утать, чупмасть те, сиккелемест те. Вожатăй ăна тек концертра ташлама сцена çине кăлармарĕ. Малтанхи пек пуçне каçăртмасть халь Санюк, çухалнă япалана шыранă пек ялан çĕрелле пăхать. Никам та унпа çӳресшĕн мар.

Тантăшĕсем Санюка сăнаççĕ-сăнаççĕ те хĕрхенеççĕ. «Кунашкал çын пачах ютшăнса каять. Çитет ăна кун чухлĕ асапланнипе те»,— терĕç вĕсем, пĕрле пухăнса калаçнă чух. Çапла, юлташĕсем ăна каçарчĕç, Нинăпа Тамара каллех Санюка хăйсен туслă йышне йышăнчĕç.

* * *

Пурнăç нихăçан та тӳлек çанталăкри кӳлĕ пек лăпкăн тăмасть. «Пионерская правда» хаçатра çыру пичетленсе тухнă хыççăн Тамара ячĕпе, дружина ячĕпе çыру килме тытăнчĕ! Ăçтан кăна килмест пулĕ, кам кăна çырмасть-тĕр?! Пионерсемшĕн ку питĕ пысăк савăнăç пулса тăчĕ. Нихăçан та шкула çавăн чухлĕ çыру килмен. Хăшпĕрисем Тамарăпа туслă пулма ĕмĕтленеççĕ, теприсем пионерсене пархатарлă ĕçшĕн тав тăваççĕ, виççĕмĕшсем çавнашкал мухтавлă ĕçе мĕнле йĕркелессине вĕрентме ыйтаççĕ.

Пĕррехинче Тамарăна почтальон извещени парса хăварчĕ. Почтăна укçа пырса илме чĕнеççĕ. Пилĕк тенкĕ. Шкул ачишĕн ку пĕчĕк укçа мар. Укçи камран тата? Хура тинĕсри морякран. «Тăлăх ачан пурнăçĕ мĕн тĕшне тăнине питĕ лайăх пĕлетĕп. Илсе çи канфет. Пысăк пул, хĕрĕм»,— тесе çырнă моряк. Тамара çакăншăн çав тери хĕпĕртерĕ. Таçтан аякран ăна ашшĕ пăхса тăнăнах, хĕрхеннĕнех туйăнчĕ.

— Канфет илместĕп,— тет Тамара, пилĕк тенкĕлĕх вĕрçĕнĕ хут укçана çавăркаласа пăхса.— Канфета çиен те яран, ним пайти те çук. Эпĕ кĕнеке туянатăп, тата юратнă кукамайăма парне — тутăр.

Тусĕсем Тамарăпа килĕшеççĕ, унпа пĕрле савăнаççĕ.

Укçа илсен, тепĕр темиçе кунран, уроксем хыççăн Тамара магазина кайма пуçтарăнчĕ. Юлташĕсем илсе панă çăматне, пустав пальтине тăхăнчĕ, пуçне çăм тутăр çыхрĕ. Сумлă парне илме мĕнле хăраххăн кайăн-ха? Парне таврашне, йышпа пĕрле канашласа, чи илемлине суйласа илме пĕлмелле. Тухса кайиччен тĕрĕслемелле, укçи манса ан юлтăр. Укçи таçта мар, тумбочка суntăхĕнче, шăрпăк мартинче. Тамара курупкана илсе уçса пăхрĕ. Анчах шартах сикрĕ! Курупка пушпушах! Укçа çухалнă, ăна такам вăрланă.

Тамара хăйĕн кравачĕ çине ӳпне выртрĕ те тытăнчĕ татăлса макăрма... Уншăн укçапа пĕрле ăна хĕрхенекен хаклă çын, моряк, çухалнăнах туйăнчĕ.

Шăв-шава илтсе, юнашарти пӳлĕмрен арçын ачасем те пычĕç. Укçа çухалнăшăн пурте хуйха ӳкрĕç. Вăрлакана ӳпкелешсе калаçрĕç.

— Кам хăямачĕ илчĕ-ши?— тет Нина, хурланса.

— Пĕлме хĕн, аллине хурса хăварман,— тет тепри.

— Халăхра ахаль каламаççĕ иккен: вăрлаканăн пĕр çылăх, çухалаканăн — çĕр.

Каçăр сăмсаллă ача Тамарăна та, ытти ачасене те лăпланма хушрĕ те çапла сĕнӳ пачĕ:

— Морякĕ патне мĕн пулса иртни çинчен çырас, тупата, ним мар тепĕр пилĕк тенкĕ ярса парать.

Анчах та çак ачана çийĕнчех хăтăрса тăкрĕç:

— Айван! Ăссăр калаçан!

— Пĕр пӳтсĕр ача пĕтĕм йыша варалать, намăса ярать. Вăрланă çыннин халĕ хуть тавăрса парасчĕ!

Ачасем хăйсене лайăх мар туяççĕ. Пĕр-пĕрне куçран пăхма та именни сисĕнет. Анчах укçине паракан тупăнмарĕ.

Пионерсем, вожатăйпа канашласа пăхма коридора тухрĕç.

— Каллех Санюк илмен-ши? Çавăнтан хытарса ыйтмалла мар-ши?— пăшăлтатса калаçрĕç вĕсем.

— Юрамасть ун пек. Тытман вăрă — вăрă мар. Чăннипе вăл илмен пулсан? Апла эпир çынна пĕтерсе лартма пултаратпăр.

Ушкăн ниепле те лăпланаймасть. Тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхнă ĕнтĕ. Усси çук.

— Манăн пĕр сĕнӳ пур,— хăюсăррăн чĕнчĕ Нина.

— Пĕлтер хăвăртрах!— шавларĕç.

— Итлĕр эппин: Тамара валли укçа хамăртан пухас. Кам мĕн чухлĕ пама пултарать, патăр.

Унччен те пулмарĕ, сарă çӳçлĕ Мĕтри, çĕлĕкне хывса, Нина умне тăсрĕ.

— Парăр,— терĕ. Хăй çавăнтах вак укçасем çĕлĕк ăшне чăнкăртаттарса ячĕ.

Тантăшсем пурте кĕсъе тĕпне хыпашлама тытăнчĕç.

Ку таранччен калаçăва хутшăнмасăр, чӳрече умĕнче урамалла пăхса тăракан Санюк ачасем еннелле вăрт çаврăнчĕ. Унтан, пуçне йăлт çĕклесе, самант пурне те куçран пăхса тухса, пăлханнă сасăпа:

— Чим, Мĕтри, ан васка. Вак укçуна ил те çĕлĕкне тăхăн.— терĕ.

Лешĕ итлерĕ. Пурте малалла мĕн пуласса кĕтеççĕ. Шăп.

— Тамара укçине эпĕ вăрларăм.

Санюк «илтĕм» тесе те каламарĕ, «вăрларăм» темех хăю çитерчĕ. Чăн калани ачасене тĕлĕнтерчĕ. Вара вăрă хĕрача кăшт айккинелле пăрăнчĕ те хĕвĕнчен пилĕк тенкĕлĕх хут укçа туртса кăларчĕ.

Тамара, çакна курсан, вырăн çинчен сиксе тăчĕ. Аллине тăсса хаваслăн кăшкăрса ячĕ:

— Чăн та ман укçа! Ав, вĕр-çĕнни! Кӳр часрах!

Санюк укçана памарĕ. Тутине тăп çыртса лартнăскер, укçана çурмаран хуçлатса икĕ аллипе тытрĕ те, никам та сиссе юлаймарĕ, ча-а-ар чĕрчĕ.

— Мĕн тăватăн эсĕ?— труках кăшкăрса пăрахрĕç ăна.

— Намăс мар-и сана укçа чĕрме? Чăрăннă пул халех пӳтсĕрленме,— хытарса каларĕ Валентина Михайловна.

Кăлăхах. Санюк хăнк та тумарĕ. Укçана пĕчĕк татăк пуличченех чĕрсе вакласан сăмах хушрĕ:

— Каçарăр мана ăссăра, Валентина Михайловна, ачасем, эсир те. Укçа чĕртĕм тесе ан шутлăр. Эпĕ хам вĕчĕхнине, ăмсаннине чĕрсе вакларăм. Сана укçа паратăп,— терĕ хайхискер Тамарăна. Калаçнăçемĕн Санюкăн пичĕ-куçĕ çуталса кайрĕ. Çăмăллăн сывласа ячĕ. Вара савăнăçлă сасăпа каларĕ:

— Киле каятăп та укçа перекетлемелли кушака вататăп. Пĕлсех тăратăп, унта манăн укçа çителĕклех... Эмел куракĕ, йĕкел пухса панăшăн илнĕ укçа унта упранать.

Ним чĕнме пĕлмерĕç. Вĕсене пилĕк тенкĕ шел мар, çын юсанни паха. Юлташне ĕненеççĕ: унăн кĕвĕç куçĕ хупăнчĕ, кукăр алли тӳрленчĕ.



## ХĂШĔ ЫТЛАРАХ ЮРАТАТЬ?

*Калав*

Пирĕн килте хăнасем — Ларисăпа Таня.

— Тавтапуç,— тет асанне хĕрачасем хаваслăн вылянине пăхса тăнăçемĕн.— Сывалчĕç.

Виçĕмкун пурте хыпса çунтăмăр. Ара, вăрмантан хурăн çырли татса килсен чиперех сĕтпе çирĕмĕр, тем пулчĕ каçхи кӳлĕм: пĕçертрĕ пăрахрĕ. Иккĕшĕ те хăсаççĕ. Кашнинех уйрăм пӳлĕмсене выртартăмăр. Тухтăра чĕнчĕç. Вăл тимлĕн тĕрĕслерĕ. Вара, хыçалти пӳлĕме тухсан, çапла каларĕ врач:

— Хыпăнса ӳкни кăлăхах. Пăшăрханмалли нимех те çук. Ӳпки-чĕри аванах. Ача-пăчана пулкалать ун пекки. Ытларах утни юраман-тăр. Иртет.

Анчах та хăй хутсем çырса хăварчĕ. Эмелне илсе ĕçтермеллех имĕш.

Лариса çывăрма та пĕлмерĕ, йĕрет, кăшкăрать.

— Аннене телефонпа шăнкăравлăр!— тет.— Эпĕ чирленине пĕлтерĕр. Самолетпа вĕçсе килтĕр!

Ним парса лăплантараймастпăр.

Таня лăпкăн выртать. Шыв ĕçтерме кĕрсен те, шăппăн кăна калаçать:

— Часах иртет. Çырлине нумайрах çирĕм. Çавăнпа кăшт вар-хырăм ыратрĕ пулĕ.

Йăпататтпăр ăна. Асанне çурăмран лăпкаса ачашлать.

— Асанне,— чĕнет вăл,— эпĕ чирлени çинчен аннене тем тусан та ан пĕлтерĕрех. Унăн чĕри çав тери хавшак. Хăранипе тасĕа чирлесе ўкĕ.

— Ăслă калаçан мăнукăм,— тет асанне.— Ытахальтен чăрмантарма юрамасть аннесене.

Çын хуйхи-суйхине хăвăрт тавçăрса илет пирĕн асанне. Лайăх этем вăл. Чунтан хисеплетпĕр ăна. «Кил-çуртăн ырă пирĕшти вăл»,— тет вара анне, ун пирки сăмах-юмах тапратсан. Пурне те тăвать вăл. Пўрте-çурта тирпейлет, ăшăтать, тутлă апат-çимĕç пĕçерет. Асанне пирĕнпе пурăннишĕн чунтан савăнатăп. Вăл Ларисăсем е Таньăсем патĕнче пурăнма пултарать. Ара, пирĕн аттесем пурте асаннен ывăлĕсем-çке.

— Кинемей, кайса пурăн-ха хулана,— теççĕ вара хăшпĕр чух кўршĕ хĕрарăмĕсем.— Е ывăлун ывăлне пăрахса хăвараймастăн?

Кăна ман пирки сăмах тĕртеççĕ ĕнтĕ. Ах, тарăхас килетçке çавăн пек этемсене. Юрать-ха, асанне кирлĕ пек тавăрса калама пĕлет:

— Яла ытараймастăп-çке. Сывлăшĕ шăп — симпыл. Курас килсен, килччĕр хăйсем. Тарават пăхса ярăпăр.

Тĕрĕс пуплет асанне. Унăн ывăлĕсем çемйипех килни — пирĕншĕн уяв. Кăçал çуллахи каникул вăхăтĕнче килчĕç вĕсем. Асанне калашле, симпыллă сывлăшпа сывлама хĕрачисене хăварчĕç.

Лариса — Шупашкарта, Таня — Çĕмĕрлере пурăнать. Иккĕш те вĕренеççĕ, пиллĕкмĕш класа куçнă. Хĕрачасем пĕр сăнлах. Çивĕчĕсем вăрăм. Аякран паллаймăн та.

Таня ни мăнтăр, ни хыткан мар. Вăйлă. Арçын ачасемпе кĕрешет. Эпĕ унтан пĕр çул аслă, çапах та вăл мана ним мар çĕнет.

Лариса имшеркке. Унăн пĕр пĕрчĕ вăй та çук-тăр. Мĕншĕн вăйсăр-ха вăл? Кунĕн-çĕрĕн канфет ĕмет хăй. Чăматанĕнче унăн туллиех канфет, шоколад та пур. Канфечĕсем илемлĕ хутлă.

— Унăн амăшĕ инженер,— теççĕ кўрĕш-арăшсем.— Çавăнпа та хĕрне канфет çеç çитерет.

— Пĕрмай пылак ĕмнĕрен ырханкка эсĕ, Лариса. Пăрах, тек ан çи канфет,— хушать асанне ăна.

Итлемест Лариса. Шав чаплаттарса чăмласа çўрет.

— Аннӳ юратать те-ха сана. Лариса, эсĕ ху юрататăн-и ăна?— ыйтать унтан ман атте.

— Аннене питĕ-питĕ юрататăп!— тет Лариса.

— Ĕненместĕп,— хушса хурать асанне.— Суян. Эсĕ аннӳне юратмастăн.

Лариса килĕшмест. Вăл тарăхнипе урипе тапăртатса ятлаçма тытăнчĕ:

— Эпĕ аннене юрататăп!— тет куççулĕ витĕр.— Таня, ав, чăнах та юратмасть. Чирлесен те амăшне чĕнсе килме чарчĕ. Вăл амăшне курасшăн та пулмарĕ. Эпĕ аннене юрататăп! Юрататăп!

Таня ним те хуравламарĕ, тавлашмарĕ. Тăрать чĕнмесĕр, куçне мăч-мăч хупкаласа.

Тĕлĕнмелле. Мĕншĕн асанне Ларисăна «...Суян. Эсĕ аннӳне юратмастăн»,— тесе каларĕ? Чăнах, вĕсенчен хăшĕ амăшне ытларах юратать?



## КАМ АЙАПЛĂ?

*Калав*

Ешĕл вăрман. Мĕн тери хитре! Чĕлтĕрти чечексем куçа илĕртеççĕ. Кайăксен çепĕç юррине итлеме хăй мĕне тăрать!

Умра пысăк сукмак. Вăл уçланкăна илсе тухать. Кунта пионер лагерĕ вырнаçнă. Çамрăк улмуççисем хушшинче пысăк чул çуртсем, пиртен карнă ўплесем. Пĕр кĕтесре — çуллахи эстрада сцени. Ун умĕнче речĕпех тенкелсем, тенкелсем. Паян концерт пулать. Артистсем таçтан килнисем мар, пĕрле канакан юлташсем.

Шăрăх. Йĕри-тавра кашласа ларакан вата юмансем те сулхăнлатаймаççĕ. Хĕвел хĕртсе пăхать. Калăн: вăл ўплесемпе çуртсем хушшинче хĕрлĕ галстуклă пионерсене тинкерсе шырать тесе. Ăнланаймасть ĕнтĕ. Халĕ ачасем кăнтăр апачĕ

хыççăн канаççĕ. Тутлă ыйхăра вĕсем. Çапла, ниçта та пĕр ача курăнмасть. Тĕрĕсех-ши ку? Ĕненмесĕр тепĕр хут пăхса тухар. Чим, çуллахи эстрадăра, малтанхи ретри тенкел умĕнче, пĕри мăштăртатать. Кам ара вăл? Э-э, пĕрремĕш палатăри Курье. Мĕн тăвать ара вăл? Тенкел çурăкне патак чиксе лартасшăн тăрмашать. Аллинче темиçе патак. Пӳрне тăршшисем, пĕчĕкреххисем, вăрăмраххисем пур. Кашниех тĕрĕслет; тенкел çурăкне савăл пек чăнк кĕрсе ларчĕç-ши шĕвĕр патаксем? Çук çав, патакĕсем, ав, тĕкеннĕ-тĕкĕнменех тайăлаççĕ.

— Эх, çĕçĕччĕ!— мăкăртатать Курье.— Чакаласа çурăкне аслăлатăттăм.

Мĕне кирлĕ-ха тенкел çурăкне патак савăл лартма?

Çын шухăшне аякранах тавçăрса илме май пулсан, çакна пĕлнĕ пулăттăмăр: Курье юлташĕсене Генăран култарасшăн. Мĕншĕн? Ĕç-пуç çапла пуçланнă: Курье ялти тантăшĕсем хушшинче чи вăйли. Унпа çыхланма пурте хăраççĕ. Лагерьте вăл çакăн çинчен пурне те каласа çӳрерĕ.

— Мухтаниччен, кăтарт хăвăн вăйна,— терĕ ăна пĕррехинче Гена.

— Хăрамастăн-и ачасем куласран? Эпĕ сана самант хам ая пĕтĕрсе чикетĕп,— сатурланчĕ Курье.— Ан тытăн. Намăс курăн. Хăв хулă пек çинçешке. Çакна ан ман.

Гена парăнмарĕ. Тытăнчĕç. Çатăрласа ярса тытрĕç пĕрпĕрне пилĕкрен. Эх, мекеçленеççĕ. Генăн юлташĕсем пухăннă та сăнаса тăраççĕ. Хушăран ăна хавхалантарса та илеççĕ.

Малтанласа Курье çĕнтерессе туйрĕ. Çавăнпа та Генăна йĕплесе илчĕ:

— Манпа кĕрешес-тĕк пулă çăвĕ нумайрах ĕçмелле, юлташ.

Унччен те пулмарĕ, Гена çавăрчĕ те çапрĕ çурăм çине Курьене.

— Маттур Гена! Маттур! Урра!— кăшкăрчĕç тусĕсем.

— Сана пулă çăвĕ ĕçтеретпĕр! Ха-ха-ха!— кулчĕç Курьерен.

Çакăн хыççăн Курье вĕчĕхсе çӳрекен пулчĕ. Генăна мăшкăл кăтартасшăн, унтан култарасшăн ачасене. Мĕнле майпа? Тупнă вăл шухăшласа. Тенкел çурăкне чикнĕ патак çине ларать те Гена çухăрса ярать, ыратнине тӳсеймесĕр йĕрет. Арçын ача макăрни килĕшӳсĕр. Вара пурте ахăлтатса кулĕç унтан.

Курье «капкăн» лартнă вырăна хупах çулçипе витсе хăварчĕ. Капла ним те паллă мар.

Пĕр-ик сехет иртрĕ. Ĕнтĕ концерта пухăнма вăхăт.

— Гена, малти ретре ларăпăр,— ӳкĕтлет Курье.— Пурте пырăр. Эпĕ вырăн йышăнма каятăп.

Çитрĕ вĕçтерсе Курье çуллахи эстрадăна. Пăхрĕ. Çулçă витнĕ вырăн çаплипех. Куракансем пухăнма тытăнчĕç. Курье малти рете яхăнне те ямасть ачасене. Лешсем ятлаçаççĕ. Кĕтет Курье. Тинех çитрĕ Гена юлташĕсемпе. Курье курах кайрĕ: Гена аллинче — чăпар кайăк! Сырса илчĕç Генăна пурте. Курье те сиксе тăчĕ. Мĕнле кайăк?

Çак вăхăтра сцена çине концерта ертсе пыракан тухрĕ. Ачасем хăйсен вырăнне саланчĕç.

Курьен хайхи таната шухăшĕ тем вăхăтра пуçран тухса ӳкнĕ. Ларать чупса пырса ним уямасăр... Анчах çĕлен сăхнăн кăшкăрса ярать. Вăл иккен хупах çулçи çине хăй ларнă. Ыратнине тӳсеймен енне макăрса, уксахласа сцена хыçнелле уттарчĕ.

Кам айăплă? Ахаль каламаççĕ çав: çын валли шăтăк ан чав, унта хăв кĕрсе ӳкĕн.



## ХĂЮЛЛĂ ПИОНЕР

### ВЫЛЯКАНСЕМ:

**Милиционер** — 25—30 çулта.
**Арçын ача** — 10—11 çултискер. Пионер галстукĕ çыхнă.

Милиционер лăпчăннă та хăйĕн мотоциклне (е велосипедне) юсать. Ун патне арçын ача йăпшăнса утса пырать. Хăй унталла-кунталла пăхать, çынсем курасран хăрать. Йывăç тĕми хыçнерех пытанать.

АРÇЫН АЧА *(шăппăн)*. Милиционер пичче, милиционер пичче!

МИЛИЦИОНЕР *(ярт тăрать, унталла-кунталла пăхать)*. Кам чĕнет мана?

АРÇЫН АЧА *(каллех шăппăн)*. Эпĕ, эпĕ!

МИЛИЦИОНЕР *(ачана курах каять. Тĕлĕнет)*. Мĕн пит шăппăн калаçан эсĕ?

АРÇЫН АЧА *(милиционера кăчăк туртать)*. Кил-ха кунта, милиционер пичче.

МИЛИЦИОНЕР. Ху кил. Ман вăхăт çук. Мотоцикл ванса кайрĕ ав. *(Каллех мотоцикл винчĕсене пăркалама пуçлать.)*

Арçын ача чĕрне вĕççĕн пускаласа пырать.

АРÇЫН АЧА. Милиционер пичче, эсĕ сăмакун юхтаракансене тытма килмен пулĕ те?

МИЛИЦИОНЕР *(ĕç пăрахса).* Ун пеккисем пур-и мĕн?

АРÇЫН АЧА. Пур.

МИЛИЦИОНЕР. Камсем юхтараççĕ вара сăмакунне?

АРÇЫН АЧА. Пирĕн аттепе анне.

МИЛИЦИОНЕР *(тĕлĕнсе).* Аçупа аннӳ?

АРÇЫН АЧА. Алай, аттепе анне.

МИЛИЦИОНЕР. Ăçта юхтараççĕ вĕсем?

АРÇЫН АЧА *(милиционер хăлхи патне кармашать. Çитеймест. Милиционерĕ хăй пĕшкĕнет).* Сад пахчинчи мунчара.

МИЛИЦИОНЕР. Вăт шелмĕсем, ăçта вырнаçнă!

АРÇЫН АЧА. Каятăн-и тытма?

МИЛИЦИОНЕР. Каятăп. Вĕсем закона пăсакансем.

АРÇЫН АЧА. Каятăн пулсан, эпĕ хыпарлани çинчен аннепе аттене ан кала вара.

МИЛИЦИОНЕР. Эх, эсĕ те çав. Ху — пионер. Хĕрлĕ галстукпа. Аçупа аннӳн киревсĕр ĕçĕ çинчен калама хăрамарăн пулсан, халĕ ан шиклен ĕнтĕ.

АРÇЫН АЧА. Шикленсе мар, çапах та...

МИЛИЦИОНЕР *(ачана куçран пăхкалать).* Юрĕ-çке, эппин, каламăп. Ăçта-ха сирĕн мунчăр? Ăçтан каймалла?

АРÇЫН АЧА *(айккинелле тĕллесе).* Ав, ав çав сад пахчинче. Карти урлă тӳрех каçăр.



## ХĔРАЧАНА ÇУЛ ПАРАТЬ

### ВЫЛЯКАНСЕМ:

Верук — стена хаçат редакторĕ. 6-мĕш класра вĕренет.
Толя — 6-мĕш класс ачи.

Сĕтел хушшинче Верук пĕчченех ларать. Ун умĕнче «Лайăх вĕренессишĕн» стена хаçат. Верук тем сăрлакалать, тем хураткалать.

ВЕРУК. Ах, ку редактор пурнăçĕ, ытла кансĕр. Каллех пуш вырăк юлчĕ.

Толя васкаса кĕрет.

ТОЛЯ. Сывă пултăр, редактор! Урра!
ВЕРУК. Мĕн пит савăнăçлă эсĕ, Толя?
ТОЛЯ. Тĕлĕнмелле чаплă заметка çыртăм! Во! Кирлĕ-и сана хаçат валли?
ВЕРУК. Паллах, кирлĕ. Анчах, мĕн çинчен?
ТОЛЯ. Тема, тема мĕнли! Пĕр кашăк çупа çăтса ямалла.
ВЕРУК. Мĕн çинчен? Кала хăвăртрах.
ТОЛЯ. Вăйсăррисене хӳтĕлес пирки.
ВЕРУК. Камсем вĕсем, вăйсăррисем?
ТОЛЯ. Мĕнле камсем? Эсир — хĕрачасем.

ВЕРУК. Э-э-э. Çавăн пек кала та, шухăшласа тупнă — «вăйсăррисене».

ТОЛЯ. Вуласа парас-и?

ВЕРУК. Вула, савăнсах итлетĕп.

ТОЛЯ. Тимлĕн тăнла, Верук, тимлĕн. *(Каçăрăлса тăрать те вулама тытăнать.)* «Юлташсем, арçын ачасем! Пирĕн хушăра калама çук черчен чечексем ӳсеççĕ. Тепĕр тĕрлĕ каласан — хĕрачасем. Вĕсене тивме юрамасть. Пĕррехинче, Ванюк, сĕмсĕрккескер, алăкран хăй малтан чупса кĕчĕ. Апла юрать-и вара? Юрамасть. Сăпайлă пулăр, арçын ачасем, хĕрачасене çул парăр!» *(Верук еннелле хутне тăсать, мăнаçлăн ыйтать.)* Мĕнле, лайăх-и? Эпĕ, эпĕ хам хĕрачасене çав тери хисеплетĕп... Кирек хăçан та вĕсен хутне кĕретĕп. Ванюк вара... Ну, мĕнле, ку заметка стена хаçатне юрăхлă-и?

ВЕРУК. Ман шутпа начарах мар пек.

ТОЛЯ. Илес пулсан ил; илмесен, каялла кĕсъене чиксе хума та пултаратăп.

ВЕРУК *(илет)*. Кӳр. Толя, эсĕ киле каятăн-и?

ТОЛЯ *(мăнаçлăн)*. Киле.

ВЕРУК. Тăхта. *(Чӳречерен пăхса илет.)* Каç пулчĕ. Пĕччен хăратăп. Пĕрле кайăпăр, юрĕ-и?

ТОЛЯ. Эпĕ сана ăсатса яратăп, манпа ан хăра, Верук.

Верукваскасах пальто тăхăнать, стена хаçатне пĕтĕрсе хул айне хĕстерет.

ВЕРУК. Ку сан заметкуна, Толя, килте редакцилетĕп.

Верук Тольăн заметкине пальто кĕсйине чикет.

ТОЛЯ. Хăвăн кăмăлу. Эпĕ çырнă, кирек ăçта редакциле.

Тухса каяççĕ. Чаршав хупăнать. Чаршав умне Тольăпа Верук тухаççĕ. Малта — Толя.

ВЕРУК. Фу-у! Çил касса татмаллах вăйлă вĕрет. Юр пĕрчи кĕрпе пек хытă, куçа уçма памасть.

ТОЛЯ. Ман хыçран ут, ман хыçран.

Сасартăк йытă вĕрнĕ сасă илтĕнсе каять.

ВЕРУК. Ой, йытă вĕрет!

ТОЛЯ *(тăпах чарăнса)*. Йытă?

ВЕРУК. Йытăран хăранă пек нимрен те хăрамастăп.

ТОЛЯ *(чĕтрекен сасăпа).* В-верук! В-ерук, и-ирт-ха ма-малалла. Хĕ-хĕрачасене эпĕ ç-çул па-пама хă-нă-нăхнă.

ВЕРУК *(Тольăран мала иртет, йытă вĕрнĕ еннелле пăхать).* Кам йытти ку? Чим-ха, Васли пиччесен йытти пулас!

ТОЛЯ. Т-темĕн. *(Каялла çаврăна-çаврăна пăхса, Верук хыççăн пырать-пырать те унтан ăçтан килнĕ, çавăнталлах чупса тухса каять.)*

ВЕРУК *(йытта йыхăрать).* Кампур! Кампур! На-на! Толя, ку усал йытă мар, ахаль çеç вĕрет. *(Толя тарнине курать те тарăхса каять.)* Ав, мĕнле вăхăтра эсĕ хĕрачасене çул паран. Сан заметку хаçата тивĕççĕр. *(Кĕсйинчен заметкăна кăларать те Толя кайнă еннелле ывăтать.)*



## МИЛИЦИН ÇАМРĂК ТУСĔСЕМ

### ВЫЛЯКАНСЕМ:

**Артист** — 20—25 çулта.
**Витя**, **Петя** — пионерсем — милицин çамрăк тусĕсем.
**Наçтук** — 8 е 9 çулхи ял хĕрачи — октябренок.

Сцена варрине артист утса тухать. Вăл пĕлĕтелле пăхать. Аякрах та мар йывăç тĕмĕсем хушшинче Наçтук пуçне чиксе ларать.

АРТИСТ. Ай-ай çĕр тĕттĕм паян. *(Тӳпенелле пăхкалать.)* Э-э, çумăр пĕлĕчĕсем капланса килеççĕ-мĕн. Çумăр çума тытăниччен киле çитес. Васкамалла.

Наçтук ĕсĕклесе йĕни илтĕнет. Артист тапах чарăнса тăрать.

Чим, такам йĕрет мар-и? *(Тăнлать.)* Ача сасси. Ăçта вăл? *(Унталла-кунталла пăхкалать. Йывăç тĕмĕ хушшинче хĕрача*

*ларнине курах каять.)* Ай! Ав, вăл! Мĕн пулнă ăна? *(Хĕрача патне чупса пырать.)* Мĕншĕн кунта йĕрсе ларан эсĕ?

НАÇТУК. Э-эпĕ *(ĕсĕклет)* пиччерен çухалса юлтăм.

АРТИСТ. Ăçта пурăнан эсĕ?

НАÇТУК. Ялта.

АРТИСТ. Ялта? Шупашкара мĕншĕн килнĕ эсĕ?

НАÇТУК. Цирк курма. Унта темтепĕр кăтартаççĕ, тет. Упасем, йытăсем ташлаççĕ, тет. Тигрĕ те çынна тивмест, тет. Ăслăскер.

АРТИСТ. Кăна эсĕ тĕрĕс калан, хĕрача. Шел, кăтартăттăм сана, анчах ăна читлĕхе хупрăмăр. Чим-ха, эсĕ хулана кампа килтĕн?

НАÇТУК. Пичче тата ун юлташĕсем пĕрле килтĕмĕр.

АРТИСТ. Ăçта вĕсем?

НАÇТУК. Таçта. *(Ура çине тăчĕ.)* Паçăр эпир пы-ысăк юпаллă çурт патне пырса тухрăмăр. Театр тет-и. Вара выляма пуçларăмăр. Юпасем тавра чупрăмăр, чупрăмăр. Унтан пичче çапла каларĕ: «Пытанăр, эпĕ сире шыраса тупатăп»,—-терĕ.

АРТИСТ. Эсĕ пытантăн-и?

НАÇТУК. Эпĕ ак, çак йывăç тĕмĕсем хушшине пытантăм. Ларатăп-ларатăп, вăл çаплах мана шыраса тупаймарĕ. Кĕтрĕм-кĕтрĕм. Астуман та — çывăрсах кайнă.

АРТИСТ. Вăт кĕтмен инкек. Ăçта ĕнтĕ вĕсем?

НАÇТУК. Пăрахса кайрĕç пулĕ. *(Хурланса макăрса ярать.)*

АРТИСТ. Ан йĕр эсĕ, ан йĕр. Ыран сана хам илсе кĕрсе цирк кăтартатăп. Эпĕ циркач. Мĕн ятлă-ха эсĕ?

НАÇТУК. Наçтук.

Çак вăхăтра сцена пĕр хĕррипе Петяпа Вася иртсе кайма пикенеççĕ. Хайсен кĕпе çаннисем çинче «МÇТ» саспаллисем.

ПЕТЯ. Витя, сăна, темле... *(аллипе пуç тăрринче çавăркаласа кăтартать.)*

ВИТЯ. Петя, эсĕ ялан тĕлĕнтермĕшсем шыран.

АРТИСТ *(ачасене курах каять).* Эй, эй! Тăхтăр-ха! Акă, вĕсем, Наçтук, сан пиччӳпе юлташĕ. Ачасем, килĕр-ха кунта!

ПЕТЯ. Пичче, эсир пире чĕнетре?

ВИТЯ. Мĕн кирлĕччĕ?

ПЕТЯ. Витя, сăна, ку циркач вĕт! Тигра выляттараканни. Хĕрачи — циркра лаша çинче ларса чупаканни.

ВИТЯ. Суян! Ялан эсĕ темтепĕр шухăшласа кăларан.

АРТИСТ. Ачасем, йӑмӑкӑра мӗншӗн пӑрахса хӑварнӑ эсир? Вӑл, ав, йӗрет. Çухатма юрамасть апла.

ПЕТЯ *(тӗлӗнсе)*. Мӗнле йӑмӑк пирки калаçатӑр эсир?

ВИТЯ. Пирӗн йӑмӑк çук.

АРТИСТ. Мӗнле çук? Килӗр-ха çывӑхарах.

Петяпа Витя çывхарса тӑраççӗ.

АРТИСТ. Ку сирӗн хӗрача-и?

ПЕТЯ. Çук терӗмӗр-çке.

ВИТЯ. Пӗрремӗш хут куратпӑр.

АРТИСТ. Наçтук, çак камарадоссене палламастӑн-и?

НАÇТУК *(йӗме чарӑнса)*. Мӗн тени пулать вӑл камарадос, тени?

АРТИСТ. Юлташсем тени пулать вӑл.

НАÇТУК *(кӳреннӗн)*. Эпӗ ку ачасене палламастӑп.

АРТИСТ. Шел, камарадоссем, Наçтук ялтан пиччӗшӗпе цирк курма килнӗ. Анчах вӑл çухалса юлнӑ. Мӗн тумалла?

ПЕТЯ. Çухалса юлнӑ тетӗр? Эпӗ вӑл мӗн тесеччӗ... Ӑна милицин ачасен пӳлӗмне илсе каймалла. Ĕçӗ те пӗтрӗ.

ВИТЯ. Эпир шӑпах милицин çамрӑк тусӗсем.

АРТИСТ. Милицин çамрӑк тусӗсем?

ВИТЯ. Ӗненместӗр-и? Пӑхӑр акӑ кӗпе çанни çине. Ав, «МÇТ» паллисем. Эпир шӑпах касхи çулçӳреве тухнӑ.

АРТИСТ. Ара, эсир питӗ кирлӗ çынсем иккен. Наçтук, санӑн телей пур. Халех вӗсемпе кайӑн кирлӗ çӗре.

НАÇТУК. Ай-ай, чее. Эпӗ милицие тем тусан та каймастӑп.

Тарма тӑрать. Виççӗшӗ те хӑвалаççӗ. Артист ярса тытать.

АРТИСТ. Айван хӗрача. Унта эсӗ лайӑх çывӑрӑн. Ыран цирк курма хам пырса илӗп.

НАÇТУК. Яр-яр! Эпӗ киле каятӑп. *(Йӗрет, туртӑнать.)*

АРТИСТ. Çӗрле уйра кашкӑр тытать.

ПЕТЯ. Эй, йӗре хӗрача-çке эсӗ. Намӑс мар-и? Хӑв октябренок тата. Пиччӳ те унта сана кӗтсе тӑрать пулӗ-ха.

ВИТЯ. Тӗрӗс. Паçӑр эпӗ унта икӗ ача ларнине куртӑм.

АРТИСТ. Тем тесен те сан пиччӳ.

НАÇТУК. Пичче унта ларать пулсан пыратӑп. Анчах та ан суйӑр.

АРТИСТ. Тахçанах çапла кирлӗ. Хамах ӑсатса ярам.

Наҫтук хальхинче хăех артист аллинчен ҫавтăнать. Витяпа Петя айккинерех пăрăнса тем пăшăлтатаҫҫĕ.

НАҪТУК *(Витяпа Петя енне пăхса).* Атьăр. Эсир юлсан эпĕ те каймастăп.

ПЕТЯ }
ВИТЯ } Пыратпăр!

Петяпа Витя чупса пыраҫҫĕ. Тухса каяҫҫĕ. Чаршав хупăнать. Вара тăваттăшĕ те чаршав умĕн иртеҫҫĕ. Витя та, Петя та хĕрачана ҫавăтса пырасшăн тавлашаҫҫĕ. Артист хыҫра утать.

ПЕТЯ. Витя, ан чăрмантар-ха. Наҫтук манпа пырасшăн.
ВИТЯ. Ҫук. Наҫтук ман алла вĕҫертмест, ав.

Наҫтук хаваслă сиккелесе кăна пырать.

АРТИСТ. Ачасем, ачасем, пĕлетĕр-и мĕн, ыран пурсăра та цирка илсе кĕретĕп!
АЧАСЕМ *(шавласа).* Цирк! Цирк! Куратпăр! Урра!

Цена 25 коп.

